*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# СУНТАЛ

## ҪАНАШ СОЙУСĔН

## ШУРНАЛĔ

## № 6

ШУПАШКАР, 1925 ҫул.

# СУНТАЛ

«КАНАШ» хаçат
çумĕнҫе тухаҭ.

6 (12)-мĕш №

1925 ç. Ийуӊ уйăхĕ.


## Ҫăваш Ахтономийĕн 6-мĕш çулĕ.

Утă уйăхĕн 6-мĕшĕнҫе Ҫăваш Ахтономийĕ пуçланни 5 çул тултарса 6-мĕшне кайрĕ. Пурăнăçра темле йăвăр ҫăрмавсем тĕл пулсан та, ҫăваш ĕçхалăхĕ çак 5 çул хушшинҫе ҫылай малалла шурĕ. Йулашки çулсенҫе ҫăваш çĕршывĕнҫе пĕр ура пусăм çĕр те акăнмасăр йулман; йалхуçайстви вăрçă-ҫенхи пекех йусанса çитрĕ. 5 çул хушшинҫе акма çĕрĕн пиллĕкĕмĕш пайне йĕркелесе çитерн⁵. Хресҫенсем йалĕ йалĕпе нумай пусăллă уйа куçаççĕ; ĕлĕк вĕсем ун çинҫен тĕлленмен те. Йалхуçайстви йерипен машшинланса пыраҭ.

Çак 5 çул хушшинҫе ĕлĕк шăнса хытса ларнă хапрăксавăтсем ҫĕрĕлҫĕç. Вĕсенҫен хăшĕ пĕри ĕç пултаруне вăрçăҫенхинҫен те çӳлерех хăпартрĕç. Кулленхи ĕç хисепĕ (нормă), вăрçăҫҫенхипе танлаштарсан, 60% кимрех тухаҭ.

Шупашкарта патшалăх панкĕ, й/х. панкĕ, шалти сутуилӳ комиссариаҫĕ, тата урăх хуçайствă пĕрлешĕвĕсемпе уҫрештенисем те уçăлҫĕç. Вăл пысăк ĕç. Респуплĕкри халăхăн 15%-не копператси çавăрса илҫĕ. Хресҫенсене арçынĕ хĕрарĕмĕпех копператсипе совет ĕçне хутшăнтарасси талккăн сарăлса пыраҭ. Ҫас ҫасах советссҫе, копператтив правленийĕнҫе, пулăшу комиттеҫĕсенҫе ҫăваш хĕрарăмĕсене тĕл пулатăн; вĕсем пĕтĕм вăйпа тăрăшса халăх ĕçне туса тăраççĕ.

Пилĕк çул хушшинҫе парттипе комсомол ĕçĕ те хăвăрт ӳссе çирĕплĕнҫĕ. Комсомолĕссем 800 ҫлен çеç пулнă пулсан халĕ 6500 çынна çитнĕ; ку пирĕн респуплĕкшĕн акăш-макăш ҫихвăр! Парттире ҫленсемпе кăнтитатсем 1500 çын пĕрлешсе тăраççĕ.

Çутă ĕçĕ те пысăк утăмсемпе малалла йарса пусрĕ. Револютсиҫен ҫăвашсен пĕр вуламалли çурт та, пĕр вăтам шкул та пулман. Халĕ 8 вăтам шкул (рапфак, совпартшкул, петакокиккă, тата й/х. техниккумĕсем); II сыпăклă шкулсем çинҫен калаçмалли те çук. Халĕ тата 70 вуламалли çурт, клупсем, тĕрлĕ ушкăнсем, тата ыт. те. Вăрçăҫҫен 1800 çын пуçне пĕр шкул тивнĕ пулсан, халĕ кашни 1200 çынна 1 шкул лекет. Тăван ҫĕлхепе кĕнекесем, йалхуçайстви литтераттури, комсомол пионер кĕнеки. т. ыт. тухаҭ. Ленинисăм çинҫен пĕр ушкăн кăлармаллине асăнмастпăрха. Тăтăшах ҫăвашла хаçат, шурнал тухса тăраҭ.

Сывă пулҫăр ĕлĕк пусмăрта пурăннă халăхсен ахтономийĕсем!

# Ҫӑваш респуплӗкӗнҫи советсем.

## Совет йӗркине тӗреклетес ӗҫ йепле тӑни.

Октябӗр революцин хӗрӳллӗ ҫулӗмӗ кив йӗркене ҫунтарса йарса пӑрахӑҫа кӑларчӗ. Ӗҫхалӑхӗшӗн усӑллӑ совет влаҫӗн ҫӗнӗ йӗркисем, пӗтӗм Раҫҫейри фетератсийӗн сотсиалисӑмпа совет респуплӗкӗсен со-



И. И. Илларионӑв — Ҫӑваш респуплӗк ӗҫтӑвкомӗн претҫетаттелӗ.

йусне ҫирӗп чул пек пӗрлештерсе, куллен кун вӑйлӑрах пурӑнӑҫа кӗрсе пыраҫҫӗ. Пирӗн чӑваш халӑхӗн Ахтономиллӗ оплӑҫне пуҫласа йани те ӗнтӗ пилӗк ҫул тулчӗ. Пиллӗкӗмӗш ҫулне тухичен Чӑвашсен Ахтономиллӗ Сотсиалисӑмпа Совет респуплӗкӗ те пулса тӑчӗ.

Пирӗн чӑваш ҫӗршывӗнче хаҫхи халне илсе хисеплесен мӗн пурӗ чӑваш халӑхӗ 672.651 ҫын (86,7%), вырӑс 70.784 ҫ. (9,1%). тутар 24.377 ҫ. (3,1%), мӑкшӑ 4.654 ҫ. 0,6%, ҫармӑс 3.819 ҫ. (0.4%), ытти халӑхсем 136 ҫ. (0,1%)—пурне пӗрле шутласан тӗрлӗ чӗлхеллӗ етем 776.421 ҫ. (100%) пурӑнаҫ.

Тӑватӑ уйесри 58 вулӑсра мӗн пурӗ 1727 йал. Кӑҫалхи суйлав вӑхӑтӗнче 18 ҫул тултарнӑ краштӑн мӗн пурӗ 372.432 ҫын, вӗсенчен совет саккунӗ тӑрӑх суйлав ӗҫне кӗртмесӗр пӑрса хӑварнисем 4.648 ҫын. Совет влаҫӗн чи кӗҫӗн тытӑмӗсем—пирӗн респуплӗкре йалсоветӗсем мӗн пурӗ 1079. Вӗсенче кӑҫалхи суйлавра лартнисем 7.025 член, 1079 претҫетаттӗл. Вулӑс сйесне пухӑннӑ членсем 2,783 ҫын пулнӑ. Вулӗҫтӑвкомсене члене хунисем 176 ҫын, вулӗҫтӑвком претҫетаттӗлӗсем 58.

Уйесри ӗҫ тӑвакан комиттетсен членӗсем мӗн пурӗ 56. Шупашкар уйесӗн 11, Йетӗрне уйесӗн 15, Ҫӗрпӳ уйесӗн 15, Патӑр (Йӗпреҫ) уйесӗн 15. Вӗсенчен комуниссем 41, парттире маррисем 12, хӗрарӑм 3 член.

Чӑваш ӗҫтӑвком членӗсем 35.

Ӗҫтӑвкомӑн преҫитиумӗнче 7 член.

Пӗлтӗрхи суйлавпа кӑҫалхи суйлав чыхвӑрӗсене илсе танлаштарса пӑхсан, совет ӗҫне 15,1% ытларах краштӑнсем йавӑҫни палӑраҫ: пӗлтӗр 31,6%, кӑҫал 46,7% пулнӑ.

Ҫӗнӗ суйлавпа хӗрарӑмсем йалсоветӗсенче пӗлтӗрхи (7,5%) хи-



М. Томассӑв — РКП Ҫӑвашопкомӗн ответлӑ ҫекреттарӗ.

сепрен 3,4% ӳссе, кӑҫал 11,6% ҫитнӗ. Йалсоветӗ претҫетаттӗлӗсен вырӑнне хӗрарӑмсем пӗлтӗр 0,27%, кӑҫал 0,37%. Анчах вулӑс сйесӗсене. вулӗҫтӑвком членӗсене хӗрарӑмсем кӑҫал пӗлтӗрхинчен сахалрах кӗнӗ.

Пĕтĕм оплăçĕпе илсен, хĕрарăмсем совет ĕçне чи нумайрах кĕни Шупашкар уйесĕнче пулнă: унта йалсовечĕсене хĕрарăмсем 13.2% кĕнĕ, йалсовечĕ претçетаттĕлне 1,%, вулĕçтăвком членне 10% кĕнĕ.

Совет оркăнĕсене (тыткисене) пайтах парттире маррисем тĕрлĕ слушăшчисем те кĕркеленĕ. Кунтан



Лаврентйĕв — Респуплĕкри Укçатенкĕ пайĕн пуçлăхĕ.

йалти халăх вĕсем çине ĕлĕкхинчен кăмăллăрах пăхни курăнать.

Йалсовечĕсенче хресченсен хисепĕ 4% ӳснĕ. Çак шута пайтах лашасăр хресченсем кĕнĕ.

Советăн кĕçĕн аппарачĕсенче ĕçлекенсен прочăнне илсе пăхсан, тĕрлĕ натси тăрăх ак çапла хисепленет: чăвашсем йалсовечĕсенче 86,9%, йалсовет претçетаттĕлĕсенче 90,6%, вулăс пухăвĕсенче 87,2%, вулăс членĕсенче 84,%, вулăс претçетаттĕлĕсенче 88%. Çапла çак вырăнсене кĕнĕ чăвашсен прочăнĕ хамăр респуплĕкри мĕн пур чăваш халăхĕн прочăнĕпе пĕр хисепе киле пырать. Вырăссен те çавăн пекех 9,1%, хăйсен вիçине ларать.

Ытти халăхсене илсен, вулăс пухуне пынă членсен хисепĕ халăх прочăнĕпе пĕр йевĕрлех, анчах йалсевечĕсенче, вулĕçтăвкомсенче вĕсен прочăнĕ хăйсен виçинчен кăшт кайарах, мĕншĕн тесен ытти халăхсем чăваш хушшинче хутран ситрен сахаллăн çех сапаланса пурăнаççĕ.

Советсене çĕнĕрен суйлани пайтах усăллă пулчĕ. Акă суйлава пынă хĕрарăмсем ӳсĕрĕлсе йĕркесĕр хăтланса пурăнакан краштăнсене нумайĕшне совета суйласран пăрса хăварма пулăшрĕç. Тата йалсовечĕсене 67% йахăн Хĕрлĕ çарта пулса курнисем кĕнĕ. Советсене ерех ĕçтерсе кĕме тăрăшакансем, комсомолĕссем хăйсен çтена хаçачĕсем çинче пĕлтерсе çырнипе, вырăна кĕреймесĕрех тăрса йулчĕç.

Суйлав вăхăтĕнче пĕтĕм халăх йутри ĕçсемпе респуплĕксен шалти ĕçĕсем çинчен питĕ хавасланса калаçрĕç.

Пĕр сăмахран каласан, ĕнтĕ малашне пирĕн хресченсем те политтĕк ыйтăвĕсенчен питех йутшăнса тăмаççĕ, пурне те пĕлме, пурăнăçа кĕртме тăрăшаççĕ.

Анчах çапах та пур йалсовечĕсемпе вулĕçтăвкомсем те Совет влаçĕ каларнă саккунсем тăрăх вырăнти ĕçсене хăйсемех пуçăнса вăйлăрах ĕçлеме тытăнни курăнаймасть. Ку тĕлĕшпе пирĕн малашне тата çине тăрарах ĕçлемелле пулать. Хрес



Чăвашĕçтăвком претçетаттĕлĕн йулташĕ Харитонăв

ченсемшӗн усӑллӑ пур саккунсене те пур краштавсене те шкулсенчен пуҫласа ватти-вӗттине ҫитех чӑваш чӗлхипе ӑнлавтарса памалла пулат.

Совет ӗҫӗсене йӗркелес тӗлӗшрен пирӗн Чӑваш респупкӗкӗнче ку вӑ



Респуплӗкри Ҫӗр управлени пуҫлӑхӗн самеҫтиттӗлӗ Ҫмирнов.-хресҭен

хӑтра кӗскен ҫех каласан акӑ мӗн мӗн туни палӑрат:

1 Уӗҫтӑвкомсем ВӖК (вулӗҫтӑвком) претҫетаттӗлӗсене вырӑнти ӗҫсем ҫинчен токлатсем тума пуха пуха канашлаҫҫӗ.

2. Ҫулерех тӑракан ӗҫтӑвкомсен членӗсем (оплӑҫран, уйессенчен) вулӑссене, йалсене тухса хӑйсен ӗҫӗсем ҫинчен токлатсем туса параҫҫӗ.

3. Вулӑссенче пысӑкрах пухусем туса, вырӑнти ҫынсене чӗнсе вулӑс, йал пурӑнӑҫӗ ҫинчен сутсе йаваҫҫӗ.

4. Чӑвашӗҫтӑвком претҫетаттӗлӗпе вулӗҫтӑвкомсен претҫетаттӗлӗсен хушшинче ҫурекен йулташлӑх ҫырӑвӗсем те кӗҫӗн аппаратсен йӗркине турлетме, тӗрлӗ кӑлтӑксене сирме пайтах пулӑшрӗҫ.

5. Совет аппарачӗсен ӗҫӗсене майлама йури инспектӑрсем пӑхса тӗрӗслесе ҫурене.

6. Йалсоветӗсем ҫумӗнче тӗрӗслекен (ревиҫи) комиҫҫисем туса хунӑ.

7. Апрелӗн 25—27 мӗшӗнче Чӑвашӗҫтӑвком ҫумӗнче советсене йӗркелес ӗҫпе йури канашлу пулса иртрӗ. Канашлу йышӑнӑвне (ресоҍутсине), „Канаш“ хаҫатӑн 53-мӗш нумӗрӗнче ҫапнӑскере, Чӑвашӗҫтӑвком ӗҫе кӗртме ҫирӗплетнӗ.

## Малашне тумалли ӗҫсем.

Сотсиалисӑмпа Совет респуплӗкӗсен Сойусӗ малашне мӗнле ҫулпа пымаллине тин ҫех пулса иртнӗ III сйес хӑйӗн ресоҍутсинҭе питӗ лайӑх кӑтартса панӑ. Ҫав йӑшӑнусем пирӗн ҭӑваш респуплӗкӗшӗн те майаксем кӑтартса параҫҫӗ.

Пирӗн ҭӑваш халӑхӗ те Совет Сойусӗнҭи ытти халӑхсемпе пӗр тан пытӑр тесен, пирӗн малашне ак мӗн тумалла.

1. Совет аппаратне ҭи айалтан — йалсовеҭӗсенҭен пуҫласа хамӑр респуплӗкӗн Тӗп Комиттетне ҫитех лайӑхлатса, ӗҫлекенсемпе хресҭенсемшӗн усӑллӑ ӗҫлекен тумалла. Советӑн пур оркӑнӗсене те халӑх массипе таҭӑрах ҫыхӑнса ӗҫлеттермелле. Ҫавӑнпа ҭӑваш ҭӗлхиве ӗҫе кӗртес тӗлӗшпе ӗҫлекен комиҫҫин Ҭӑваш ӗҫтӑвком преҫитиум ларӑвӗнҭе ҫирӗплетсе йышӑннӑ план йӗркине ҫак ҫитес пилӗк ҫул хушшинҭе пур уҭрештенисене те ҫине тӑрса ӗҫе кӗртсе пӗтермелле. Хресҭенсене кирлӗ пур саккунсене те ҭӑваш ҭӗлхипе ӑнлантармалла. Кӗнҭелерти ҫыруҫсем пур те ҭӑвашла тӗрӗс ҫырма пултармалла; Советсенҭе вырӑнти ҫынсене ҫак ӗҫ пирки вӗрентекен курссем йаланах ӗҫлесе тӑмалла. Кашни вулӑсра, уҭрештенире ҭӑвашла ҫыракан ал машинӗсем ҫителӗклех пулмалла.

2. Пирӗн ҭӑваш халӑхӗ сойусри ытти халӑхсенҭен вӗренӳ кулҍтурӑ йенӗпе ытла кайарах тӑрса йулнипе, хӑйӗн кулленхи пурнӑҫӗнҭе те питӗ пысӑк сийенсем курса малалла та васкасах утаймасть. Пӗлеймен пирки хӑйне кирлӗ саккунсемпе усӑ кураймасть; ҫӗршывне те акрономи ӑслӑлӑхӗ тӑрӑх ӗҫлеймест; тарласа ӗҫлесе тупнӑ тупӑшӗпе те пӗтӗмпех ҫителӗклӗ усӑ кураймасть. Мӗншӗн тесен пирӗн респулӗкре 100 ҫынран 60 ҫын вулама ҫырма пӗлмеҫҫӗ Ҫавӑнпа ӗнтӗ пирӗн ӗлӗкхи улпутсен ҭураллӑх вӑхӑтӗнҭен йулнӑ ҫав харуш.

инкексенҫен ҫасрах хăтăлас тесен, хамăр ҫухăн пулин те вăйа-хала, пӳтшетрен, шкул ĕҫне лайăхлатас, хăпартас ҫĕре нумайтарах йамалла пулаҭ. Кашни йалтах лайăх еҫлеме пултаракан шкул, вуламали ҫурт пултăр. Кашни хресҫен пӳртне кĕнеке, хаҫат, шурналсем такăр ҫул хывҫҫăр. Ҫăваш оплăҫĕ уҫăлни 10 ҫул тулнă вăхăта пирĕн респуплĕкре шкулра вĕренсе тухман пĕр аҫа та ан пултăр.

3. Халăх сывлăхĕшĕн пирĕн ҫитес ҫулсенҫе хытă тăрăшмалла. Пуринҫен ытла пирĕн ҫăваш халăхĕн тăшманĕ — куҫ ҫирĕ траххомă. Ку ҫирпе пирĕн халăх ҫуррине йахăн (45%) асапланаҭ. Иртнĕ ҫулсенҫе вăрҫăсем, выҫлăх пирки совет влаҫĕ те халăх сывлăхĕшĕн ҫителĕклех тăрăшса ĕҫлеймерĕ. Ҫавăнпа ҫăваш хушшинҫе те тĕрлĕ ҫир-ҫĕр пушшех нумайланса пыҫĕ.



РКП Ҫăвашопкомĕн орканисатси пайне пăхаканĕ Миххайлăв.



Ҫăваш Респуплĕкĕнчи ҫар кăмиссарĕ Танилăв.



РКП Ҫăвашопкомĕн акитпроп пуҫлăхĕ Краснов.



Ҫӗрпӳ РКП укомӗн ответлӑ ҫыруҫи Лошниккӑв Х.



Йетӗрне РКП укомӗн ответлӑ ҫекретттарӗ В. Тимитрийӗв.



Йетӗрне уйесӗнчи РКП членӗсен XII-мӗш конфе ентсийӗ.



Пĕтĕм Раççейри Советсен XII сиесĕнче пулнă чăваш телекатсем.




Патĕрйел уйесĕнчи советсен 4-мĕш сиесĕ.

---

Çийĕ-пуçĕ. ўт-тирĕ пăсăлнă çын, хăй нушалан͏са тертленнинђен пуçне, тата хамăр респуплĕке те сывлăхлă çын пекех усă пама пултараймасť. Çав „социальное зло" тейекен халăх инкекне пĕтерес тесен, пирĕн ђăваш халăхĕ малашне лайăх ĕрђесе, сывлăх тĕлĕшĕнђен вăйлангăр тесен,—халăх сывлăхне уйракан уђрештенисене, пуђнитсăсен, лекĕр çурђĕсене, а кушеркăсене пулăшса аслатмалла; çук çĕрте çĕнĕрен уçмалла, шкул ађисене сывлăх çинђен вĕрентмелле, пухусенђе токлатсем туса çўтсе йавмалла.

4. Ђăваш респуплĕкĕ те ытти вак халăхсем пек çĕр ĕçĕпе промышлĕннăçа хăпартса йарса, пур хуçайствă йенђен те хăйсен вăйхалĕпе çителĕклĕ пурнакан пултăр тесен, пирĕн ђăваш респуплĕкĕн кăнтăр йенђи ђиккисене

аслăлатса сармалла пулаҫ. Пирĕн хресҫенсен ҫĕрĕ те хĕсĕк, тăпри те наҫар, пысăкрах хапрăк савăт тавраш те ҫукпа пĕрех. Ҫавăнпа пирĕн ҫĕршыври укҫатенкĕ тухăҫĕ те хăйĕн кирлĕ тăкакĕсене 47,7% проҫăн, (ҫуррине йахăн) саплаймасҫ. Малашне ҫавăн пек техвитситлĕ пӳтшет пăрахăҫ пултăр, хамăрăн вăйхал хамăр тăкаксене ҫиттĕр тесен, ҫăваш ҫĕршывне аслатас ĕҫе йепле те пулин пурнăҫа кĕртмеллех.

5. Ҫĕршывран (территторинҫен) пуҫне тата халăх пурăнăҫĕнҫе укҫатенкĕ те кирлĕ. Ҫавăнпа пирĕн пĕрик сăмах вырăнти пӳтшет ҫинҫен те калас пулаҫ. Ҫамрăксене ҫитĕниҫҫен кăна ҫавăтса ҫӳреҫҫĕ, кайран хăйĕн урисемпе утгараҫҫĕ. Пирĕн ҫăваш респуплĕкĕн те йалсовеҫĕсенҫен пуҫласа тĕп коиттетне ҫитех, хăйсен вырăнти ҫăваш хуҫайствине (еккономиккине), укҫатенкине тĕреклетме тăрăшмалла. Укҫа пулмасан, шкулсене, пуҫнитсăсене те тытма ҫук, етем йе выҫăхҫĕрлĕх сывлăхне те емеллесе тӳрлетме ҫук, йалхуҫавстви ĕҫĕсене те наукка кăтаргнă пек тума ҫук. Ҫавăнпа пирĕн хресҫен хуҫайствине, ҫăваш промăшлĕннăҫне вăйлатса, вулăс пӳгшетне майласа, вулĕҫтăвкомсене, йалсовеҫĕсене „Ҫĕнĕ полошени" кăтартнă тăрăх ĕҫлемелле тăвас пулаҫ. Уĕҫтăвкомсем, вулĕҫтăвкомсен ҫумĕнҫе пӳтшет комиҫҫисем туса, тĕп комиттет кăтартнă тăрăх уйес пӳтшеҫĕпе вулăс пӳтшетне йепле тупăшсем, тăкаксем кĕртмеллине, хăшне пĕрне (акă, арман, пахҫа, пулă кӳлли, вактĕвек савăтсен тухху҆ҫĕсене) уйесрен вулăса куҫармаллине те сӳгсе йавса татса памалла пулаҫ. Вулăссен тупăшĕнҫен халиҫҫен ҫурри ытла влаҫ тытăмĕ ĕҫне кайнă пулсан, малашне вырăнти хуҫайства ĕҫне нумайрах йамалла тăвас пулаҫ. Ҫапла вулăс пӳтшетне ҫирĕп ҫул ҫине тăратса вырăнта ĕҫлекен оркăнсен, хастарлă уйрăм краштансен те ҫĕнĕ полошенисем тăрăх совет ĕҫне хăйсемех пуҫăнса, ҫӳлтен хушассине кетмесĕрех пурнăҫа кĕртсе пыма тăрăшмалла.

6. Кунсăр пуҫне тата пирĕн респуплĕкри хресҫенсен хуҫайствине копператси йухăмне вăйлăрах кӳртсе пĕрлештерес ĕҫе те Р. К. Парттин XIII сйесĕ йăшăннă ресоҫутсине астуса пурнăҫа кĕртме пикенсех тытăнас пулаҫ. Пирĕн ҫухăнсемпе вăтам хресҫенсем тавар туйачас йе тавар хатĕрлес тĕлĕшпе пĕрлешсе пур те копперативтив ушкăнĕсене кĕмелле. Копператси урлă хресҫенсем куҫтура йенне те туртăнма, йалги кулаксен пусмăрĕнҫен те хăтăлма пултараҫҫĕ; тата ҫĕр ĕҫлемелли тĕрлĕ машшинсем пĕрле туйанса йалхуҫайствине хăпартма пултараҫҫĕ.

Нихăш патшалăхра та копператси пирĕн сойусри пек тавар туйанас йе хатĕрлес ĕҫпе, темĕн ҫухлĕ вак хресҫен хуҫайствисене пĕрлештерсе сотсиалисăм ҫулĕ патне ҫывăхартма пултарайас ҫук; мĕншĕн тесен пирĕн пролеттариат хăйĕн класĕ тăшманне (кăпитталисăма) ҫĕнтерниле, пусмăрлама тăрăшакан уйрăм хуҫа вăйне лутăркаса (лăҫăркаса), совет влаҫĕ ĕҫхалăхĕн пĕрлехи вăйхалне ӳстерме пулăшаҫ. Ҫавăнпа пирĕн копператси малалла вăйлă утасси куҫа курăнсах тăраҫ. Анҫах копператси ĕҫĕ ăнтăр, пур краштăнсем те ун ҫине ăшшăн пăхҫăр тесен, копператси ушкăнне кĕрекен йулташсене малтан хĕлĕх ала витгĕрех алласа кăларас пулаҫ: кам пĕр кăсйишĕн кăна тăрăшаҫ, ушкăн ĕҫĕсемшĕн тăрăшма йуратмасҫ, вăл пирĕн йулташ мар. Копператси ушкăнĕсене йертсе пыракан правлени ҫленĕсем пушшех те питĕ шанăҫлă, тă ăшулă ҫынсем пулмалла. Копператив лавкисене ҫаратни, хисеп тусан укҫи, таварĕ тухманни, шутҫырăвĕсене, тавар кĕнекисене тĕрĕс ҫырса пыма пĕлменни, ҫленсен хăйсен тарласа ĕҫлесе тупнă укҫине копперативе хурса ҫухаткаласан, йе калла катăкрах илсен, халăх хушшинҫе тĕрĕс ĕҫлекен копперативсем те шанăҫсăра тухма пултараҫҫĕ. Ҫавăнпа кашни копператив ушкăнне пуҫламĕшĕнҫех питĕ шанăҫлă, пултарулла правлени ҫирĕп никĕс вырăнҫе пулса, пур ытти ҫленсемпе те йаланах ҫыхăнса, пĕрлехи ĕҫшĕн пĕтĕм кăмăлне парса тăрăшакансемех пулмалла.

Тата хамăр ҫăваш хушшинҫи тĕрлĕ алăсгисене копператсипе пĕрлештерсе, тĕпри сойуссемпе ҫыхăнтарса, вĕсен вăйхалне ӳстерсе, тĕрлĕ уйрăм хуҫасем аллинҫен хăтармалла.

7. Хăйсене уйăллă совет влаҫне пирĕн хресҫенсемпе ĕҫлекенсем ăшă кăмăлпа пăхҫăр тесен тĕрлĕ вырăнсенҫе ларакансем ирсĕр, сийенлĕ ĕҫсем тусан, ҫасах сут умне тăратса, саккун тăрăх айăпламалла. Тĕрĕс ĕҫлеменни-

сене совет влаҫӗ нихӑшне те пуҫранах шӑлмаст̆. Анҭах тӗрлӗ ирсӗрлӗхе халӑх хӑй ҫине тӑрса ҫийеле кӑларма пулӑшмасан, совет влаҫӗ ку ӗҫе пӗҭҭен тӑваймаст̆. Тата халӑх хушшинҭе тӗрлӗ вӗлерӳсем, ҫунтарусем, лаша вӑрлусем, ҫавнашкал саккунсӑр ӗҫсем те пайтах пулкалаҫҫӗ. Ҫӗнӗ йӗркеллӗ пурӑнӑҫра ҫав ирсӗрсем ан пулҭҭӑр тесен, пӗтӗм халӑх пӗр ҫын пек ҫине тӑрса кӗрешмелле.

8. Йулашки ҫулсенҭе, вӑрҫӑсем, тата выҫлӑх ҫул та иртнӗренпе, совет влаҫӗ хӑйӗн аппаратне йусаса тӗреклетсе пынипе, хресҭенсемпе ӗҫлекенсем те совет ирӗкне хӑйсене ҫывӑх, таҭӑ ӗҫ вырӑчне хурса, пӗрле ӗҫлеме тӑрӑша




Ҫӗрпӳ уӗҫтӑвкомӗн XII-мӗш пленӑмӗ.




Йетӗрне уйес ӗҫтӑвкомӗн преҫитийумӗ.



Йетӗрне у. Палтай вулӗҫтӑвкомӗнче ӗҫлекенсем.



Ҫӗрпӳ уйесӗнчи Ҫӗр управлени пуҫлӑхӗ Хаймулин.



Остроумӑв--Хумпуҫ Патӗрйел вулӗҫтӑвкомӗн претҫетаттелӗ.

пуҫларӗҫ. Советра ларакан йулташсем те йаланах хӑйсене суйласа йанӑ ҫынсемпе ҫыхӑнса ӗҫлемелле. Ҫапла мӗн пур халӑх пурте совет ӗҫне йавӑҫса, пӗрле тађӑ ҫыхӑнса ӗҫлесен тинех пурнӑҫ малалла кайни палӑрӗ. Вара пирӗн ђӑваш респуплӗкӗнђи ђухӑн тӗттӗм халӑх та ытти вӑйлӑ, куђтурлӑ халӑхсен ҫемйи йӑшне хутшӑнӗ. Пӗрне пӗри пусмӑрласа пурӑннӑ егем алла алӑн тытӑнса, сотсиалисӑмӑн ҫутӑ ҫулӗпе хӑйуллӑ хавасланса утса пырӗ.

Совет влаҫӗ сыв пултӑр!

Ђӑвашсен ҫӗнӗ респуплӗкӗ сыв пултӑр!

Совет йӗркине ҫул кӑтартакан комуниссен партти сыв пултӑр!

Чӑвашсен Ахтономиллӗ Сотсиалисӑмпа Совет Респуплӗкӗн Ӗҫ тӑвакан Комиттет претҫетаттелӗ И. Илларионӑв.

# ХАЛĂХА ВĔРЕНТЕС ĔÇ.

Пилĕк çул ĕлĕк, Чăваш Облăçĕ пуçланнă чухне епĕр ак мĕн çине шанса ĕмĕтленсе тăраттăмăр: халăха вĕрентес ĕç хамăр алла кĕрсен, хамăр халăха чăваш чĕлхипе вĕренмелле туса вĕренӳ ĕçне çăмăллатăпăр; хамăр облăçра кирли çинчен вĕрентсе пурвăçа часрах малалла йарăпăр; чăваш ачипăчине пĕчĕк шкулсенче вĕрентсе пур ĕçе тума та хамăр хушăри çынсенчен хатĕрлĕпĕр тесе шутлаттăмăр.

Ĕнтĕ çак иртнĕ пилĕк çул хушшинче çав шухăшланă йапаласене епĕр тунăши, туманши? Хăшне тунă, хăшне туса ĕлкĕреймен, темелле.

Тăватă çул вĕрентекен кĕçĕн шкулсенче халĕ пирĕн пур çĕрте те ачасене ашшĕ амăшĕ чĕлхипе чăвашла вĕрентеççĕ. Ĕлĕкхи патша правиттĕлстви шкулсене учитле хăйсен тарçисене кĕртнĕ, учитлĕ чăвашла пĕлнипе пĕлменнине пăхман. Çавăнпа револютсичен пирĕн шкулсенче учитлĕсем çурри ытла чăвашла пĕлмесчĕç. Ун пеккисене халь çутпайĕсем кăларса ыйтăнă, ĕнтĕ чăваш хушшинчи кĕçĕн шкулсенче чăвашла пĕлмен учитлĕ çук.

Чăвашла вĕрентме чăваш чĕлхипе çырнă кĕнеке кирлĕ. Ун йышши кĕнеке револютсичен пулманпа пĕрех. 5 çул хушшинче питĕ нумай тума май çук, çавах ку тĕлĕшрен те чылай тунă: халь шкулта вĕрентмелли чăвашла кĕнеке 21 тĕслĕ тухнă, халăха, ачапăчана вуламалли кĕнеке 49 тĕслĕ тухнă.

Вĕрентни халăхшăн усăллă пултăр, унăн пурнăçне малалла йатăр тесен, кĕçĕн шкулсенче çеç мар, вăтам шкулсенче те чăвашлах вĕрентмелле. Анчах халь чăвашла кĕнеке çук пирки тата чăвашла пĕлекен учитлĕ сахал пирки епĕр апла тума пултараймастпăр, ăна ӳлĕмрен тума тăрăшмалла. Çавах та халь чăваш ачине ĕлĕкхи пек вăтам шкулсене вырăсла лайăх пĕлменшĕн илмесĕр тăмаççĕ, чăваш чĕлхине вĕрентеççĕ, чăваш пурнăçĕпе истори çинчен каласа пăраççĕ. Револютсичен пĕтĕм облăçĕпе вăтам шкулсенче 50—60 чăваш ачинчен ытла вĕренмен, халь вĕсенче 2792 чăваш ачи вĕренет. (Вĕсентен технĕккăмсенче 718, II-мĕш сыпăклă шкулсенче 1337, 8 çул вĕрентекен шкулсенче 797)

Револютсичен чăваш хушшинче ĕçе вĕрентекен вăтам шкулсем сахал пулнă, тата пуррисене те чăваш ачи сахал кĕнĕ. Халь пирĕн ĕçе вĕрентекен вăтам шкул 8 пур, вĕсенче 718 чăваш ачи вĕренет.

Пĕр 10 çул ĕлĕк чăваш хресчен ачи университтетсене, инçтитутсене темле тăрăшсан та кĕреймен, кĕрсен те вĕренме питĕ хĕн пулнă, мĕншĕн тесен вĕреннĕшĕн укçа тӳлеттернĕ. Халь пирĕн хамăр облăçрах хресченпе ĕçлекен ачисене аслă шкулăсене хатĕрлекен рапфак пур, унта 200 йахăн чăваш ачи вĕренет; 2 çул хушшинче çав рапфакран вĕренсе тухса 100 йахăн чăваш ачи аслă шкулсене кĕнĕ. Аслă шкулсене рапфакран анчах мар ытти çĕртен те илеççĕ. Халь тĕрлĕ хуласенче аслă шкулăра 318 чăваш ачи вĕренет. Çавăнпа епĕр тепĕр 3—4 çултан чăвашран кирек йепле ĕç тума пĕлекен те пулĕ тесе ĕмĕтленетпĕр.

Шкулта вĕренни питĕ усăллă, анчах шкула пур ачапăча та кĕреймест, тата шкулран вĕренсе тухнă мăн çыннăн та пурнăçра темĕн çинчен те пĕлни кирлĕ. Револютсичен патша правиттĕлстви ӳснĕ çынна пĕрре те вĕрентме тăрăшман. Совет влаçĕ ӳснĕ çынна та пулăшасшăн. Мăн çынна пуринчен ытла хут пĕлни кирлĕ, хут пĕлекен çын кĕнеке тăрăх тем çинчен те пĕлме пултарат. Иртнĕ çулта хут пĕлмен ӳснĕ çынсене пирĕн облăçра 171 çĕрте вĕрентнĕ, унта 7000 çынна йахăн çырма вулама вĕреннĕ. Тата хут пĕлекен ӳснĕ çынсене хаçат шурнал, тĕрлĕ кĕнеке, пуринчен ытла çĕр ĕçĕ çинчен калакан кĕнеке кирлĕ. Совет влаçĕ халăха çав йенчен пулăшма йалсенче кĕнеке вуламалли çурт уçса парат. Иртнĕ çулта пирĕн ун пек вуламалли çурт 70 пулнă

Вуламалли çуртсенче ĕçлекен çыннăн, ӳснĕ çынсене хута вĕрентекен çыннăн Совет влаçĕ йĕркине тата партти мĕн çинчен вĕрент-

нине, мӗнле ӗҫлеме хушнине питӗ лайӑх пӗлсе тӑмалла. Ҫавнах тата йалти, вулӑсри, уйесри советсенче ӗҫлекенсен питӗ аван пӗлмелле. Ҫав ӗҫе вӗрентме пирӗн Советпа партти шкулӗ пур. Оплӑҫ пуҫланнӑранпа унтан пурӗ 658 ача вӗренсе тухнӑ, вӗсем хаҕ йалсенче, вулӑссенче усӑллӑ ӗҫлеҫҫӗ, халӑха пур йенчен те пулӑшаҫҫӗ.



ТАВИТӐВ К. Т. Палтай вулӑсӗнчи Сарйел йалӗнҕи уҕитлӗ. Кӑҫалхи ҫул Тавитӑв аҕасене вӗрентме пуҫлани 26 ҫул тултарать.

Вӗрентни вӗрентнипе пӗр пек мар; шкул халӑха усӑ кӳтӗр тесен, ачапӑчана пурнӑҫра мӗн кирли ҫинчен каласа тӑнлантармалла, пӗчӗккӗн пурӑннӑ ҫӗрте кирлӗ йапаласене т у м а вӗрентмелле. Револютсичен шкул саккун пушипе славен чӗлхине вӗрентсе ачапӑчан тӗнкине кӑларнӑ. Хаҕ вӑл йӗрке ҫук, пӗтнӗ. Ҫутҫанталӑка тӗпчесе, етем пурӑнӑҫне тишкӗрсе, ҫынсем пӗрпӗринпе йепле ҫыхӑнса пурӑннине астуса вӗрентеҫҫӗ. Пирӗн чӑваш хӑй килҫуртӗнчех тирпейлӗ. таса. чисчӑ пурӑнма пӗлмест. Хаҕхи шкул ҫавна та майлаштарса малалла йусасшӑн.

Шкул ӗҫне, пӗтӗм халӑха вӗрентес ӗҫе малалла йама харпӑр хӑй ӗҫне пӗлекен, йуратакан, халӑха усӑ кӳресшӗн тӑрӑшакан ӗҫлекенсем кирлӗ. Ун йышши ҫынсем пирӗн пур, ҫитменнине пӗчӗккӗн хатӗрлесе пурнатпӑр. Кунсӑр пуҫне тата ҫуртйӗр, хут-кӗнеке, укҫа-тенкӗ нумай кирлӗ. Укҫатенкӗрен тата ҫуртйӗр ҫителӗклинчен шкулсенче мӗн чул ача вӗренме пултарни килет. Пирӗн хаҕ кашни 100 ача пуҫне 50 ачана йахӑн анчах вӗренет, ытти 50 шӗ шкулӑ тулашне тӑрса йулать. Вӑйхӑват сахаллипе пур ачапӑчана та халех вӗрентме пултарайас ҫук. анчах мӗнле те пулин часрах пурне те вӗрентмелле тумалла: ҫӗнӗ шкулсем уҫмалла, ҫӗнӗрен шкул ҫурчӗсем тумалла, ӗлӗк лартнисене йусамалла. Ҫу тӗлӗшпе, вӑрҫӑпа выҫлӑх сӗрӗмӗ сӳрӗлсе ҫитмен пирки. епӗр нумайах тӑваймарӑмӑр. Ҫӗнӗрен шкул тума, йусама кӑҫал пире правиттӗлствӑ 100 пин тенкӗ ытла укҫа пачӗ, ӳлӗмрен тата нумайрах парӗ.

Ҫапла пур йенчен пӑхсан та, халӑха вӗрентес ӗҫ малалла кайни палӑрать. Совет влаҫӗ кашни халӑха шкул ӗҫне хӑйне кирлӗ пек тума ирӗк панӑ; пирӗн халӑха вӗрентес ӗҫ чӑваш халӑхӗ аллинче. Чӑвашӑн ку ӗҫ чи пысӑк ӗҫ: ӑна малалла йамасан, пирӗн пурнӑҫ лайӑхланаймӗ. Чӑваш халӑхӗ, хамӑр хушӑри Совет влаҫӗ, РК партти хамӑра мӗн кирлине питӗ аван пӗлет. Ҫавӑнпа епӗр халӑха вӗрентес ӗҫ малашне тата вӑйланӗ, питӗ вирлӗ пырӗ тесе ӗмӗтленетпӗр.

# ПИРĔН ХАПРĂК-САВĂТСЕМ.

## Йетĕрнери çу çапакан савăт.

Ку савăт Совет çĕршывĕнче тыллайах паллă вырăн йышăнса тăрать. Ĕлĕк вăрçăчен пĕтĕм Раççейри çапăнакан çусенчен 6 пайран пĕр пайне çак савăтра çапса хатĕрленĕ. Ĕлĕк унта çулталăкра 500 пин пăт çу кăларнă. Халĕ те хуллен йусанать. 1923-24 мĕш çулсенче 143,280 пăт, 1924-25-мĕшĕнче 200 пине йахăн çапса кăларнă. Иртнĕ çул савăт 363 пин тенкĕне йахăн укçа панă. Савăта хуллен ăусаса пырса, 1929-мĕш çулсем тĕлне ăна 700 пин пăт çу çапакан тума хатĕрленеççĕ




Савăтри ĕçлекенсем, РКП йачейкки, шефа илнĕ йалтан пынă хресченсем.



Савăтри машшинсем.

## Урмарти сĕтел пукан хапрăкĕ.

Ку хапрăк та майĕпе çĕкленет. Çак çулсенҫе йухăннă хуçайствăпа ĕçлесех 50 лаша вăйлĕх çĕнĕ твикăттĕл (машшин) илсе лартрĕ. Унта вăрçăҫен 6,336 ŧушăн венски тийекен пукан тунă. Кăçалхи çул 4,900 ŧушăн тума йышăннă. Ку хисепе тултарĕç. Ártнĕ çул виçĕмçулхинҫен 6 хут ытла тупăш панă.




«Иетинствă» хапрăкĕнче В. И. Ленина памĕтник уçни.



Хапрăкри сĕтел-пукан чĕркекен уйрăм.

# ШУПАШКАР.

1920-мĕш çулта, Шупашкар хули, Ђăваш Оплăçĕн тĕп хули пулса тăђĕ. Ĕлĕк Шупашкар хули ђăваш халăхĕшĕн пусмăрлăхпа, мăшкăллăх хули пулса тăнă пулсан, ăна, Ђăваш Оплăç пулнăранпа ăрасна çул çинелле çавăрса йанă. Ђăваш историне пĕлес пулсан ĕлĕкхи Шупашкар çинђен те пĕлес пулат̆, тата ытларах, хаљхи Шупашкар çинђен пĕлмелле: 1920-мĕш çулта мĕнле пулнипе, çак пилĕк çул хушшинђе мĕнле улшăнса малалла мĕнле çулпа кайассине.

1920-мĕш çулта Шупашкарта пурĕ 5 пин çын пурăннă. Ђăваш Оплăçĕн тĕп хули пулнă майĕпе унта халăх хутшăнса пырса халĕ 8 пин çынна çитнĕ. Револютси пулађђен, Шупашкар хулинђе ĕçсем куљттурă йенђен питĕ ђаплах пулман. Унта пурĕ çапла шкулсем пулнă: пĕр хĕрарăм кимнаçи, пĕр высши нађаљни шкул, 3 класлă министерски шкул, пĕр мăнастыр шкулĕ, 2 ђиркў



В. А. Алекçейĕв — вырăнти хуçайствă уйрăмĕн пуçлăхĕ.



К. Ç. Сăвантейĕв--Патшалăх панккин пуçлăхĕ.



Патшалăх панккин çурчĕ.



РКП Чӑвашопкомӗн ҫурчӗ.



Кӑҫал Шупашкара килсе кайнӑ Румын комунисӗ Николау й—ш.



Халӑха пулӑшу паракан уйрӑмӑн пуҫлӑхӗ Куҫнетсов.



Чӑвашпрофсовечӗн претҫетаттӗлӗ Луккин. Л. М.

---

прихуꚋӗ шкулӗсем тата пӗр пупсен „туховни" шкулӗ пулнӑ. Ҫырнӑ шкулсенꚋен ӗҫхалӑхшӗн усӑллӑ шкулсемех пулман. Вӗсем пурте. вӗренекен ҫынсен пуҫне ӗҫсем ҫинꚋен кайла майла шутлама вӗрентес вырӑнне патша, пупсем ҫинꚋен шутлама анꚋах вӗрентнӗ. Револ̧утси пулнӑранпа тата Шупашкар, ꚋӑвашсен тӗп хули пулсан вӑл йенꚋен ӗҫсем ӑраснах улшӑнса ӗҫхалӑх ырлӑхшӗн шутламалла кул̧ттурӑ тапранса кайнӑ. Халӗ Шупашкарта ҫавла кул̧ттурӑ уꚋрештенисем пур: 1 муҫей, 1 паплиоттеккӑ, 1 петакокилле вӗрентекен техниккӑм, икӗ сыпӑклӑ икӗ шкул, пӗр сыпӑклӑ шкулсем тӑваттӑ, 1 ҫӗвӗ ӗҫне вӗренмелле шкул, 2 театтӑр, пилӗк клуп, 1 хресꚋен ҫурꚋӗ, 1 пахꚋа ҫимӗҫӗсем

ҫинҫен вĕнентекен шкул, аҫа пӳрҫĕсем те пур. Тата вĕсем хушшинҫе самай ҫаплă 1 ҫăваш ĕҫхалăхĕн рапфакĕ пур. Куҫттурă йенҫен, Шупашкар хули, ĕлĕкхи тĕттĕм ҫула пăрахса халĕ ҫутă ҫул ҫине тухнăрапа хăйĕн вăйне ҫултан ҫул ӳстерсе пыраҭ. Халăх сывлăх йенҫен ĕлĕк Шупашкарта пĕр ҫемски пуҫнитсипе аптекăр макаҫинĕ, тата пĕр аптек пулнă. Халĕ вăл йенҫен ĕҫ хутшăнса пырса ĕҫхалăхĕн амбулаттори, пактерисене шыраса тупмалли кăпинет, сивҫиртен сиплемелли стантси, шăл ҫирсене сиплемелли кăпинет, тата ыттисем те пур.

Шупашкарта, ĕлĕк, претприйаттисем йенҫен, пилĕк-улт шыварманĕ анҫах пулнă. Хаҫ, пӳрт ҫуртсене илсен те, хула комун пайĕ аллинҫе 149 пӳрт пур. Вĕсемсĕр пуҫне тата: пĕр пысăк мунҫа, Атăл урлă каҫармалли „перевос" (ку ĕлĕк те пулнă), номĕрсем, выҫăхҫĕрлĕх пусмалли вырăн, тата 125 лаша вăйлĕ електритсă стантси пур.



**Шупашкарти тĕп хресчен ҫурчĕ.**

Ҫăваш респуплĕкĕн пуҫ хулине анҫах йусама тытăннăха. Пĕлтĕртен пуҫласа ăрамсене ҫул сарма тытăннă, тата кăҫал кĕркунне вотопровот тума тытăнаҫҫĕ. Ку ĕҫе, ҫас тума, пирĕншĕн питĕ йăвăр. Ку таранҫен укҫа тенкĕ сахал пирки ҫак ĕҫсене тума канлех пулман. Малашне, вăл ĕҫсем вăйлăланса пыма пултараҫҫĕ. Пӳтшет ĕҫĕ уйрăм пулман майĕпе Шупашкарти усламсем, тата сутуилӳсене ку таранҫен уйрăм шутласа пăхман. Малашне вăл йенҫен те шут тума май пулаҭ.

Шупашкар хули, иртнĕ вăхăтра питĕ паллă вырăн йышăнса, хăйĕн ĕҫĕсене паллă малалла йама пултарайман. Малашне, вăл йенҫен ĕҫсем ăраснах Шупашкар хулинҫе ăнса пыма пултараҫҫĕ. Пĕр йенҫен, кăҫалтан пуҫласа Шупашкарти, тата ун таврашĕнҫи хапрăк-савăтсене ĕҫе йарса ҫăваш ĕҫлекенĕсене пĕр 1500 ҫынна ҫитерме шутлаҫҫĕ. 1500 ҫын йалтан хăйпăнса тухса ҫĕр йенҫен ҫăмăллатма пултараҫҫĕ, тата хула халăхне ҫăвашлантарса пĕр 15 пиҫе йахăн ҫитерме пултараҫҫĕ. Хулара ҫын нумайланнă майĕпе пӳрт-ҫурт тăвас ĕҫ, тата сутуилӳ ĕҫĕ, хăпарса пырса йалти ҫынсене тата ытларах кӳме пултараҭ. Ун майĕпеле куҫтурă ĕҫĕ те, халăх сывлăхĕ ĕҫĕ те вăйланса кайма пултараҫҫĕ. Ку ĕҫ ҫасах пулма пултараҭ, ăна хамăр ĕмĕртех курма пултарăпăр. Шупашкар ĕҫĕ кунпа анҫах пĕтес ҫукха. Унăн малалли пурăнăҫсем ҫултан ҫул ҫаплăланса пыма пултараҫҫĕ Шупашкар хули аслă ҫул ҫине тухасси палăрса тăраҭ. Вăл ĕҫе ҫасрах тăвас тесен оплăҫ пулнă ҫух, ҫукун ҫул тăвас тенĕ шута пурнăҫа кӳртме тăрăшас пулаҭ. Шупашкарпа Канаша ҫукун ҫулпа ҫыпăҫтарсан Атăл сулахай йенҫи економикки Ҫăваш Оплăҫнелле туртăнса ăна вăйлăлатса Шупашкар хулине аслăлатса йама пултараҭ. Ун ҫухне вара ĕлĕкхи ҫăваш халăхшĕн мăшкăллăх, пусмăрлăх хули, ҫăваш халăхĕн „мекки" пулма пултараҭ. Йулашкинҫен ку ĕҫ пулма тытăннăскер пулатех: ҫăваш ĕҫхалăхĕ, ытти халăхсем пекех, хуласем йенҫен те, куҫтурă йĕнҫен те, екковомиккă йенҫен те, ытти халăхпа танлашасса ĕмĕтленме анҫах мар, ăна хамăр куҫпах курма пултарăпăр тесе каламалла.

Ухлик.

# ХĔРЛĔ ШАЙТТАН.

**Асăрхаттарни:**

Ку пиессăна Шупашкарта, Сĕнтĕрвăрринҫе, Ҫĕрпӳре, Йетĕрнере, Хусанта, Ĕпхӳре, Ульйанăвскра, тата Самарта «Канаш» сойусĕнҫен ыйтмасăр выљама йурамаст.

„Канаш" сойус тĕп пӳрови.

## ПЙЕССĂРИ ҪЫНСЕМ:

1. Сиктĕрме Йăванĕ (Иван Васильљă)—пуйан ҫăваш, арман хуҫи, 45-ре.
2. Укҫи—унăн арăмĕ.
3. Киремет Ҫимкки,—совет ҫекреттарĕ, Иван патĕнҫе гарҫăра пурăннăскер.
4. Йуркка Пеххĕмĕ—ҫухăн ҫăваш.
5. Ҫеркей—унăн ывăлĕ, комунис, 25-ре.
6. Наҫтук—унăн йăмăкĕ.
7. Така Павăлĕ—Ҫеркей йулташĕ ватăрахскер.
8. Арлан Хĕветĕрĕ—совет претҫетаттĕлĕ.
9. Пуп—Елексантăр Ҫĕпритунҫă.
10. Верук—Сиктĕрме хĕрĕ.

Халăх: аҫасем, хĕрсем, каҫҫăсем, ҫамрăк аҫапăҫа, ваттисем.

## 1 акт.

Вăрман уҫланки. Ҫерем. Хĕвел хĕртсе пăхат. Љиркӳ праҫнăкĕ кунĕ. Љаршав уҫăлиҫҫенех ҫан ҫапни илтĕнет.

### 1 стсенă.

(Верукпа Наҫтук иртсе кайаҫҫĕ).

**Наҫтук:** (малтан кĕрсе) Верук, кил кунта. Никам та ҫук.

**Верук:** Љупа, ҫупа халтан кайрăм.

**Наҫтук:** Ывăнтăн пулсан ларса канар еппин.

**Верук:** Кам та пулин курсан аван мар. Кĕлле ҫӳрес вырăнне вăрман тăрăх йуртса ҫӳреҫҫĕ, тейĕҫ. Ҫеркей мана ҫиркĕве ҫӳреме хушмаст: турă ҫук, тет. (лараҫҫĕ).

**Наҫтук:** Ну, мĕн калаҫрăр Ҫеркейпе? Еп пĕтĕмпех илтеймерĕм.

**Верук:** Мĕн калатăр вăл. Йалан хăйĕннех. Пурататăп, анҫах каҫҫа илме пултараймастăп, тет.

**Наҫтук:** Ку Ҫеркейе!.. Миҫе хут каламан ăна...

**Верук:** Ҫукҫын хĕрĕ пулсассăн, пайанах каҫҫа илĕттĕм, тет.

**Наҫтук:** Аҫу санăн мĕнле? Каласа пăхни ес ун ҫинҫен ăна?

**Верук:** Атте Ҫеркейе пит ҫиленет. Ун ҫинҫен илтесшĕн те мар.

**Наҫтук:** Есĕ, Верук, вăрттăн тухса кай...

**Верук:** Апла мана атте пĕр кĕпе те парас ҫук, хам ҫинҫи кĕпепех тухса кайас-и?

**Наҫтук:** Ҫеркейе хăйне аҫупа калаҫма ыйтмарăни?.

**Верук:** Ыйтрăм та, вăл каймастăп терĕ.

**Наҫтук:** Еҫсем начар сан, Верук. Ех, ку Ҫеркейе!

**Верук:** Мĕн тăвас? Мĕн тăвас?

**Наҫтук:** Ай, килеҫҫĕ! (сасă, тарма тытăнат, Ҫимкка ҫипе такăнса ӳкет). Ай, ку кам выртат? Е, Ҫимкка! Тарах, Верук. (тараҫҫĕ).

## 2 стсенă.

(Хĕветĕр кĕрет)

**Хĕветĕр:** Çимкка çакăнта килме пулђĕçке. Ăçтаха вăл? (ăна курса) Авă çывăраţ. Кĕте кĕте ывăнђĕ пуђ. (пыраţ, пушă сăмакункă суленккине курса) Охо! Ку ерехе ĕçсех йанă мари? (Вăратса) Çимкка, Çимкка, тăрха!

**Çимкка:** (Хăрлатса çывăраţ)

**Хĕветĕр:** Çимкка! Вăранха! Кĕлĕрен те тухрĕç пулĕ. Тăр тетĕп!

**Çимкка:** (пуçне çĕклесе) Ку кам? Е, есĕи, Хĕветĕр пиђђе. Мĕн пит нумай тăтăн. Епĕ ывăнтăм кĕте-кĕте.

**Хĕветĕр:** Ывăннипе канас терĕни мĕн? Çывăрма выртнă.

**Çимкка:** Пит аван хĕвел ăшшинђе канма. Ђăнах та çывăрсах кайнă мĕн. Анђах пуç пит ыратаţ. Пĕрер ђеркке сыпар пулĕ.

**Хĕветĕр:** Ху ђĕлхўпех çуласа илнĕ те, мĕн йултăр унта.

**Çимкка:** Çук, епĕ икĕ курка çех ĕçнĕђђĕ.

**Хĕветĕр:** Икĕ курка ĕçнипех йăванса ўкмен пулĕ ĕнтĕ?

**Çимкка:** Сăмакункки пит хăватлă. Сиктĕрме Йăванин карђăкĕнђен илсе тухнăђђĕ.

**Хĕветĕр:** Иван Ваçиђђă хăй те килет пулĕ ĕнтĕ. Ђиркўрен тухрĕç пулмалла.

**Çимкка:** Есĕ леш пупне систертĕни? Вăл та килесшĕнђђĕ пулас.

**Хĕветĕр:** Каларăм. Пайан ăна Тăм кассине молепĕн тума илсе кайаççĕ те. Çул майĕпе ђарăнăп терĕ.

**Çимкка:** Апла пулсан ерех хăвăртрах илсе килес. Есĕ вĕçтер Сиктĕрме патне. Ђетвĕрђĕпех илсе кил. Хăйне те сĕтĕрсе кил.

**Хĕветĕр:** Укçасăр памĕха вал, шăпăрлан.

**Çимкка:** Памасан кăтартăпăр. Пайанах çавăтне хупăпăр.

**Хĕветĕр:** Сават. Тупаţ сăмахне те. (Кайса) Ђетвĕрђĕпех сĕтĕрсе килеси?

**Çимкка:** Ђетвĕрђĕпех пулмасăр. Пуп килсен вăл та сахал пулĕха. Пĕлетĕп, вăл ĕçме тытăнсан хăйех ђетвĕртне хуплӑţ.

**Хĕветĕр:** Ну, епĕ кайам. (кайма пуçлаţ).

**Çимкка:** Унтан мар, сукмакпа кай. Анкарти урлă кĕрĕн. (леш тепĕр йенелле кайаţ).

## 3 стсенă.

**Çимкка:** Ес хăвăртрах пул. Нумай ђăрманса ан тăр. Туртас килет. Тапакĕ пур, хуђĕ çук. (Кăлараţ). Акă хут. (вуласа) Ку вулăсран пулас. Мĕн çыраççĕ вĕсем. „Килçурта штрахăваţ тăвас ĕçе вăйлатмалла (ĕнерлет). Тата вуткăвара сўнтерес тĕлĕшĕпе ĕçе йусамалла“. Йусамалла. Йусађђĕр кама кирлĕ. Пире капла та аван. (Çурса туртмалли çавăраţ) Еех! (туртса йараţ).

## 4 стсенă.

(Йеххĕм кĕрет. Аллинђе туйа. Çурăм хыçĕнђе кўпел).

**Çимкка:** (Ăна курсан суленккине пытараţ). Ку мĕн тума кунта сĕтĕрĕнсе килђе, ват супнă? Е, Йеххĕм пиђђе мари? Йепле çăмăлпа? Ăçтан таврăнан?

**Йеххĕм:** Хулана кайсаттăм та... Сукмакпа тўрĕрех пулĕ тесе килеп те, тĕмĕнле ĕнтĕ. Куç пађар курнипе кăнтăрлах аташса кайăн.

**Çимкка:** Хулана мĕн çăмăлпа кайнăђђĕ. (шăппăн) Каллех хаçата мĕн те те пулин леççе пађĕ пулĕ, вилейменскер.

**Йеххĕм:** Çăмăлĕ мĕнĕ... пуђнитсăна кайрăм: куçа пăхтарма.

**Çимкка:** Мĕн терĕ лекĕр?

**Йеххĕм:** Куç ђирĕ тет. Хусана кайса выртсан мĕнле пулĕ, анђах кунта тўрлетме хĕнтерех, терĕ.

**Çимкка:** Хусана кайас тетĕни ĕнтĕ?

**Йеххĕм:** Ватă пуçпа ăçта Хусана çитиђђепех каймалла. Вилиђђен пурăнса иртерĕпĕр çапах.

**Çимкка:** Хусанта та йĕркийех çук теççĕ, пĕркун леш Микихвĕре йертсе кайрĕç. Расхут тухни çех пулнă терĕç.

**Йеххĕм:** Микихвĕр суккăрланни 20 çул çитет пулĕ. Вăл Йаппун вăрçинҫенех суккăр таврăннăҫĕ пулас. Манăн, Çеркейе салтака илнĕ çул пăсăлма пуçларĕ.

**Çимкка:** Сан Çеркей хаçат çинҫе çыркалаҫ темеççĕи?

**Йеххĕм:** Епĕ ăçтан пĕлем вăл мĕн туниве. Ну, епĕ утамха килелле. (кайаҫ).

## 5 стсенă.

**Çимкка:** (пĕҫҫен) Ăçтан пĕлем, тет. Хăй кашнă ернере тенĕ пек хулана çырусем леçет. Пĕлетпĕр епĕр мĕн тума хулана çӳренине. Ҫим ленкĕрха пирĕн алла. Кăтартăпăр епĕр сире хула.

### Стсенă хыçĕнҫе.

**Сиктĕрме:** Килелле таврăнатăним, Йеххĕм пиҫҫе?

**Хĕветĕр:** Мĕн вăрттăн çулпа çӳре пуçларăн, йе çын курасран хăратăни?

**Çимкка:** Килеççĕ пулас пуçлăхсем.

## 6 стсенă.

(Сиктĕрме Йăванĕпе Хĕветĕр кĕреççĕ. Хĕветĕр аллинҫе михĕре ҫетвĕрт)

**Сиктĕрме:** Ну, самана. Ерех ĕçме вăрмана çӳреха.

**Çимкка:** Ерехĕ пулсан ĕçме кирек ăçта та аван вăл, çитменнине вăрманта уçăрах, тата çын та курмасҫ. Хĕветĕр пиҫҫе, пуçласан та йурамасти? Пуç пит ыратаҫ.

**Хĕветĕр:** Вăл пайан пĕр послушникне епĕр килиҫҫен йăвантарса, çывăрса та илнĕ.

**Сиктĕрме:** Пĕлетĕп. Карҫăкран йатлаçса вăрçса пĕр пулăштух илсе кайрĕ, тет.

**Çимкка:** Вăрçса ыйтман та...

**Хĕветĕр:** Пуçлар, тăвансем. Лар, Йăван Васиҫҫă, хăна пул.

**Сиктĕрме:** Есĕр мана хам ерехпех хăна тăватăр пулас?

**Çимкка:** Ес ерехе хамăн теме пăрах çак, Йăван Васиҫҫă. Ерех вăл хыснан

**Сиктĕрме:** Йепле хыснан?

**Çимкка:** Çаплах. Ку ерехе епĕр ĕçмесен вăл хыснана кайаҫ.

**Сиктĕрме:** Йепле хыснана?

**Çимкка.** Уколросыск акĕнҫĕсем килеççĕ те, мĕн пур ерехне хулана сĕтĕрсе кайаççĕ.

**Сиктĕрме:** Ес мĕне те пулин тĕртсе калаçмастăни?

**Çимкка:** Епĕ сăмаха кукăр çулпа çӳретме йуратмастăп. Малашне кала карҫăкна, вăл сăмсине пит ан каçăрттăр. Пайан: ерех парха, тăхлаҫă,—терĕм, вăл мана хирĕç: кунсерен сире ерех, вăл çăмăр шывĕ марĕçке, пĕлĕт çинҫен йухса анмасҫ, терĕ хуҫ. Нумай калаçма тытăнсан епĕр хуплăпăр çăварне.

**Сиктĕрме:** Есĕ ман çăвара хупасшăни? Пĕлетне ху камне?

**Çимкка:** Пит таса пĕлетĕп, ĕлĕк епĕ сан тарçуҫĕ, халĕ санăн пуçлăхун пулăшаканĕ.

**Хĕветĕр:** Çитĕ сире хархашма!

**Çимкка:** Ҫимха, Хĕветĕр пиҫҫе, мĕншĕн ун карҫăкĕ мана...

**Хĕветĕр:** Ҫарăн, Çимкка! Кирлĕ мар йапалашăнах тавлашма тытăнатăр йалан. Йăвантарар, тăвансем.

**Сиктĕрме:** Ҫăнах та: тавлашиҫен ерех ĕçни усăллăрах пулĕ. (кăсйаран кăларса) Ак еп çырткаламалли те илсе килтĕм. (кăлараҫ).

**Хĕветĕр:** Ку тарашка мари? Ерехпе пит аван пулаканҫĕ вăл.

**Сиктĕрме:** Ну, малтан Хĕветĕр Петровиҫ сывлăхĕшĕн ĕçер. Прегçетаттĕлте ăнăçлă ĕçлемелле пултăр.

**Хĕветĕр:** Ес каланă пек пултăр ĕнтĕ! (ĕçеççĕ).

**Çимкка:** Ну, маттур çын та мĕн ес, Йăван Васиҫҫă. Ерехĕ хупахринҫен те лайăхрах. Тума пĕлетĕн мĕн есĕ.

**Хӗветӗр:** Йӑван Васиҫҫӑ пур ӗҫе те маҫтӑр.

**Сиктӗрме:** Аванне аван та, ҫапах Йетӗрне патӗнҫи ҫӑвашсеннех ҫитеймест, вӗсем тата хӑватлӑрах тӑваҫҫӗ.

**Ҫимкка:** Вӗсене ӑҫта ҫитме. Йетӗрне ҫӑвашӗсем виҫӗм ҫулсенҫе Мускава турттараҫҫӗҫ

**Сиктӗрме:** Мускава та ҫитнӗшим ҫӑваш ерехӗ?

**Ҫимкка:** Ҫитнӗ ҫав. Йарха тепӗрер, Хӗветӗр Петровҫӑ (ӗҫеҫҫӗ).

**Сиктӗрме:** Епӗр савӑнасса савӑнатпӑртаха, тӑвансем, анҫах претҫетаттӗлте нумай ларма тиветши Хӗветӗр Петровҫӑна? Камсулсем пит кӑшкӑрашма тытӑнҫӗҫ пулас.

**Ҫимкка:** Вӗсем кӑшкӑрашмасан, кам кӑшкӑраштӑр йалта? Темӗн ҫитмен ҫав кӗске йӗмсене. Парттейный ҫынна претҫегаттӗл тӑвасшӑн.

**Сиктӗрме:** Парттейный совета кӗрсен пурӑнӑҫ хуплансах лараҭ вара пирӗн.

**Ҫимкка:** Пурӑнӑҫ ҫавах пулӗха та вӑл, ак мана ҫекреттартан сирпӗтсе кӑларӗҫ. Унтан тата ерех ӗҫес тӗлӗшпе те ӗҫсем хӗсӗнме пултараҫҫӗ. Мана хулара пурӑннӑ ҫухне миҫе хутҫен ҫавӑвшӑн милитсисем хупса хуманши?

**Хӗветӗр:** Есӗ тӗрмере те ҫавӑншӑнах ларнӑ темести?

**Ҫимкка:** Тӗрмене ӗҫнӗшӗн мар, сӑмакунккӑ сутнӑшӑн ултӑ уйӑка хупса хуҫӗҫ. Йарха. ерехе. (ӗҫет) Комуниссем йалта влаҫа ҫавӑрса илсен наҫар вара.

**Сиктӗрме:** Илессе илеймӗҫтеха вӗсем, анҫах ӗҫлеме кансӗрлӗҫ.

**Ҫимкка:** Ман шухӑшпа вӗсене хамӑр йенне ҫавӑрмалла.

**Сиктӗрме:** Шайттан ҫавӑрса пӗтерети вӗсене. Йалта комсолсем ҫех 70 ҫынна йахӑн. Тата вӗсемсӗр пуҫне комуниссем те пур.

**Ҫимкка:** Ес ӑнланса илейместӗн пулас, Йӑван Васиҫҫӑ, пурне те ҫавӑрма кирлӗ мар, пуҫлӑхне ҫавӑрмалла.

**Сиктӗрме:** Леш Иуркка Ҫеркейнеи?

**Ҫимкка:** Вара. Ҫавӑ вӗсен пуҫлӑхӗ. Ҫавӑ мӗн пур халӑха пӑлхатса тӑраҭ. Астӑватни, претҫетаттӗле суйланӑ ҫух мӗн калаҫрӗ.

**Сиктӗрме:** Ана ҫавӑрма хӗн.

**Ҫимкка:** Хӗн мар. Санӑн хӗр пури?

**Сиктӗрме:** Ну, пур.

**Ҫимкка:** Илтнӗ пулӗ вӑл Ҫеркейпе туслӑ пурӑннине.

**Сиктӗрме:** Ну, илтнӗ, вара мӗн?

**Ҫимкка:** Каҫҫа пар.

**Сиктӗрме:** Ҫав шайттана хам хӗре каҫҫа памаллаи? Мӗн ес ухмахланни мӗн, Ҫимкка?

**Ҫимкка:** Ех, ан кӑшкӑрха ес, Йӑван Васиҫҫӑ. Мулӑн тӗлне пӗлмесӗрех ҫӗре ҫавма пуҫлан. Малтан итле унтан кӑшкӑрах. Йарха ерехе (ӗҫет). Ух! Хӑватлӑ. Пуллине парха (ҫийет). Каҫҫа парасси сӑмах ҫех вӑл. Есӗ „каҫҫа паратӑп“ те ҫех. Хӗрне те ҫапла кала. Хӗрӗ ӑна сан йенне ҫавӑртӑр. Ҫеркей сан хӗрне ҫӑнахах йуратнӑ пулсан... йуратни куҫ умӗнҫе: вӗсем кашни каҫ пӗр пӗрипҫен уйрӑла пӗлмеҫҫӗ: сирӗн урамри кӗлет хыҫӗнҫе ыталашса лараҫҫӗ.

**Сиктӗрме:** Ман кӗлет хыҫӗнҫе лараҫҫӗ теместӗни?

**Ҫимкка:** Вара. (ӗҫет).

**Сиктӗрме:** Еп кӑтартӑпха вӗсене!

**Ҫимкка:** Ан пӑлха сӑмаха тархашшӑн, Йӑван Васиҫҫӑ! Ҫапла. Ҫеркей сан хӗрне ҫӑнахах йуратаҭ пулсан, сан хӗрӗ ӑна сан йенне ҫавӑрма пултараҭ. Ҫеркейе ху патна ҫӗн. Сан пата ҫӳреме пуҫласан ун йулташӗсем ӑна шанми пулӗҫ. Кайран—кайран, ӗҫе тусан, ҫухаран тыт та крыҫтса ҫинҫен ӗнселесех кӑларса йар! (кулаҫҫӗ) Ак сана хӗр, те-те, сыв пул, шӑллӑм, тейе пар.

**Сиктӗрме:** Ну пуҫ та мӗн сан. (Стсенӑ хыҫӗнҫе кӗлӗ йурласа иртсе кайаҫҫӗ. Ҫан ҫапни илтӗнет)

**Хӗветӗр:** Авӑ турӑшсене йӑтса кайаҫҫӗ. Пуп та халех ҫитет пулӗ.

**Ҫимкка:** Ҫапла ҫав, тӑванӑм. Ҫапла тӑваҫҫӗ ӑслӑ ҫынсем. Йӑвантарар тата пӗрер (ӗсессӗ).

## 7 стсенӑ.

(Пуп кроппилӑ савӑҫӗпе йе питрехил йӑтса кӗрет)

Пурте: А, аран-аран ҫитрӗ! Килех, ырӑ ҫыннӑм. Лар! хӑна пул!

Пуп: Ырӑ кунпа ырӑ сунатӑп, тӑвансем. Аван ҫӳретни, Йӑван Васильҫӑ?

Сиктӗрме: Ҫӳретпӗрха йерипен. Ху мӗнле?

Пуп: Аванха турӑ пулӑшнипе. Есӗ мӗнле, Хӗветӗр Петровҫӑ? Сывӑи?

Хӗветӗр: Сывӑха, Елексантӑр Ҫепритуныҫ!

Пуп: Илтнӗҫӗ, илтнӗҫҫӗ! Ырӑ хыпар ман хӑлхана та пырса кӗҫӗ. Сана каллех претҫетаттӗл тунӑ теҫҫӗ.

Хӗветӗр: Каллех турӗҫ, Елексантӑр Ҫепритуныҫ, каллех турӗҫ.

Пуп: Мана ан ман анҫах.

Хӗветӗр: Манмӑпӑр, манма йурати вара хамӑра тевлет паракана.

Сиктӗрме: Тултарса парха, Хӗветӗр, Елексантӑр Ҫӗпретуныҫа.

Хӗветӗр: Тултарас, тултарас (тултарать).

Пуп: (Ӗҫсе) Ох, ерехӗ хӑватлӑ! Тепӗрне йарса парсан та пырать пулӗ.

Ҫимкка: Ӗҫех, пуп хырӑмне ыраш пӑсмасть, теҫҫӗ.

Пуп: (Кулса) Сысна хырӑмне теҫҫӗ, пуп хырӑмне мар.

Ҫимкка: Пурӗ пӗр пӗр йӑхрав! Ес!

Сиктӗрме: Ҫимкка, кирлӗ мара ан пелке.

Ҫимкка: Епӗ кулса мар, йуратса калап.

Пуп: Ҫимкка ҫынран кулма йуратать-ске. Тултарха тепӗрне.

Сиктӗрме: Ӗҫех, ӗҫех Елексантӑр Ҫӗпритунҫӑ, сутӑн илнӗ йапала мар,— хамӑр туни.

Пуп: Нумай ӗҫме йурамасть те пулӗ. Пайан Тӑм кассинҫе молепӗн тумаллаха (ӗҫет). Аван. Халӗ туртса йарсан та пымалла. Санӑн тапак ҫуки, Ҫимкка? Васканипе ҫикме маннӑ.

Ҫимкка: Тапакӗ пур та, хуҫӗ ҫук. Санӑн ҫуки хут, Хӗветӗр пиҫҫе?

Хӗветӗр: Туртакан хут ҫук та, ак пайан ирхине вулӑсран „Канаш“ илсе килнӗҫҫӗ хӗрринҫен ҫӗрсе илӗр.

Пуп: Парха еппин. (Леш парать. Пуп ҫӗлхипе йӗпетсе хаҫата ҫурать) Темӗн тума кирлӗ ӗнтӗ ҫак ҫӑвашла хаҫат. Авал ҫӑвашла хаҫатсӑрх пурӑнаттӑмӑр. Ҫапах хаҫхинҫен авантарахҫӗ.

Сиктӗрме: Иӗрки нумайах мар хаҫатӑн. Вулас тӗлӗшӗпе вырӑслинҫен ӑнланмалларах та, анҫах кирлӗ мара нумай ҫыраҫҫӗ.

Пуп: Ме, есӗ ҫӗркетне, Ҫимкка?

Ҫимкка: Ҫӗркес. (Илсе хаҫата ҫурать, ҫӗркеме тытӑнать. Ҫӗркенӗ вӑхӑтра ӑнсӑртран вуласа) Ҫим, унта пирӗн йал ҫинҫен ҫырмани вара? (ҫикаркине хӑвӑрт ҫӗркесе ҫӑвара хыпать те, хаҫата илсе) Ҫӑнах та кунта пирӗн йал ҫинҫен.

Пуп: Ҫӑнах, ӑҫта?

Ҫимкка: Халех, шыраса тупам. „Йал пурӑнӑҫӗ... Ҫапла „Ишек пупӗсем ҫапӑҫни... „Арман касси“, ак, ак... тупрӑм...

Сиктӗрме: Вула хӑвӑртрах.

Ҫимкка: Халех, халех, Йӑван Васильҫӑ! (вуласа) „Арман касси“. Аха, ак ҫакӑ!

Хӗветӗр: Вула ӗнтӗ.

Ҫимкка: „Арман касси“... Пирӗн йалти етемсем шӑна ерешмен картине кӗрсе ӳкнӗ пек, пурте арман хуҫи Сиктӗрме Йӑванӗ аллине кӗрсе ӳкнӗ.

Сиктӗрме: Сиктӗрме тесех ҫырнӑи?

Ҫимкка: Ҫаплах ҫырнӑ, Йӑван Васильҫӑ, вула.

Сикктӗрме: (вуласа) „Сиктӗрме Йӑванӗ аллине кӗрсе“... Ах, ҫикеленсе каймансkерсем!

Ҫимкка: (вуласа) „Патша вӑхӑтӗнҫе те вӑл йала хӑй аллинҫе тытса пурӑнса, унӑн хӗрлӗ йунне ӗҫсе пурӑннӑ, сысна. Револютси пуҫлансанах унӑн ҫупатне хуҫнӑҫҫӗ, халӗ каллех ҫунаҫӗсене тӳрлетсе, вӗсемпе ҫухӑнсене хупӑрласа илсе аллисемпе пырӗсенҫенех пӑвать.

Сиктӗрме: Кӑна илемлетсе ҫырнӑ. Урӑхла вӑл: ҫын йунне ӗҫет тени пулать. „Унӑн лавкинҫе таварӗсем хуларинҫен 3 хут хаклӑ. Арманта та хӑй

ĕçнех тăваҫ. Авăртнăшăн 2 кĕренкке çурă, май килсен 3 те илет. Вăл сахал, çитменнине пирĕн йенҫе ун пек сăмоконккăпа сутуилў тăвакан та çук. Хăй сăмакун савăтне мунҫаран Шупашкарти авалхи ерех склатне куçарма ĕмĕтленет.

Сиктĕрме: Самаконккă тунине те пĕлеççĕ.

Çимкка: Хаçат вăл пурне те пĕлет.

Сиктĕрме: Шупашкара куçармалла темени тата?

Çимкка: Кăна илемлетсе çырнă, Йăван Васиҫҫă. „Иртнĕ выпăрта йалти çамрăксемпе комсомолсем комуниса претçетаттĕле суйлама шухăшласан Сиктĕрме Иăванĕ йалти пур сăмакун йухтараканСене хăй май çавăрса, претçетаттĕле каллех ĕлĕкхи Арлан Хĕветĕрне суйларĕç. Арлан Хĕветĕрĕ çинҫен елĕкреннех çыраççĕ. Вăл йапала вăрланăшăн тĕрмере те ларса пăхнă.

Хĕветĕр: Ку ман çинҫен мари?

Çимкка: Сан çинҫен, Хĕветĕр пиҫҫе. Пит тĕплĕ çыраççе. Вăрă теççĕ.

Хĕветĕр: Ах турă! мĕн тăвас, мĕн тăвас? Пĕтрĕм пулĕ.

Сиктĕрме: Пăрахха ес ахăрма, тăм пуç.

Çимкка: „Секреттарĕ те претçетаттĕлĕнҫен кайах мар“... Ку ман çинҫен пулас...

Хĕветĕр: Вула... Ху çинҫен те вула.

Çимкка: „Киремет Çимкки пек пăанитсă таврара та çук. Авал вăл Сиктĕрмен тарçи пулнă“. Ку ҫăн ... „Çак пролеттарий хăйне манса халĕ те пуйанăн тарçи вырĕнҫе советра ĕçлет... Елĕк аван çынахҫĕ, халĕ ун пе çынсене вырăсла .. хм... хм... „плуг теççĕ“... Ҫим, кăтартăпха еп вĕсене. Халех хирĕç çыратăп. Еп вĕсене, еп!..

Пуп: Ан шăртлан! Вула малалла.

Çимкка: Ах, путсĕрсем...

Пуп: Вула тетĕп...

Çимкка: „Ку çын йала арман хуçине сутса тăраканскер“ Аван, аван çыраççĕ, шăпăрлансем. Çатма çинҫех ăшалаççĕ.

Сиктĕрме: Пĕтри?

Çимкка. Ăçта пĕтме! Тата пур... Итлер малалла. Вĕсен кампанинҫе йалти пуп Алексантăр Спиритонăв та ĕçлет. Вăл ҫухăнсене улталаса вĕсен йулашки укçине хăй кăсйине пуçтараҫ: вилнинҫен те ҫĕрринҫен те йулашки тирне сĕвет. Йашка пĕçерекен арăмпа пурăнни çитмен, тата тăлăх арăмсем тăрăх йуртса çўрет.

Пуп: Пăрах вулама... Унта намăс сăмах та çырнă пулĕ.

Çимкка: Хăратра... Намăс сăмах çырмаççĕ, ҫăннине çех çыраççĕ. Ех! ухмах та мĕн епĕ! Мана хаçатра пролеттарий теççĕ, епĕ сирĕнпе çыхлантăм, хаçата та ленкрĕм. Тахçанах комуниса çырĭнмаллаҫĕ. Ех, ухмах пуç. (пуçне шаккаҫ).

Сиктĕрме: Пăрах кăшкăрма! Комунис. Комуниса сан пек çынна илеççĕн? Комуниса мар кататсен парттине те илмĕç.

Çимкка: Мĕншĕн илмĕç. Еп пролеттарий.

Сиктĕрме: Пролетарий мар есĕ, прлеттевший.

Пуп: Кам çырнăши кăна?

Сиктĕрме: Пĕр-пĕр комсомол пулĕ.

Пуп: Камши çав çын? пĕлесҫĕ ăна?

Сиктĕрме: Хаçат çинҫе мĕнле алă пуснă?

Çимкка: Ҫим, халех. (тупса) „Хĕрлĕ-хĕм“.

Пуп: Хĕрлĕ хĕм мар, хĕрлĕ шайттан çырнă пулĕ, анҫах камши?

Çимкка: Кам тетĕри? (пăшал сасси).

Çимкка: Ай, акă...

Пуп: Ман кайас хăвăрграх молепĕне ĕлкĕреймĕп. (Пуп кайма тытăнаҫ.)

## 8 стсенă.

(Çеркей пăшалпа кĕрет, аллинҫе вĕçен кайăк).

Çеркей: Е, ленкрĕни?

Çимкка: Еп айăплă мар, епĕ мар. (пурте хăраса ўкеççĕ).

Пуп: (ҫакса) Кам ленкнӗ? Епӗ мари?
Ҫеркей: Асан!

*Ҫаршав.*

# II акт.

(Ҫухӑн ҫӑваш ҫурҫӗ).

## 1 стсенӑ.

(Ҫеркейпе Ҫимкка)

Ҫеркей: Нумай калаҫмалли ҫук унта, Ҫимкка пиҫҫе. Ку ӗҫ манран ҫех килмест. Йаҫейккӑ мӗн калӗ.

Ҫимкка: Есӗ кала-кала хӑвӑн йулташусене, ӳкӗтле, вӗсем хирӗҫ пулмӗҫ.

Ҫеркей: Ҫӑннипех каласан, епӗ шанмастӑп сана, шанҫӑклӑ ҫын мар. Сиктӗрме Йӑванӗсемпе ҫыхланса ҫӳретӗн тата. Парттийе кӗрес пулсан пуйансемпе йавӑҫса, вӗсемпе туслашма йурамаст, вӗсемпе кӗрешме кирлӗ.

Ҫимкка: Епӗ кӗрешме кӗрешӗп Сиктӗрме Йӑванӗпе. Пит усал ҫын.

Ҫеркей: Тата та сан сӑлтӑк пур: есӗ ерех ӗҫме йурататӑн. Ерехе пӑрахмалла.

Ҫимкка: Та! Ерех ӗҫес тӗлӗшпе ӗҫсем наҫар. Ҫамрӑкранпах ӗҫме вӗреннӗ те, пӑрахма хӗн. Та!

Ҫеркей: Пайан пирӗн пуху пулат, ҫав пухура епӗр сан ыйтуна пӑхӑпӑр. Пухӑва ху та килме пултаратӑн.

## 2 стсенӑ.

(Йеххӗм кӗрет)

Йеххӗм: Епӗ лашана кӳлтӗм, Ҫеркей.

Ҫеркей: Йурат, атте. Пуҫтарӑн апла пулсан. Акӑ сана кирлӗ хутсем. Ҫик кӑсйуна.

Ҫимкка: Ӑҫталла пуҫтарӑнтӑн апла, Йеххӗм пиҫҫе?

Йеххӗм: Ак Ҫеркей Хусана куҫа тӳрлетме ӑсатат те, темӗн пулӗ ӗнтӗ.

Ҫимкка: Мӗн пуласси пулатех ӗнтӗ вӑл.

Ҫеркей: Наҫтук вӑйӑран таврӑнҫӗи?

Йеххӗм: Карташӗнҫе курӑнмаст, килмерӗ пулӗ.

Ҫеркей: Ӑсатма Наҫтука йарас пулӗ. Манӑн пайан пуху пулмалла та.

Йеххӗм: Ес йалан хӑвӑн пухӑвӑпах.

Ҫимкка: Ҫеркей вӗреннӗ ҫын, вӑл пухура ӑса вӗрентет.

Йеххӗм: Комун тӑвасшӑн вӑл, анҫах вӑл шухӑша пӑрахсан авантарах пулмалла пек ман шухӑшпа.

Ҫеркей: Ес йалан хӑвӑн сӑмахупах, атте. (кӗвӗ калани илтӗнет). Пойӑса ӗлкӗреймӗн. Кайсан та йурамалла Наҫтука ҫӗнсе килесҫӗ.

Йеххӗм: Кайса ҫӗн еппин.

Ҫимкка: Стантси инҫех марҫке, ӗлкӗрен. Пойӑс миҫере пулатха?

Йеххӗм: Ҫиҫҫӗре пулас. (кӗвӗ вӑйлӑрах).

Ҫеркей: Акӑ вӗсем те ҫитрӗҫ пулас (ҫӳреҫене уҫса) Наҫтук, Наҫтук, Таварӑнха киле.

Наҫтук сасси: Мӗн тума?

Ҫеркей: Еҫ пур, хӑвӑртрах!

Йеххӗм: Наҫтук ҫӑкӑр те ҫикрӗ хутаҫҫа.

Ҫеркей: Ҫикрӗ пулас. Атте, есӗ поҫнигсӑна выртма хӑварсан ҫыру ҫырса йар. Вӑхӑт пулсан тен пырса кайӑп.

Йеххӗм. (пуҫтарӑнса) Йурӗ, ҫыртарӑп кама та пулсан.

## 3 стсенӑ.

(Наҫтук кӗрет)

Наҫтук: Мӗн тума ҫӗнетӗн, Ҫеркей.

Ҫеркей: Мӗн тума? Аттене стантса леҫсе йамалла.

Наҫтук: Епӗ мӗн кирлине паҫӑрах хатӗрлесе хутӑмҫке.

**Çеркей:** Халĕ леçсе йар.

**Наçтук:** Ху кайатăп теместĕни?

**Çеркей:** Манăн вăхăт çук. Есех леçсе йарăн.

**Çимкка:** Епĕ кайамха еппин. Пăртак тăрсан килĕп пухăва. (кайаҫ)

**Йеххĕм:** Ку мĕн пирĕн пата çÿре пуçларĕ тата, йе Сиктĕрмесен ушкăнĕнҫен уйрăлҫĕи?

**Çеркей:** Парттийе кĕме хут çырнă, çав ĕçпе килнĕҫĕ.

**Йеххĕм:** Ех, Çеркей, шанҫăклă çын мар вăл. Мĕн те пулин тăвасшăн мари вĕсем? Йалта çавăн пек калаçкаланисем илтĕнеççĕ.

**Çеркей:** Тăвасса нимĕнех те тăвас çукха вăл, анҫах шанма еп хам та шанмастăп ăна.

**Йеххĕм:** Пăрахха ес Сиктĕрме ушкăнĕпе кĕрешме. Пуйан çынсене ăçтан çĕнтерĕн. Авă претçеɪаттĕле те каллех хăйсен çыннине çуйласа лартрĕç. Маншăн пулсан комуна мар, шайттан тăвăр. Мана ват çынна пурăнма пулсан йураҫ. Сана кансĕрлес тесе каламастăп, анҫах хуна сыхла.

**Наçтук:** (тулашса) Кайар еппин, атте.

**Йеххĕм:** Кайăпăр, хĕрĕм. Есĕ тухса лашана çавăр. (Наçтук кайаҫ). Сыхла хăна, Çеркей. Авă хаçатра çырнине те пĕлнĕ вĕсем.

**Çеркей:** Ăна ăçтан пĕлнĕ тата?

**Йеххĕм:** Вĕсем çĕр тĕпĕнҫен те шăршласа тупĕç... Ҫипер пул, ывăлăм (алă парса тухаҫ. Çеркей ăсатма ун хыççăн тухаҫ. Стсенă пушă йулаҫ пĕр самантлăха).

Стсенă хыçĕнҫе.

**Наçтук:** Хапхана уç, пиҫҫе.

**Çеркей:** Есĕр арман урлă кайăр. Аслă çулпа çаврăнăç. Наçтук, есĕ стантсăра нумай ан тăр, хăвăртрах таврăн. Аттене Николай Çеменыҫ патне кĕрт те йурĕ. Николай Çеменыҫ хăйех ăсатĕ аттене.

**Наçтук:** Йурĕ, пиҫҫе. Ну... уткала тата... Мĕн кутăнланса тăратăн.. (шăхăраҫ).

## 4 стсенă.

(Çеркей кĕрет)

**Çеркей:** (Çăкăр касса илсе, тăвар сапса, сĕтел хушшине ларса çиме пуçлаҫ. Хаçат вулаҫ). Çапла... Керманире... Кинтенпурк преçитент (çыраҫ.) Хĕрлĕ-хĕме вĕлерни... Ку кирлĕ марха. Акă... Ҫăваш оплăçне респуплĕк тумалли. Охо!... Ҫăвашсен рэспуплĕк пулати? Кăна халăха каласа парас пулаҫ.

## 5 стсенă.

(Верук кĕрет. Çеркей сисмест. Алăк уçах йулнă).

**Верук:** Çеркей!

**Çеркей:** Есĕ йепле пĕр сасăсăр, анкĕл пек пÿрте кĕнĕ?

**Верук:** Алăка хупман та ху.

**Çеркей:** Йепле хăйрăн, йе çын курсан? Наçтук килге çуккине пĕлтĕнçке.

**Верук:** Вăл та, аçу та килте çуккине пĕлсе çех килтĕм. Нийепле пĕрпĕрне курса калаçма çук. Каçхине атте вăййа кăлармасҫ. Тухсан та усси çук пурĕ пĕр есĕ вăййа тухмастăн.

**Çеркей:** Вăхăт çук, ĕç нумай. Ну, мĕн ура çинҫе тăран, лар! (Леш лараҫ. Паусă)

**Верук:** Çеркей!

**Çеркей:** Мĕн, Верук?

**Верук:** Есĕ манпа калаçасшăн та марим?

**Çеркей:** Хаçат Вулатăп. Пайан пуху пулмалла.

**Верук:** Пĕлетĕп пуху пуласса.

**Çеркей:** Кам каларĕ сана?

**Верук:** Çимкка хаҫ çех пирĕн пата пыҫĕ те, çавă каларĕ.

Çеркей: Унта çитнĕ те... Мĕн тума?

Верук: Аттене, епĕ халĕ комунис пулатăп, манра калаçма йăвăр, тесе мухтанса лараĭрĕ пулас. Ҫăнах та ăна комуниса илетĕри, Çеркей?

Çеркей: Пĕлейместĕп...

Верук: Çавă пйантса комуниса илсен вара.

Çеркей: Акă мĕн, Верук, санпа калаçмалли ман ҫăнах та пурҫĕ; анҫах халĕ кунта йулташсем килмелле, çавăнпа...

Верук: Пĕлетĕп, кайма хушатăн...

Çеркей: Тепĕр вăхăтра курса калаçăпăр.

Верук. Ес йурнйех хăваламастăни? Хăвăр пата çӳреме те хушмастăн, тет...

Çеркей: Ăна кам каларĕ?

Верук: Наçтук пайан вăйăра систерҫĕ.

Çеркей: Ех, ку, Наçтука. Сăмаха ăшĕнҫе тытма пĕлмест вара... Ҫим, вĕрентемха еп ăна...

Верук: Вăл сана калама хушмарĕ те.

Çеркей: Есĕр хĕрарăмсем, йалан çапла: пĕр-пĕрне калама хушмастăр, хăвăр унта та кунта калаçса çӳретĕр. (сасăсем) Хăвăртрах кай, Верук, çынсем килеççĕ пулас.

Çеркей: Кил, анҫах çынсем ан курҫҫăр. (Верук хăвăрт кайаĭ. Çеркей хут татăкĕсене пуçтараĭ. Сак çинҫи тумтирсене купалаĭ).

Çеркей: Ку Наçтукпа ăнран кайрăм ĕнтĕ. Ҫĕлхи кĕçĕтсех çӳрет пулмалла. Леш, хаçат çине çырнине те çавах каласа памани?

## 6 стсенă.

(Така Павăлĕпе 5-6 çын кĕреççĕ)

Така: Килтеи?

Çеркей: Килте, килте. Килĕрех, йулташсем. Тĕпелерех иртĕр. Ларăр.

Така: Епĕр иртĕпĕрçке.

Çеркей: Ларăр, йулташсем, ларăр! (пурте лараççĕ).

Така: Пайан сан пата претçетаттĕл килесшĕнҫĕ.

Çеркей: Мĕн çăмăлпа.

Така: Мĕн çăмăлпине пĕлеймерĕм, анҫах, пĕр йапала систермелли пур, тет.

Çеркей: Вулăсран мĕн те пулин килмени?

Така: Каламарĕ.

Çеркей: Мĕнле сан шухăшпа, Павăл, тепĕр хут претçетаттĕл суйлама хут килетши?

Така: Калама хĕн. Леш, вулăсран вăл ĕçпе килни Сиктĕрме-Йăванĕсемпе туслă пурăнаканскер, терĕç. Ҫарăнма та ун патнех ҫарăннăҫĕ пулас.

Çеркей: Вулăсра та шăпăрлансем йулкалаççĕ. Вĕсене те тасатмалла.

Така: Вулăсрисене мар йалтисене те тасатаймастпăрха.

## 7 стсенă.

(Тата 3-4 çын кĕреççĕ. Вĕсен хыççăн Арлан Хĕветĕрĕ кĕрет).

Çеркей: Килĕрех. Иртĕр малалла.

Çынсем: Иртĕпĕр. Аван пурăнатри? Сывăи? Мĕнле çӳретĕр?

Çеркей: Ларăр. Ак пукан!

Арлан: Манăн та килес. Сывă пурăнатăри, тăвансем? Çеркей шăлăм, епĕ сан пата килнĕҫĕ те.

Çеркей: Килех! Мĕн çăмăлпа апла?

Арлан: Акă хут килнĕ, алă пусмалла санăн.

Çеркей: (Вуласа) Вулăсран йанă хут тăрăх, есĕр претçетаттĕле кулак тени тĕрĕс мар, çавăнпа тепĕр хут суйлама кирлĕ мар, (хытă) Кам сана кулак тенĕ!

Арлан: Кулак пулма епĕ пуйан çын мар ҫăнах та. Есĕр суйа сăмахпа варалатăр.

Така: Çветтуйа ан хур хăна, Хĕветĕр, мĕн пĕлмен пек калаçатăн. Сана кулак тесе никам та каламасть, кулаксемпе çыхланса, вĕсен йенне кайса ӳкнĕ çех тетпĕр.

Арлан: Ӳкни ӳкменни вăл сирĕн ĕç мар, манăн. Çавăнпа ман сире кансĕрлес мар, кайас. (кайма тăрать)

Така: (ҫарса) Ҫим, Хĕветĕр, пирĕн урамра та уйав пулĕ. Сирпĕтĕпĕрха сирĕн йышшисене.

Çеркей: Ан калаç унпа, Павăл.

Арлан: Курăпăр кам сирпĕтнине. Хăвăр ан сирпĕнĕр, çавăнтан çыхланăр..

Така: Е, çаплан ес? Еп сана...

Арлан: (хăвăрт тухса) Сыв пулăр!

Çеркей: Мĕн çыхланатăн путсĕрпе?

Така: Алă кĕçтесе кайрĕ ҫăтайманнипе. Пĕрре çиçсе илсен йуратҫĕ те пулас...

Çеркей: Çитĕ... Ну, килес пеккисем пурте килҫĕç пулас... Шăпăр Мĕтри çех килмен пулас.

Така: Вăл пайан çутăлнă çутăлманах манран лаша илсе кайрĕ. Хире тислĕк туртарать терĕ. Çапах та пухăва килестĕнҫĕ пулас.

Çеркей: Ана кĕтмĕпĕр. Лашасăр çыннăн лаша панă ҫух ĕçлес пулать. Пуçлар.

Пурте: Пуçлар. Вăхăта ахаҫ иртерес мар. Каç та пулать пулĕ, тытăнар.

Çеркей: Пухăва иртерме претçетаттĕл суйлă-.

Çеркей: Ман калаçмалли нумай, çавăнпа претçетаттĕле Павăла тăвар, çекреттарĕ Мĕтрийе. Хирĕç калакан çуки?

Пурте: Йурĕ. Çук. Пуçлăр.

Çеркей: Павăл, лар сĕтел хушшине.

Така: Еп ку йĕркене пĕлекеннийех мар та...

Çеркей: Ак пайанхи тăвас ĕçсем. Вуласа пар, Павăл.

Така: Пĕремĕш—Копператив тăвасси, 2-шĕ—Шкул ĕçĕ, 3 шĕ—Çĕнĕрен ҫлена илесси. Тата çуки ĕçсем?

Çеркей: Ман шутпа 3-ш ĕç—Çелсовета çĕнĕрен суйласси.

Така: Ку йурать. Кам хирĕç? Никам та хирĕç мар. йышăнатпăр. Малтанхи ĕçпе хамах калама тивет. Йулташсем, хăвăр та пĕлетĕр, пире копперативсăр пурăнма хĕн. Халĕ мĕн пур сутуилӳ арман хуçи Сиктĕрме Йăванĕ аллинҫе. Иапаласене мĕн хакпа сутас тенĕ, çав хакпа сутать. Вал пирĕн йулашки пурлăха хăй кăсйине ҫикет. Апла ан пултăр тесен пире копператив кирлех. Таврари йалсенҫе ăçта-килҫĕ унта копператив лавкисем уçăлаççĕ. Епĕр пысăк йалта уçаймастпăр. Çавăнпа, йулташсем, йалта копператив тăвасси çинҫен, вăл халăха усă парасси çинҫен сăмах сарма тăрăшăр.

Пурте: Тăрăшăпăр! Тăрăшас! Кирлĕ!

Павăл: Çитес йал пухăвĕнҫе вăл ĕçе тăвасах пулать. Елĕкрех халăх копператив уссине сисеймен, халĕ, Сиктĕрме вĕсен йулашки тирне сĕвнине кура, сисрĕ пулас. Çавăнпа халăх хирĕç пулмĕ тетĕп. Епĕ пĕтертĕм, ресоҫутси таврашне Çеркей хăйех çырĕ. Малалла шкул ĕçĕпе Çеркейе сăмах паратăп. Кала, Çĕркей.

Çеркей: Шкул ĕçĕпе нумай калаçмалли çук. Шкул кирлине хăвăр та пĕлетĕр. Аҫасем шкула йут йала тăвата çухрăма хĕлле шартлама сивĕре çӳреççĕ. Ҫиркĕве тытма, пуппа псалумшĕке тăрантарма укçа пур пулсан, шкул тума та тупăнĕ. Çинерех тăрсан уйесрен те укçа парĕç. Пĕр кун хулара епĕ вăл тĕлĕшпе калаçса пăхрăм. Унта пирĕн йала шкул тăвассине йышăннă, анҫах кăçалах туса парайăпăри, çуки ăна калама хĕнтерех терĕç. Хăвăр шкул ваҫҫи çурт тупсан уҫитлĕ йарăпăр, терĕç.

Пурте: Çурҫĕ çукçке.

Така: Çурҫĕ çукки пĕтерет. Ҫиркĕве хупса шкул тусан пит аван пулĕҫĕ те.

Çеркей: Ҫиркĕве халăхран пуçне хупма йурамасть. Вăл халăх ĕçĕ. Совет влаçĕ ĕненекенсене ĕненме, кĕлтума ҫармасть. Ман шутпа çурт пур пек.

Пурте: Ăçта? Пулсан илес.

Çеркей: Сиктĕрме Йăванĕн икĕ килĕ. Пĕринҫе вăл пурăнмасҭ те. Иккĕшĕ те шатрун пўрт. Çавна илес.

Павăл: Памĕ вăл, шайттан!

Çеркей: Ахаҫ памасан, халăхпа укçа тўлес.

Павăл: Укçашăн вăл пўртне мар, хăйне те сутĕ. Анҫах тата кансĕрлекен пур. Пуп хирĕç пулĕ.

Çеркей: Пуп хирĕç пулмĕ. Пит хирĕç пулсан, ăна хăйĕн вырăнне кăтартма та йураҭ. Çитес пухăва ку ĕç çинҫен халăхпа калаçса пăхăпăр. Çамрăксем пирĕн майлă, ĕç тухĕ тетĕп.

Павăл: Ышăнар пулĕ, тăвансем!

Пурте: Ышăнас, Ышăнас!

Çеркей: Тата виççĕмĕш ĕçпе. Хăвăр та куртăр пулĕ. Хĕветĕр мана халĕ çех систертĕм тесе алă пусгарса кайрĕ. Ку йал советне тепĕр хут суйласси çинҫен. Епĕ вăл ĕç çинҫен уйесе çырнăҫ, анҫах вулăсри путсĕрсем вăл ĕçе хăйсене кирлĕ пек туса хунă. Халĕ йалти йаҫҫейккă йаҫĕпе уйесри ĕç тăвакан комитета хут çырас.

Пурте: Çырас, çырас!

Çеркей: Çитĕ пире арман хуçи аллинҫе пурăнма. Авал пирĕн йуна ĕçсе пурăнни çитмен, вĕсем халĕ те ҫухăн хресҫенсене ерешмен карти пек карса илсе, хăйсен аллипе ҫăмăртаса илсе, пире пурăнма мар, ĕçлеме те памаççĕ.

Пурте: Çапла! Ҫăн! Нĕгереççе пире!

Павăл: Ышăнари?

Пурте: Йышăнас, йышăнас!

Павăл: Йулашкинҫен парттийе илес ĕç. Кунта хут пур.

Пурте: Кам вăл? Вулаха.

Павăл: Çеркей, вулаха. Çырма ҫăвашла çырнă пулас та, анҫах ман каç пуласпа куççем наҫар кураççĕ, те ҫăх куç пулаҭ ĕнтĕ.

Çеркей: (вуласа) . . . . . . кассинскинҫи комуниссен çекреттарне Йуркка Çеркейне... Киремет Çимккин ыйтăвĕ.

Павăл: Камăн? Çимккан мари?

Пурте: (кулса) Вуласа парха мĕн çыраҭ?

Çеркей: „Епĕ ҫухăн çын. Ман кил çуккине есĕ ху та пĕлетĕн. Советра выртса пурăнатăп. Мана хаçатра та пролеттар тесе çырнă“

Пурте: (кулаççĕ).

Çеркей: „Епĕ ĕлĕкрех Сиктĕрме Йăванĕ патĕнҫе тарçăра пурăннă“.

Павăл: Халĕ те унăн тарçийех(кулаççĕ).

Çеркей: „Çавăнпа мана комуниса илме ыйтатăп“.

Пурте: Ак тупăннă комунис.

Павăл: Ăна комуниса мар катета илме те хăрушă.

Çеркей: Ку ĕçпе вăл пайан хăй ман пата килҫĕ. Епĕ хам йенҫен ăна илесшĕн мар, есĕр мĕн шухăшлатăр, тăвансем?

Павăл: Ман шутпа ку ĕç çинҫен калаçма та кирлĕ мар. Çимкка камне вăл мĕнле çыннине пĕлетпĕр. Ун пек çынна парттийе илме мар, партти çывăхне те йама намăс.

## 8 стсенă.

(Çимкка кĕрет, тăсăлса ўкет. Вăл ўсĕр).

Çимкка: Намăс çав ĕнтĕ. Алăк урлă каçайманни илемлĕ йапалах мар.

Павăл: Ес мĕн тума килетĕн, Çимкка?

Çимкка: Мана Çеркей килме хушрĕ. Епĕ халĕ комунис пулатăп. Мана..

Çеркей: Ўсĕр пуçпа пухăва çўремеççĕ.

Çимкка: Мана Сиктĕрме Йăванĕпе, пуп ĕçтерҫĕç. Вĕсем „—есĕ, Çимкка, комунис пулмалла, вар... вара“...

Çеркей: Вара мĕн?

Çимкка: „Вара пирĕн ĕç ăнса пырĕ“, терĕç.

Çеркей: Ехе, акă мĕнле шухăшпа парттийе кĕресшĕн ес? Апла пулсан, есĕ хăвăртрах вĕçтер кунтан.

**Çимкка:** Епĕ ҫăнах та комунис пулма пулгаратăп. Епĕ пролеттар... епĕ çук çын.

Павăл: Есĕ арман хуçине сутăннă.

**Çимкка:** Мĕн? Ес ху сутăннă. Претçетаттĕл пуласшăнҫĕ те, претçетаттĕл вырăнне сана ак çакна (кăтартат) кăтартрĕç.

Çеркей: Акă мĕн, Çимкка, есĕ капла калаçма тытăннă пулсан, тухса кайха кунтан.

Çимкка: Хăвалатăри. Ҫим ӳкĕнĕр те кайран пулĕ.

Пурте: Хăвалас ăна, хăвалас!

Павăл: (Сĕтел хушшинҫен тухса) Çимкка, çăварна ытлашши ан кар. Есĕ мĕнле çыннине пĕлетпĕр епĕр. Ирĕккĕн тухса каймасан...

Çеркей: Иулташсем! Урăх ĕç пирĕн çук пулас. Çавăнпа пухăва хупсан та йурамасти?

Павăл: Пухăва хупатăп, йулташсем.

Пурте: Каç та пулат, киле кайар. Аҭа киле, Çимкка! Мĕн сĕтĕрĕнсе çӳретĕн?

Çимкка: Килеи? Киле кайас. Анҫах Павăл ахалех мана хурлат.

Çеркей: Ыран, урăлсан ун çинҫен калаçăпăр. Халĕ киле кай. (пурте саланаççĕ). Есĕ, Павăл, йулха пĕр самантлăха, калаçмалли пур.

Павăл: Мĕн ĕç?

Çеркей: Хаçат çинҫе кам çырнине пĕлнĕ лешсем. Йалта çапла калаççĕ тет.

Павăл: Кам систернĕши ăна?

Çеркей: Кам систерни кирлех те мар вăл. Пурĕ пĕр хăçан та пулин пĕлнĕ пулĕҫҫĕç, анҫах малашне сыхланарах çӳрес çĕрле. Хĕрлĕхĕмсене ăста килҫĕ унта хĕнени, вĕлерни çинҫен хаçат çинҫе çыраççĕ. Сыхланарах çӳре.

Павăл: Тавта пуç сана, Çеркей. Ну сыв пул! (тухса кайат. Тĕттĕмленет).

## 9 стсенă.

(Павăл тухсанах Верук кĕрет)

Çеркей: Кам кунта? Е, Веркка! Килех! Лар. Епĕ хутсене çех пуçтарам. (пуçтарат). Есĕ мĕн пит вăхăта çитрĕн? Сыхласа тăнă пекех.

Верук: Епĕ ҫăнах та.

Çеркей: Мĕн? Алăк хыçĕнҫе. Апла ес кунта мĕн калаçнине итлемерĕни?

Верук: Итлерĕм, Çеркей, лайăх итлесе тăтăм.

Çеркей: Аван мар, Верук!

Верук: Аван, маншăн аван, Çеркей. Ларма йурати?

Çеркей: Лар.

Верук: Çеркей! Халĕ, никам курман, илтмен ҫухне каласа пар: улталамастăни ес мана?

Çеркей: (ун патнелле пырса) Ех, Верук, епĕ мĕнле савнине пĕлетĕн, çапах мĕншĕн улталатăн тетĕн. Сана каҫҫа илессине те пĕлетĕн, анҫах мĕн пур ĕç санра.

Верук: Атте хирĕç мар пулас ĕнтĕ. Иртнĕ вырсарни кун мана санпа çӳреме ҫармастăп, май килсен каҫҫа та парап, терĕ.

Çеркей: Суйат вăл. Сана ахаҫ анҫах калат. Вăл нихçан та парас çук. Ĕненместĕп, Верук.

Верук: Мĕн тăвасха ĕнтĕ манăн? Килте те пурăнăç мар; атте кунĕçĕрĕн йатлаçса пурăнат.

Çеркей: Иккĕшĕнҫен пĕрне суйламалла тесе епĕ тахçанах калатăп сана. Мана манса аçусемпе пурăнса Кавăрле Мишшине каҫҫа кай, йе вĕсене манса ман пурăнăçăн йулташĕ пул. Епĕ сан аçуна йăлăнма, унтан мĕн те пулин ыйтма пултараймастăп, Верук.

Верук: Йепле аттеанне йĕркинҫен тухмалла.

Çеркей: Аттеанне аллинҫе, вĕсем хушнине çех итлесе пурăнса, йуратман çынна каҫҫа кайса иртер ĕнтĕ емĕрне. Халĕ хĕраҫа хăй сăнанă çынна ашшĕамĕшĕнҫен ыйтмасăрах кайма пултарат.

**Верук:** Ку совет влаçĕ вăхăтĕнҫе çех ĕçке, йе совет пĕтсе, каллех патша пулсан?

**Çеркей:** (кулса) Патша теместĕни? Кам сана кун пек кулăшла сăмаха каларĕ.

**Верук:** Атте çапла калаҭ.

**Çеркей:** Çавăнпа епĕ сан ачуна хирĕç пыратăп та. Сан аçу пеккисем, хăйсен мулне сыхлас тесе, йалан патшана кĕтеççĕ. Совет влаçĕ вĕсене ырханлантарҫĕ кăшт, вĕсем çĕнĕрен самăрланасшăн. Анҫах вăл самана ĕмĕрлĕхе хупланҫĕ. Совет влаçĕ халĕ çех Раççей çĕрĕнҫе, çитес çулсенҫе пĕтĕм çĕр çинҫе совет влаçĕ пулĕ.

**Верук:** Ҫăнах калатăни есĕ?

**Çеркей:** Ҫăн, Верук.

**Верук:** Апла пулсан ман аттерен ыйтмасăрах каҫҫа кайма йурати, Çеркей?

**Çеркей:** Ку мĕне пĕлтерекен сăмах?

**Верук:** Йе еп халĕ çакăнтан урăх киле таврăнмасан?

**Çеркей:** Аçта пурăнас тетĕн вара?

**Верук:** Сан патăнта.

**Çеркей:** Ҫăнахи?

**Верук:** Ҫăн.

**Çеркей:** (ыталаса илсе) Верук ҫуҫăм, ҫăнах та ес манăн арăми?

**Верук:** Санăн, Çеркей. (ҫуптăваҭ)

### 10 стсенă.

(Наçтук кĕрет).

**Наçтук:** Хытăрах ытала, Верук.

**Верук:** Ай, кам кунта?

**Наçтук:** Ан хăра, епĕ килтĕм.

**Çеркей:** Таврăнтăнтан, Наçтук? Мĕншĕн пит хăвăрт.

**Наçтук:** Кансĕрлерĕмим. Акă мĕншĕн ес мана йатăн. Кăна пĕлнĕ пулсан нийепле те каймастăмҫĕ аттене леçме (тĕпеле пырса) çĕçĕ аçта, Çеркей? Çиййĕс килҫĕ.

**Çеркей:** Ак кунта. Ме. (параҭ. Леш çăкăр касаҭ).

**Наçтук:** Çимкка ўсĕр... Укăҫҫа патĕнҫе тăсăлса вырта†. Нимĕн те курăнмасҭ. Лампă çутха, Çеркей (леш çутаҭ).

**Наçтук:** (Çисе) Аҭа кĕвĕ калама, Верук.

**Верук:** Каймастăп, Наçтук.

**Наçтук:** Йе аçу йатласран хăратни?

**Верук:** Çук, упăшкаран хăратăп.

**Наçтук:** (тĕлĕнсе) Камран тетĕн?

**Çеркей:** Манран хăраҭ, Наçтук, Верук санăн инкў пулҫĕ. (пауса).

**Наçтук:** Нимĕнте ăнланаймастăп.

**Çеркей:** Верук урăх апшĕ патне каймастăп, ирĕн патах йулатăп, терĕ,

**Наçтук:** Ҫăнахи, Верук... инке?

**Верук:** Ҫăн, хĕрсем!

*Ҫаршав.*

## III акт

(Сиктĕрме çурҫĕ. Лайăх çĕнĕ пўрт.)

### 1 стсенă.

(Укçи сĕтел çине апат хатĕрлет)

**Укçи:** Ех, ырра сисмест ман ҫере. Мĕнле те пулин инкек пуласса кĕтсех тăр. Пĕртен пĕр хĕрĕмĕр те пăрахса кайрĕ. Минçе хут каламан хĕре ан кай тесе, итлемерĕ. Халĕ мĕн пулса тăҫĕ. Ернене йахăн тухса кайни, халиҫен винҫетсĕр пурăнаççĕ.

## 2 стсенӑ.

(Верук кӗрет)

**Верук:** Анне, атте килте ҫуки?

**Укҫи:** Килте ҫук, хӗрӗм, иртех малалла.

**Верук:** Иртсе тӑма вӑхӑт ҫук. Ҫеркей те килет пулӗ, тата кӗтӳ те йараӗ пулӗ.

**Укҫи:** Мӗншӗн пӗртте килсе курмастӑн, йе аҫуаннӳне пӗтӗмпех мантӑни?

**Верук:** Аттерен хӑратӑп, анне. Виҫӗм кун урамра тӗл пулсан та, ҫын умӗнҫех хӗнеме тытӑнҫӗ, хаҫ те Павӑл хута кӗҫӗ.

**Укҫи:** Ӑнтан кайнӑ епӗ сан аҫупа. Йапалусене парасси ҫинҫен калаҫса пӑхрӑм та, и... ӑҫта унта... ҫарамас ҫӳресен те татӑкне те памастӑп терӗ.

**Верук:** Ҫеркей аттерен йапала тавраш ыйтма хушмарӗ. Кунта ҫӳреме те хушмасӗ. Кирлӗ пулсан хӑйсем килӗҫ, тет.

**Укҫи:** Епӗ те пырса пӑхасшӑнҫӗ те, мана та аҫу йамасӗ.

**Верук:** Анне, мана атте ҫук ҫухне пӗрик кӗпе парса йамӑнши? Улӑштарма та кӗпем ҫук.

**Укҫи:** Парса йарам, хӗрӗм. Арҫа уҫҫи санран?

**Верук:** Манра, анне.

**Укҫи:** Парха илсе парам. (Уҫҫине илсе, сак айӗнҫен арҫине кӑларса, икӗ кӗпе илсе параӗ) Ме ҫӗркесе ҫик... асту, аҫуна тӗл пулсан пытар. Йапала парса йанине пӗлсен, пӗтерӗ мана.

**Верук:** (саппун айне ҫӗркесе ҫикет). Ҫеркей те вулӑсран тавӑрӑнаӗ пулӗ, кайас ӗнтӗ.

**Укҫи:** Лармаллаҫӗ ха, хӗрӗм.

**Верук:** Ларса тӑрас мар, атте килсен тата...

## 3 стсенӑ.

(Сиктӗрме Иванӗ кӗрет).

**Сиктӗрме:** Ес мӗн тума килтӗн тата? Сана киле урапа та ан пус тесе каламарӑми, йе...

**Укҫи:** Ҫитӗ вӑрҫма ӗнтӗ, Йӑван.

**Сиктӗрме:** Санран ыйтмӗҫ. Ҫӑварна ан карнӑ пултӑр! (арҫана курса) арҫана мӗн урай варрине кӑларса лартнӑ, йе Верука йапала патӑни?

**Укҫи:** Улӑштарма кӗпи ҫук хӗрӗвӗн, йепле парас мар...

**Сиктӗрме:** Ӑна кӗпе мар, ҫӗтӗк ҫӑпата та пама йурамасӗ; ӑста кӗпи? хур арҫана кайалла.

**Верук:** Атте! Кӗписене ес туманҫке, хам тӗртсе тунӑ.

**Сиктӗрме:** Пулин, есӗ манӑн хӗр, ҫавӑнпа сан аҫу ирӗкӗнҫен тухмалла мар.

**Верук:** Ҫук, атте, вӑл самана ирттӗр ӗнтӗ. Ахаҫ те ес ман пуҫа 20 ҫул ҫисе пурӑнтӑн, халӗ хам шухӑшпа пурӑнас тетӗп. Совет влаҫӗ сывӑ ҫух хӑрасах тӑмӑпӑр.

**Сиктӗрме:** Е, ес те совет влаҫӗ йенне сулӑнтӑни? Ес те ҫав путсӗр Ҫеркей йенне кайса ӳкрӗни? Апла пулсан пар йапалусене.

(Пырса хӗрӗнҫен туртса илесшӗн)

**Укҫи:** Йӑван, ҫынтан вӑтан кӑштӑ! хӗрӳн аллинҫен туртса илетӗн.

**Верук:** Памастӑп.Есӗ тӗртмен, есӗ ҫӗлемен кусене.

**Сиктӗрме:** Парӑн (туртса илесшӗн, хӗрӗ йамасӗ).

**Верук:** Памастӑп! вилсен те памастӑп.

**Укҫи:** Йӑван! ан тив! Хӗрне хӗрхен.

**Сиктӗрме:** Манӑн хӗр мар вӑл. Паратни?

**Верук:** Памастӑп (кӗрешеҫҫӗ, амӑшӗ хӗрӗ майлӑ).

## 4 стсенӑ.

(Пуп кӗрет)

Пуп: Мӗн пит кӑшкӑрашатӑр? Урамах илтӗнет. (лешсем ђарӑнаҫҫӗ). Епӗ урампа иртсе кайаттӑм та, сасса илтсен, кама та пулин вӗлермеҫҫӗн тесе кӗрсе пӑхас терӗм.

Сиктӗрме: Килех. Елексантӑр Ҫӗпритуныђ. Ак хӗрӗм йапаласене илсе кайасшӑн, епӗ парасшӑн мар.

Верук: Алексантӑр Ҫӗпритунђӑ, есӗ те пулин ўкӗтлесем аттене.

Пуп: Мӗнле ӗҫпе?

Верук: Атте йапаласене парасшӑн мар.

Пуп: Кађђа мӗншӗн аҫу хушман ҫынна кайрӑн. Тата венђетсӗр пурӑнаттӑр.

Верук: Есӗ те увӑн майлах. Ахађ мар ҫав хаҫат ҫинђе сана атте ушшӑнӗн йатти тенӗ.

Сиктӗрме: Ђарӑн, Верук. Пупа ҫапла калама ҫылӑх.

Верук: Ҫылӑх! Ҫын йапалине туртса илме хӳтлени ҫылӑх мари?

Сиктӗрме: Ђарӑн!

Верук: Ђарӑнмастӑп! Халӗ ҫех пӗлсе ҫитрӗм есӗр мӗнле ҫыннине. Есӗ Ҫеркейе кађђа парап тени те суйа сӑмах пулнӑ мӗн. Есӗр ӑна Ҫеркейе хӑвӑр йенне ҫавӑртарасшӑн ҫех тӑвасшӑн пулнӑ. Анђах епӗ ӑслӑрах пултӑм. Есӗр каланӑ сӑмахӑра малтантарах вырӑна кӳтӗм.

Сиктӗрме: Ђарӑнатни ес?

Пуп: Лӑплан, Йӑван Ваҫиђђӑ.

Сиктӗрме: Хӑваласа кӑларасса кӗтетним?

Верук: Ан хӑра, хӑваламасӑрах кайӑп. (Йапалисене ывӑтса) Ме йапалусене! Тӗп пул вӗсемпе. Тен мана парићђен, сутса укҫине ҫак путсӗре парӑн. (Пуп ҫине кӑтартаť. Амӑшӗ йӗрет).

Укҫи: Мӗн туса хутӑн, хӗрӗм. Пӗтӗм тавраna намӑс турӑн (йӗрет).

Верук: Манра мар, аттере мӗн пур айӑп. Асту, атте, ҫапа пӗлменӗн пуши хӑйне ҫавӑрӑнса тивет тенӗ, ваттисем. Ҫапла ан пултӑр. (Тухса кайаť).

Сиктӗрме: Ех, ўстертӗмӗр хӗре, пуйан ҫӗре парас тесе тӑрӑшрӑм, вӑл ашшӗ ирӗкӗнђен тухса, комуниса кађђа кайрӗ.

Пуп: Ҫитменнине венђетсӗр пурӑнаť.

Сиктӗрме: Венђетсӗр пурӑнни ытла пысӑк синенех марха вӑл, комуниса кайни намӑс, (паусӑ) Ну, ку, Ҫеркейе. Вӗрентӗпха еп ӑна. Мана хирӗҫ пыни, хаҫатра тӑпланнипе тӑранман, тата хӗре илӗртсе кађђа илнӗ...

Пуп: Та! Хаҫат ҫинђе пит вирлӗ ҫырнӑ. Ҫырма та пӗлеҫҫӗ мӗн, шӑпӑрлансем. Мана, мана пупне мӗнне пӑхмасӑр йӑтӑ тенӗ...

Укҫи: Ех, хӗрӗм, Верук.

Сиктӗрме: Ес тата мӗн ӗсӗклесе ларатӑн унта? Пуҫтар йапаласене те ҫуттине илсе кил. Сыпас Алексантӑр Ҫӗпритуныђпа. (Укҫи кӗписене ђиксе тухса кайаť). Епӗ пайан Арлан Хӗветӗрӗпе Киремет Ҫимккине ђӗннӗђӗ.

Пуп: Мӗн ӗҫпе?

Сиктӗрме: Пӗр вӑрттӑн ӗҫпе.

Пуп: Мӗнле ӗҫ апла?

Сиктӗрме: Питӗ шӑршлӑ ӗҫ. Сана та йӑхӑрасшӑнђӗ. Аванха маларах килтӗн. Вӗсем килиђен калаҫса пӑхар,

Пуп: Калаҫӑпӑр ӗҫ пулсан.

## 5 стсенӑ.

(Укҫи суленкке йӑтса кӗрет).

Укҫи: (Лартса) Виҫҫӗ ҫех йулнӑ! Урӑх ҫук.

Сиктӗрме: Йепле ҫук? Ирхине 5 пӑлуштух марђђи?

Укҫи: Ҫимка ес килес умӗн ҫех иккӗшне илсе кайрӗ.

Сиктӗрме: Мӗн тума патӑн ӑва?

Укҫи: Ху каламарӑни Ҫимккана ыйтсан ђарса ан тӑр тесе.

Сиктӗрме: Йурӗ еппин. Есӗ, карђӑк, тухса выђӑхсене майла. Кӗтӳ йађӗ пулас.

Укçи: Капла пĕҫҫенех йепле ĕçлемелле. Тарçă тытан пулĕ.

Сиктĕрме: Кăҫуне тарçăсемпе наҫар ĕçлеме, шалуне те пар, штрахăвкă тӳле вĕсемшĕн. Укçа çитереймĕн. Кайса майла. (укçи кайаҫ). Ларах сĕтĕл хушшине, Елексантăр Çĕпритунҫă. Ҫĕлхе çăмăлтарах калаçтăр тесе пĕр иккĕшне йăвантарар.

Пуп: Турă панă йапаларан тарма йуратмастăп епĕ (ларса) Тултар еппин.

Сиктĕрме: Тав сана.

Пуп: Ĕçех.

Сиктĕрме: Килха, тытха!

Пуп: Ну, пĕрле пурăнмалла пултăр.

Сиктĕрме: Ес каланă пек пултăр ĕнтĕ.

Пуп: Аван йапала. Ну, мĕнле ĕçха сан, Иван Ваçиҫҫă?

Сиктĕрме: Акă мĕн! (шăппăнтарах, калле-малле пăхса) Ман шухăшпа Çеркейрен мĕнле те пулсан хăтăлас пулаҫ. Тата унăн йулташне Така Павăлне те кăшт вĕрентсе илсен пымалла.

Пуп: Иепле хăтăлмалла ха унтан?

Сиктĕрме: Калаха, çынна вĕлерни пит пысăк çылăхи?

Пуп: Мм... Çынна вĕлернии? Мĕнле каламалла. Вăрçăра вĕлереççĕ... Мм..

Сиктĕрме: Калăпăр епĕ те вăрçăра. Хамăн тăшмана вĕлерсен мĕнле пек...

Пуп: (Хăй ăшĕнҫе) Кусенҫен айаккараххăн тăрсан та йурамасти (хытă) Есĕ мĕне тĕртсе калатăн. Леш Çеркейе хупласшăн мари?

Сиктĕрме: Çавна хупласшăн çав. Мĕнле сан шухăшпа.

Пуп: Комуниссем ҫиркĕве хирĕç пыраççĕ. Вĕсене вĕлерсен çылăх пулсан та турă каçарĕ, анҫах ҫейерех пулăр. Никам та ан пĕлтĕр. Тепĕр ҫерккиве тултар та ман кайас.

Сиктĕрме: Ăçта васкан, лешсене кĕтерха. Пĕрле канашлар.

Пуп: Есĕр канашлăр, канашлăр. Ман матăшка сывмар выртаҫ, ҫирлесех ан кайтăр, хăратăп.

Сиктĕрме: Халĕ çех урамра лармасҫи?

Пуп: Мм... Темĕскер сасартăк ҫирлерĕ, хам та пĕлместĕп.

Сиктĕрме: Ҫарса тăмастăп та, анҫах ес ăслăрах çын, çанпа канашласан авантарахҫĕ пек. .

Пуп: Хăвăрах канашлăр. Епĕ пиллетĕп. Канашлăр (ĕçет те кайаҫ).

Стсенă хыçĕнҫе - Укçи: Мĕншĕн сахал лартăн, Елексантăр Çĕпритунҫă?

Пуп: Киле васкатăп. Укçи тăхлаҫă, аҫа ҫирленĕ те. Ҫипер йулăр.

Укçи: Ҫипер кай ĕнтĕ.

## 6 стсенă.

(Укçи кĕрет).

Укçи: Мĕн пит васкаса кайрĕ пуп?

Сиктĕрме: Арăмĕ ҫирлĕ тети, масари?

Укçи: Арăмĕ пайан аванах çӳретҫĕçкеха?

Сиктĕрме: Вĕсене пĕлеймĕн: кунне иккĕвиççĕ ҫирлеççĕ, ҫĕрĕлеççĕ. Майра тени çавă ĕнтĕ.

Укçи: Лашана пăтратса памаллаши, йе кĕтĕве йарсан та йурати?

Сиктĕрме: Пăтратса памалла пулĕ. Çимкка кĕçĕр хулана кайасшăнҫĕ пулас, лаша ыйтаҫҫĕ.

Укçи: Йалта йамшăк çуким? Мĕншĕн йалан хамăр лашана паратăн?

Сиктĕрме: Ес ан ҫĕн. Кунта сан пĕлмесен те йурамалла. Тĕттĕмлевиҫҫен тухса пăтрат лашана.

## 7 стсенă.

(Хĕветĕр кĕрет).

Хĕветĕр: Сывă çӳрети? Манăн килес.

Сиктĕрме: Килех, килех Хĕветĕр. Ирт тĕпелелле.

Хĕветĕр: Епĕр иртĕпĕрçке. Ман сана пĕр хыпар систермелли пурҫĕ те.

Сиктĕрме: Карҫăк, хăйă çутха. Тĕттĕмлене пуçларĕ. (Карҫăкĕ çутаҫ) Лар сĕтел хушшинерех, вулăсран таврăнни нумай пулати?

**Хĕветĕр**: Халĕ çех таврăнтăм.

**Сиктĕрме**: Ываннă çинҫен пĕр иккĕшне йăвантарарха. (Тултарать). Ĕçха.

**Хĕветĕр**: (Ĕçет) Вулăсран пайан совета сан ĕçĕ пирки хут парса йаҫĕç.

**Сиктĕрме**: Карҫăк. есĕ тухса пăтрат лашана. (Укçи кайать). Ну мĕнле хут?

**Хĕветĕр**: Верук йапалисем пирки (вуласа). Вăхăта нумай иртермесĕр, йалсоветне понеттуйсем пухса, Сиктĕрме Йăванĕн хĕрĕн-Вера Ивановнăн йапалисене, Сиктĕрме Йăванĕнҫен илсе хăйне памалла. Ирĕккĕн памасан йапалисене арĕслесе ĕçне сута памалла. Вулĕçтăвком претçетаттĕлĕ Васçили Капиттонăв, çекреттарĕ Хĕрлĕ Елексантăрĕ.

**Сиктĕрме**: Кашкăр Васçили ăçта?

**Хĕветĕр**: Ăна претçетаттĕлтен сирпĕтсе кăларнă. Хулана илсе кайса тĕрмене хупнă, тет. Ун вырăннé Капиттонăв ларнă. Укçа салатнă тет пулас лешĕ.

**Сиктĕрме**: Ех, пĕтрĕ мĕн пур хўтлĕх. Капиттонăв комунис марҫиха çав?

**Хĕветĕр**: Комунис... Çеркей пайан вулăсра. Çавă елекленипе çырнă пулĕ.

**Сиктĕрме**: Ҫимха ку Çеркейе. Кăтартăпăр.

**Хĕветĕр**: Ку сахал. Уйесрен вулăса пирĕн йал советне тепĕр хут суйлама хушнă тенĕ сасă та пур, анҫах Капиттонăв ун çинҫен нимĕн те каламарĕ.

**Сиктĕрме**: Тепĕр хут суйлаймĕççке.

**Хĕветĕр**: Темĕнле. Комуниссем çинерех тăрсан суйлĕç те, пĕлме çук.

**Сиктĕрме**: Мĕн тумалла ĕнтĕ, Хĕветĕр?

**Хĕветĕр**: Нимĕнех те тумалли çук. Ху мĕнле шухăшлан?

**Сиктĕрме**: (Тултарса) Ĕçха тата (леш ĕçет). Манăн йапалисене парас килмест. Йапаласăр пурăнсан, пурăнсан тарса килĕ тетĕп.

**Хĕветĕр**: Кайалла таврăнасса шанҫăк сахал.

**Сиктĕрме**: Понеттуйсемпе килме шухăшлатăни?

**Хĕветĕр**: Ухмах мар пулĕ понеттуйсемпе çыхланса çўреме. Хуҫĕ апат ыйтмастха, вyртĕ шкапра.

**Сиктĕрме**: Ак ку аван. Ĕçха тата.

**Хĕветĕр**: Çитмести. Ўсĕрĕлсе кайăн.

**Сиктĕрме**: Ерехе ўсĕрĕлме ĕçеççĕ пулĕ... Пур ҫухне ĕçерха.

**Хеветĕр**: Вăл çаплаçке (ĕçет) Çимкка килмерĕи? Пайан кунĕ аван. Пĕр каç икĕ ĕç тума пулать. Çĕркейсен вулăсра пуху пулать. Вут кăвар тухсан вăл пухăва пăрахса ҫупса килес çук ĕнтĕ.

**Сиктĕрме**: Темскер нумай тăҫĕ вăл. Тĕттĕм пулсанах килеп терĕ. Те каллех ўсĕр. 2 плаштух ерех илсе кайрĕ тет карҫăкран.

**Хĕветĕр**: Çимкка та çав: ĕçкĕ тесен ĕçе мансах кайать.

**Сиктĕрме**: Епĕ лашана кĕтĕве те йамарăм, кирлĕ пулĕ тесе. Кĕçĕр çанталăк лăпкă, анкартийĕ çех çунса кайĕ.

**Хĕветĕр**: Унăн килĕнҫе кĕлет çукимçак?

**Сиктĕрме**: Çук, мĕнпур тыррине анкартинҫе тытать.

**Хĕветĕр**: Аха.

**Сиктĕрме**: Тырри çунса кайсан пирĕн пата йăлăнма килĕ, вара кăтартăпăр мĕнле пире хирĕç пымаллине.

**Хĕветĕр**: Çав Павăлпа Çеркей пулмасан ыттисем хăрушă мар пире. Çавсем мĕн пур ĕçе пăсса пурнаççĕ.

**Сиктĕрме**: Çеркейĕнҫен хăтăласах пулать, ăна пĕтермесен ĕç пурĕ пĕр naҫар. Хаçат çине çыра çырах вăл темĕн тума пултарать.

**Хĕветĕр**: Хăрушăçке, Иван Васçиҫҫă.

**Сиктĕрме**: Мĕн хăрушши пур. Епĕр хамăр тумастпăрçке, Çимкка тăвать. Вăл пурĕ пĕр пĕтнĕ çын.

**Хĕветĕр**: Йе вăл кайран систерсен?

**Сиктĕрме**: Кам ĕнентĕр ăна? Епĕр тума хушнине, канашланине никам та пĕлмест. Хамăр ухмах пулмасан.

**Хĕветĕр**: Совет акĕнҫĕсем пит ҫейе. Вĕсем çĕр айĕнҫине те шыраса тупĕç. Тупсан сыв пул, темелле пулать вара.

Сиктёрме: Мён малтанах ун çинҫен шухăшламалла; малтан ĕçне тăвас унтан мĕнле хăтăлмаллине пĕлĕпĕрçке.

## 8 стсенă.

(Çимкка кĕрет. Вăл хĕрĕнкĕрех).

**Çимкка:** Охо! Пурте пухăннă!

**Сиктĕрме:** Мĕн кăшкăратăн, йе çынсене илттерес тетĕни?

**Çимкка:** Никам та илтеймĕ, ан хăра. Пит хăравçă çын мĕн ес.

**Сиктĕрме:** Сыхланарах ĕçлес пулаť.

**Çимкка:** Сыхланарах тетĕни? Йураť, йураť... Сыхланарах пулмалла...

**Хĕветĕр:** Ёсе каллех ўсĕр мари, Çимкка?

**Çимкка:** Ўсĕр мар. Виççĕн 2 пăлушгух çех ĕçрĕмĕрха. Унпах ўсĕрĕлмĕн.

**Сиктĕрме:** Вăхăта ахалех иртерес мар, тăвансем. Хăвăртрах канашлар та, ĕçе тытăнар, пайан кунĕ аван. Есĕ мĕнле, Çимкка? Хатĕри ĕçе тума.

**Çимкка:** Тупăшлă пулсан ĕçрен пăрăнаканнийех мар епĕ.

**Сиктĕрме:** Ак мĕнле тăвăпăр.

**Çимкка:** Ҫим, малтан хакне калаçар.

**Сиктĕрме:** Ун çинҫен санпа калаçнăҫĕçке.

**Çимкка:** Çук, есĕ претçетаттĕл умĕнҫе сăмах пар, вара ĕненме те йураť. Малтанах Павăла çунтарнăшăн 50 тенкĕ укçа. Лешне тунăшăн анат касри кил çуртна, унтан хĕрне мана каҫҫа парăн.

**Сиктĕрме:** Йе хĕр сана каймасан?

**Çимкка:** Ку ман ĕç мар. Калаçтар хĕрне, ўкĕтле, вара пырĕ.

**Сиктĕрме:** Пит нумайа хапсăнатăн. Кил çурта панипех çитмелле?

**Хĕветĕр:** Çимкка, сана Верук мар, утайми арăм та каҫҫа пымĕ.

**Çимкка** Çинерех тăрсан пырĕ, ан хăра.

**Сиктĕрме:** Вырăнне мĕн тăраť. Пахҫинҫе улма йăвăççисем.

**Çимкка:** Улма йăвăççин йаҫĕ çех, пилĕк çултан пĕр икĕ пăт улма тăваççĕ те, пахҫа пулаťи вăл.

**Сиктĕрме:** (Шухăшласа) Ну, йурĕ, ес каланă пек пултăр. Хăвăртрах кай та.

## 9 стсенă.

(Укçи кĕрет).

**Укçи:** Лашана пăтратрăм, Йăван. Апатланас теместĕни? Антарса параси

**Сиктĕрме:** Есĕ, карҫăк, тухха пўртрен, пирĕн кунта вăрттăн ĕç пур апатне кайран та çийĕп. Леш пўрте кайса вырт. (Укçи кайаť). Хатĕр пулсан, Çимкка, вăхăта ахалех иртермĕпĕр.

**Çимкка:** Малтан çак хут çине алă пус, претçетатĕл пиҫет пусса парĕ. Ёçĕ тĕплĕрех пулĕ (хутне кăларса хураť).

**Сиктĕрме:** Мĕнле хут ку?

**Çимкка:** Мана анат касри кил çуртна сутнă, укçине пĕтĕмпех илнĕ, тесе.

**Сиктĕрме:** Хутсăр та йурамасťши?

**Çимкка:** Капла шанҫăклăрах пулĕ. Кайран есĕ нимĕн те пĕлместĕн; еп вăл ĕçе пĕлместĕп, тейĕн çех.

**Хĕветĕр:** Çимкка мĕн калаçатăн?

**Çимкка:** Пĕлетĕп еп Йăван Васиҫҫă мĕнле çыннине. Ун сăмахне ĕненсен нумайах пурнаймăн. Вăл çынна çурхи пăрпа лартса йама йуратаť.

**Сиктĕрме:** Йурĕ еппин. Кўр алă пусам. (пусаť).

**Çимкка:** Хĕветĕр, пиҫеҫĕпе шартлаттарха (леш пусаť). Халĕ ĕçе тума та йураť.

**Сиктĕрме:** Лашана йĕвенлесе ампар айне кăкарса хурăпăр. Есĕ тивертсенех, ҫупса кил те, утланса тўрех хулана вĕçтер, асту аслă çулпа ан кай, анкарти урлă тўрĕ çулпа вĕçтере пар.

**Çимкка:** Пĕлетĕп, ан вĕрент.

**Сиктĕрме:** Ес итле, Шартип кĕперри патне çитсен лашуна вăрмана кăкар та, Çеркей килессе кĕтсе тăр. Вуткăвар тухсан, вăл пухăва пăрахса пĕҫенех килĕ.

Ҫимкка: Вӗсем Павӑлпа кайнӑ темерӗҫи?

Хӗветӗр: Павӑлӗ пухӑва йулмаст̆ терӗ. Йађейккӑри ҫекреттарсен пухӑвӗ тет пайан.

Ҫимкка: Е, ӑнлантӑм. Епӗ вӗҫтертӗм! (кайат̆). (Паусӑ).

Сиктӗрме: Ну, мӗн пулса кайӗ ӗнтӗ? Тӑвайӗши ку хӑй ӗҫне, ҫуки?

Хӗветӗр: Ӗҫне тӑвӗ те...

Сиктӗрме: Тата мӗн?

Хӗветӗр: Хӑрушӑ йапала, Йӑван Ваҫиђђӑ. Вут тӗртнине сисеймӗҫ. Лешне сиссен?

Сиктӗрме: (Тултарса) Ме, ӗҫха.

Хӗветӗр: (ӗҫет) Темӗскер, ђӗре сике пуҫларӗ.

Сиктӗрме: (Ђӳређерен пӑхса) Мӗншӗн нумай тӑђӗха ку? Ҫывӑхӗҫке. (тӑрса). Епӗ тухса лашана йӗвенлемха (кайат̆).

Хӗветӗр: (ђӳређерен пӑхса) Ӗлӗк лаша вӑррине ҫӳренӗ ђух пӗртте хӑрамастӑмђӗ, халӗ... (Ӗҫет). Ерех те ҫӗнтерейми пуђђӗ (каллех ӗҫет) ӑш вӗркет. Йе Ҫимкка каласа парсан. Вара... (ђӳређерен вут ҫути ӳкет). Авӑ пуҫланђӗ пулас, те кайас сӳнтерме ӗнтӗ (сасӑсем. Ђан ҫапат̆).

## 10 стсенӑ.

(Сиктӗрме кӗрет)

Сиктӗрме: Ҫунма пуҫларӗ пулас.

Хӗветӗр: Ҫунат̆ пулас. Ман кайас... Сӳнтерме каймасан сисӗҫ тата. (Кайат̆).

## 11 стсенӑ.

(Укҫи кӗрет)

Укҫи: Вуткӑвар тухмани? Ӑҫта? (Ђӳређе патне пырса) ах, турӑҫӑм пӳлӗхҫӗм. Кӳршӗ анкартинђех мари? Йапаласене кӑларас хӑвӑртрах.

Сиктӗрме: Ан кӑшкӑр. Павӑл анкартийӗ ҫунат̆, кунтах ҫитеймӗ. Ҫил ҫук кӗҫӗр.

Укҫи: Кам та пулин тӗртрӗ пулӗ. Ҫӑва тухсан ҫак инкек пурҫке.

## 12 стсенӑ.

(Ҫимкка кӗрет).

Сиктӗрме: Мӗн тума килтӗн тата ес? Вӗҫтер хӑвӑртрах.

Ҫимкка: Еп хатӗрне манса хӑварнӑ. Тата укҫа парха. Хулара кирлӗ пулӗ.

Сиктӗрме: (Укҫа парса) Ме, тыт хӑвӑртрах.

Ҫимкка: кунта 20 тенкӗ анђах.

Сиктӗрме: Ҫитӗ, ыттине кайран парӑп.

Ҫимкка: Йурӗ еппин. Хатӗрлесе парха хӑвӑртрах.

Сиктӗрме: (Пӑшал парса) Ђик хӑвӑртрах кӑсйуна. Лаша хатӗр.

Сасӑ: Кунталла кайрӗ пулас. Сиктӗрме патне кӗнӗ пек туйӑнђӗ. Кӗрес шырас.

Сиктӗрме: Кусем сана шырамаҫҫӗши? Тар хӑвӑртрах (Ҫимкка кайат̆). Ах, ку, Ҫимккана. Хыҫалти хапхаран кӗмеллечӗ ухмахӑн. Вӑл прулукпа ҫаврӑнса килмерӗи, пӗтменскер.

Угҫи: Ку мӗне пӗлтерет, Йӑван?

Сиктӗрме: Кайса вырт. сан ӗҫ ҫук кунта.

Сасӑ: Сиктӗрме патне кӗђӗ.

Сиктӗрме: Пӑлтӑра тухса питӗр. (Паусӑ. Стсенӑ хыҫӗнђе кӑшкӑраҫҫӗ).

Сасӑ: Уҫӑр! Мӗн питӗрӗнсе лараттӑр. Кӳршӗре пушар, питӗрӗнсе лараҫҫӗ. Уҫӑр, ҫынни кунта кӗђӗ.

Укҫи: (Тухса кӗрсе) Мӗн тӑвас ӗнтӗ. Уҫаси Йӑван?

Сиктӗрме: Пӗтрӗмӗр! Ан уҫ.

(Алӑка хытӑрах шаккаҫҫӗ).

Сасă: Алăка çĕмĕрес! Хапхи урлă каçăр.

Сиктĕрме: Мĕн тăвас? (нимĕн тума пĕлмест хăранипе), карђăк, ыйтсан тусан, килте пулман те (ђўређерен сикет).

(Халăх алăка çĕмĕрсе кĕрет).

Халăх: Ăçта вăл? Ăçта пытаннă? Сиктĕрме ăçта? Кала старикку ăçта?

Укçи: Вăл килте çук, тăвансем.

Халăх: Çавах тĕртсе çунтарнă пулĕ. Карташне шырас. Кайар, тăвансем, (пурте тухса кайаççĕ).

Укçи: Пĕтрĕмĕр! Мĕн пулса кайĕ ĕнтĕ капла, мĕн пулĕ. (Вут çулăмĕ сўнет).

(Кăрђăк стсенă çинђе пĕђђенех пулаĭ).

(Халăх кăшкăрни илтĕнет. Хăшĕ карташĕнђе, хăшĕ урамра).

Карташĕнђе: Ăçта тарма? тытăр ăна! илсе кĕрĕр пўрте. Хĕнес? Вут тĕртме тытăннă куштан!

Укçи: Ах, турăçăм - пўлĕхçĕм! Кусем Йăвана тытмани? (Халăх Йăвана пўрте илсе кĕрет).

## 13 стсенă.

(Иван, Павăл, Наçтук, халăх пўрте кĕреççĕ).

Сиктĕрме: Йарăр, тархасшăн, тăвансем. Епĕ вут тĕртмен. Епĕ килтех пулнă, ак карђăкран ыйтăр.

Павăл: Суйаĭ. Айăплă пулмасан мĕншĕн ђўређерен сикетĕн?

Сиктĕрме: Хĕнесрен хăрарăм, тăвансем.

Укçи: Тăвансем, вăл килтен те тухман пайан, тупата туршăн тухман.

Павăл: Суйаĭ, путсĕр.

## 14 стсенă.

(Хĕветĕр кĕрет).

Хĕветĕр: Тăвансем, тăвансем! Мĕн тăватăр. Ан тивĕр Иван Ваçиљђа.

Наçтук: Вут тĕртнĕшĕн тав тумаллаши?

Сиктĕрме: Хĕветĕр! Есĕ те пулин ман хута кĕрсемђĕ. Мана Павăл улăмне вут тĕртнĕ, теççĕ.

Хĕветĕр: Çук, тăвансем .Йăван Ваçиљђă кĕтў йамаранах килте. Хам та ун патĕнђен вут тухсан çех кайрăм.

Павăл: Прулук тăрăх кам ђупса килнĕ тата?

Сиктĕрме: Епĕ ăçтан пĕлем. Ман пата кĕмен вăл.

Наçтук: Йепле кĕмен? хам куртăм. Епĕр Ентĕркапа сирĕн умра лараттăмăр, вăл криљтсаран хыпаланса кĕђĕ.

Павăл: Есĕ камне палларăни?

Наçтук: Çук! палаймарăм.

Павăл: Сухаллăђи?

Наçтук: Сухалсăр пулас.

Павăл: апла пулсан мĕн палкатăн тата? Кайар пулĕ, йулташсем. Кам та пулин урăххи пулĕ Аванха кĕлете тивмен, улăм çех çунса кайрĕ

Наçтук: Ентĕ кка! (ун патне пырса) аĭа, кайар.

Халăх: Кайар, кайар!

(Тухма тытăнсанах урамра сасă илтĕнет)

Павăл: Ку мĕн шавлаççĕ?

Çеркей сасси: Тытăр ăна. Сиктĕрме патне кĕрет. Тытăр!

Наçтук: Çеркей сасси. Вăрă тытмани? (Тухса кайаĭ).

Павăл: Хăвăртрах урама, тăвансем! Хăвăртрах! (кайаççĕ)

Сиктĕрме: Çимккана хăваламаççĕи кусем?

Хĕветĕр: Апла пулсан пĕтрĕмĕр вара!

(Стсенă çине виççĕн çех йулаççĕ: Сиктĕрме, Хĕветĕр, Укçи)

Çеркей сасси: Ђарăн! Пурĕпĕр тараймăн.

Çимкка сасси: Аха! Ес мана тытмаи? Еп сана! (пăшал перет).

Çеркей сасси: Ай!

Наçтук сасси: Вĕлерђĕ! Çеркейе вĕлерђĕ!

**Халăх:** Тытăр ăна! Тытăр!
(Кăшкăрашаççĕ, Çимкка пӳрте кĕрсе ӳкет. Ун хыççăн кĕрсе ăна тытаççĕ. Сыхăççĕ).

## 15 стсенă.

**Халăх:** Çыхăр ăна. Ан вĕçерĕр.
**Çимкка:** Ак çаксене те манпа пĕрлех çыхăр. (картинă).

*Ҁаршав.*

# IV акт.

(2-мĕш актри текоратси. 2 уйăх иртсен).
(Ҁаршав уçăлнă ҁух стсенă çинҁе Йуркка çăпата туса ларать).

## I стсенă.

(Верук кĕрет)

**Верук:** Пайатам, ĕнене кĕтĕве йарсан йурамасĭши?
**Йуркка:** Килте те пырĕха. Сĕлĕ улăмĕ пар та, йурĕ.
**Верук:** Йурĕ еппин. Анкартинҁен йатса килем.
**Йуркка:** Аслăк çинҁен çех антар, мĕн анкартине çӳремелле.
**Верук:** Çеркей мĕн пит нумай тăҁĕ кантурта.
**Йуркка:** Вĕсен малтан вулăсра уйав пулать тет, унтан пирĕн йала, пирĕн йалтан Тăм кассине каймалла, тет.
**Верук:** Тен килеççĕ те пулĕ. Хăвăртрах тухса ĕнене апат парам еппин. (кайать).
**Йуркка:** (Пĕҁҁен) Тĕлĕнетĕп ку кинрен. Ытла та уçă кăмăллăскер. Сиктĕрме тавращĕ те темĕн.

## 2 стсенă.

(Павăл кĕрет).

**Павăл:** Пӳртре кам та пулин пури? Е, Йеххĕм пиҁҁе те таврăннă мари?
**Йуркка:** Таврăнтăм, Павăл, таврăнтăм, тав турра.
**Павăл:** (алă парса) Сывă çӳретни?
**Йуркка:** Çӳретпĕр майĕпе! Хăвăр мĕнле?
**Павăл:** Пит аван, Йеххĕм пиҁҁе. Хăçан таврăнтăн Хусантан?
**Йеххĕм:** Ĕнер каç çех таврăнтăм.
**Павăл:** Ну, куç мĕнле? Тӳрлетрĕçи?
**Йеххĕм:** Халĕ лайăх кураççĕтеха, малашне мĕн пулĕ. Траххумран пулнă теççĕ тухтăрсем. Малтантарах тӳрлетнĕ пулсан, сыватмах пулатҁĕ теççĕ, халĕ лайăх куракан пулсан та çитĕ, терĕç.
**Павăл:** Çавă çав пирĕн ҁăвашăн. Куçĕ ыратать, курайми пулать, вăл тухтăра кăтартас вырăнне йумăçсем тăрăх çӳрет, куç ӳкнĕ пулĕ тет йе...
**Йеххĕм:** Манăн çамрăк ҁухне куç пăсăлманҁĕ те, ватăлсан таçтан масартан çав траххум тейекенни çыпăçнă.
**Павăл:** Ҁăваш хушшинҁе вăл ҁир килĕренех, ăна çаклатасси ансатçке. Ес мĕн уйав кунĕ çăпата туса ларан пӳртре.
**Йеххĕм:** Кинĕм çăпати çĕтĕлнĕ те туса парас терĕм. Çеркейĕн ку ĕçпе аппаланма вăхăҁĕ çук пулас. Старшина пулнă теççĕ.
**Павăл:** Старшина мар, вулĕçтăвкомăн претçетаттĕллĕ.
**Йеххĕм:** Еп йатсене пĕлсех çитерейместĕп. Манăн пулсан вулăсра старшина, йалта — староста. Авă Хусанта Пелепей ҁăвашĕ куçпа выртрĕ. Çав каласа парать: Епĕр суйласа туса вăхăта иртерместĕмĕрҁĕ, тет. Хĕрлисем килсен старастана претçетаттĕл тăваттăмăр, шуррисем килсен претçетаттĕле стараста тăваттăмăр, тет.
**Павăл:** Унта ҁăнах та суйласа ĕлкĕрме те хĕн пулнă ĕнтĕ. Пайан шуррисем, ыран хĕрлисем, виç-тăват кунтан каллех шуррисем.

**Йеххӗм**: Есӗр те кунта шуррисене ӑсатнӑ иккен. Сиктӗрме таврашне тӗрмене хупнӑ темести?

**Павӑл**: Сирпӗтрӗмӗр ҫав, пит алхасса кайрӗҫ. Леш Йӑванӗ Ҫимккана ман анкартӗнҫи кӗлете вут тӗртме тытнӑ, тата Ҫеркейе те вӗлерессӗн пулнӑ.

**Йеххӗм**: Ҫимкка пӗтнӗ ҫынҫӗ ӗнтӗ...

**Павӑл**: Ҫимккинҫен ытла Йӑванӗ айӑплӑ. Ҫавӑ вӗсен пуҫлӑхӗ пулнӑ.

**Йеххӗм**: Мӗн ҫитмен пулнӑ ҫав Йӑван хӑтана? шыв арманӗ пур, икӗ килҫурт, лавкӑ.

**Павӑл**: Пуйан тӑрана пӗлмест ҫав.

**Йеххӗм**: Минҫе ҫула хупнӑха вӗсене?

**Павӑл**: Йӑвана 8 ҫула хупнӑ, Ҫимккана 5 ҫула, Хӗветӗрпе Каҫака Куҫмине виҫшер ҫула.

**Йеххӗм**: Хӗветӗре те хупмалла туни?

## 3 стсенӑ.

(Пуп кӗрет).

**Пуп**: (Кӗрсенех сӑхсӑхаҫ) Аван пурӑнаҫи? Ҫипер ҫӳретӗни, Павӑл Икнатйӗвиҫ. Есӗ мӗнле, Йеххӗм пиҫҫе? Ес килнине илтрӗм те килсе курас терӗм.

**Йеххӗм**: Ҫӳретпӗрха йерипе, Елексантӑр Ҫӗпритунҫӑ. Ху мӗнле пурнатӑн?

**Пуп**: Пирӗн пурӑннипе пурӑнманнин уйрӑмӗ ҫук пулас. Пурнӑҫа хӳринҫен тытса ҫапкаланса ҫӳретпӗр ҫав.

**Павӑл**: Сиктӗрмене хупнӑранпа пурӑнӑҫсем наҫарланҫӗҫи мӗн?

**Пуп**: Ех, ан асӑнха ҫав путсӗре, Павӑр Икнатҫӑ. Ун пек ҫынран усӑ курасси пулаймӗ ӗнтӗ. Усал ҫынҫӗ.

**Павӑл**: Пит туслӑ пурӑнаттӑрҫӗҫке, мӗншӗн халӗ вӑрҫатӑнха ес ӑна?

**Пуп**: Ан калаҫ. Еп Иван Ваҫилҫҫа йуратмастӑп. Вӑл кивӗ ҫиркӳ майлӑҫӗ, епӗ ҫӗнӗ ҫиркӳ йенҫеҫӗ.

**Павӑл**: Ҫавӑншӑн ҫехи? Сахал.

**Пуп**: Ну, сан, Йеххӗм пиҫҫе, куҫ тӳрленҫӗи?

**Йеххӗм**: Аван кураҫ ӗнтӗ.

**Пуп**: Тав турра.

**Павӑл**: Тухтӑра тав пулӗ, Алексантӑр Ҫӗпритунҫӑ.

**Пуп**: Тухтӑра панӑшӑн та турра тав тӑвас пулаҫ ӗнтӗ. Ну, манӑн кайас пулӗ. Вӑхӑт пулсан пырса лар, Йеххӗм пиҫҫе, пылпа ҫей ӗҫме. Ман кӑҫал пыл пит аван пулҫӗ.

**Йеххӗм**: Ҫӑвӗ хуртсене ӑнаҫлӑ пулҫӗ кӑҫал.

**Пуп**: (алӑ парса) Ҫипер йул, Йеххӗм пиҫҫе. (Павӑла) Есӗ кайатни? Ман санпа калаҫмалли пурҫӗ те.

**Павӑл**: Пайан уйав, ӗҫ пулсан ыран тӑвӑпӑр. Еп Ҫеркейе кӗтетӗпха.

**Пуп**: Е, ҫӑнах та пайан Йупа уйавӗ мӗн, еп ас та туман. Мӗншӗн урамра халӑх нумай тетӗп.

**Павӑл**: Есӗ пирӗн уйавсене пит астусах каҫмастӑн пулӗ? Сирӗн хӑвӑрӑн ҫителӗклӗ.

**Пуп**: Пурне те ӑҫтан астӑван ӗнтӗ. Сыв пулӑр, тӑвансем! (кайаҫ).

**Павӑл**: Ӗлӗк Сиктӗрме Йӑванӗ патне ҫех ҫӳретҫӗ, халӗ кунсерен тенӗ пек ман пата ҫӳрет. Сирӗн пата та ҫӳре пуҫланӑ мӗн. Ех, ку пуп тени пит ҫейе халӑх...

**Йеххӗм**: Ҫейе пулмасан ҫынна йепле улталӑн.

## 4 стсенӑ.

(Наҫтук кӗрет)

**Наҫтук**: Ес мӗн кунта ларатӑн, Павӑл. Мӗн пур халӑх урамра, есӗ пӳртре пӑхса ларатӑн. Хӑтасен пӳрҫӗ умӗнҫе аҫа пӑҫа туллийех, йут йалтан та килнӗ.

**Йеххӗм**: Хӑтасен пӳрҫӗ умне мӗн тума пуҫтарӑннӑ тата?

**Павăл:** Халĕ унта шкул ĕнтĕ, Йеххĕм пиҫе. Сут Сиктĕрме ҫуртне конфискатсилесе пире шкул уҫма паҫĕ.

**Наҫтук:** Аҫа хăвăртрах урама, Павăл!

**Павăл:** Ех, ку претҫетаттĕл пурăнăҫĕ. Уйав кунĕнҫе те канлĕх ҫук. Аҫа еппин, Наҫтук.

**Йеххĕм:** Наҫтук! Ҫеркей килет пулĕ, сăмавар лартса йар.

**Наҫтук:** Хаҫ кам сăмаварпа аппаланаҫ. Пит ĕҫĕсех тесен инке лартса парĕ. Кайар, Павăл. (кайаҫҫĕ).

## 5 стсенă.

**Верук:** (вĕсене хирĕҫ кĕрет) Мĕн пит сахал лартăн, Павăл пиҫе?

**Павăл:** Ак Наҫтук хăвалаҫ, кайар та кайар урама, тет.

**Наҫтук:** Есĕ те аҫа, инке.

**Верук:** Кайăрах ĕнтĕ. Епĕ кайарахпа пырăп. (лешсем кайаҫҫĕ).

**Йеххĕм:** Есĕ, кин, сăмавар лартса йамастăни? Ҫеркей килсен ĕҫес тейĕ.

**Верук:** Килсен те ҫей ĕҫсех тăмасҫ пулĕ. (Урамра аҫасем йурлани илтĕнет «Вихри враждебные» йе урăххи).

**Верук:** (Ҫӳреҫе патне пырса) Ах, турă! Мĕн ҫухлĕ аҫа. Салтаксем пек утса пыраҫҫĕ. Тăм кассинҫен те килнĕ пулас. Йалавĕ, йалавĕ! Хĕп-хĕрлĕ. Пăйатам пăх-халĕ.

**Йеххĕм:** (Пырса) Аппааай! Ăҫтан пухăннă кун ҫухлĕ аҫапăҫа. Шак тата ваккисем!

**Верук:** Шултăрарахсем уйрăм ушкăнпа кусем пионер пеккисем.

**Йеххĕм:** Ку кам килет, тăхлаҫă мари?

**Верук:** Ăҫта?

**Йеххĕм:** Авă, ҫиркӳ умĕнҫен иртрĕ.

**Верук:** Есĕ манран та лайăх куракан пулнă, пăйатам. Епĕ тин палларăм, ҫăнах та анне мĕн.

**Йеххĕм:** (Вырăнне ларса) Вăл йепле пурăнаҫ тата? Кам патĕнҫе?

**Верук:** Прухха тетесем патĕнҫе те, лешсем пит хирĕҫ ҫынсем.

**Йеххĕм:** Пирĕн пата куҫмалла пурăнма. Прухха ҫемйе пысăк, хĕсĕк пулĕ.

**Верук:** Ҫеркей ҫĕнкелесе те пăхрĕ те, кунта куҫасшăнах мар пек калаҫаҫĕ.

**Йеххĕм:** Йут ҫынсем марҫке...

**Верук:** Вăл ҫапла таха...

## 6 стсенă.

*(Укҫи кĕрет)*

**Укҫи:** Пирĕн килес тата!

**Йеххĕм:** Килех, килех, тăхлаҫă. Аван ҫӳретĕни?

**Верук:** Ирт тĕпелерех, анне.

**Укҫи:** Мана кунта та пырĕ (Йеххĕм ҫумне алăк патне лараҫ) Ну, есĕ мĕнле пурăнатăн, Йеххĕм хăта? Куҫ тӳрленҫĕи?

**Йеххĕм:** Аван тӳрлетсе йаҫĕҫ, тăхлаҫă.

**Верук:** Вăл, анне, манран та лайăх кураҫ халĕ. Сана ҫиркӳ патĕнҫенех палларĕ.

**Иеххĕм:** Халĕ урам урлă ҫынна паллакан пултăм ĕнтĕ. Йĕлĕк пӳргрине те паллаймастăмҫĕ. Кинĕм, сăмавар ларт. Тăхлаҫа ĕҫтерес.

**Укҫи:** Ан ҫăрманăр Халĕ ҫех апат туса тухрăм.

**Йеххĕм:** Есĕ тăхлаҫă мĕн Прухха патĕнҫе пурăнатăн? Пирĕн пата куҫ. Ҫемйе пирĕн пысăк мар, пӳрт пысăк. Шăкăлтатса ҫех пурнăпăр.

**Укҫи:** Епĕ пĕр кунах куҫма шухăшланăҫĕ те, сансăр пуҫне аван мар терĕм.

**Йеххĕм:** Мĕн мана пăхмалла! Куҫмаллаҫĕ.

**Укҫи:** Аван марҫке...

Йеххӗм: Куҫах, тӑхлаҙӑ. Хӗрӗнтен сивӗнсе пурӑнни аван мар. Ҫеркей те вулӑсра пурӑнаҭ, ернере пӗрре ҫех килкелет. Наҫтука каҙҙа парсан кинпе ҫех тӑрса йулатпӑр.

Укҫи: Наҫтука Павӑл ҫӳрет тенине илтнӗҙӗ, ҙӑнахи вӑл?

Йеххӗм: Ҫапла каларӗҫ те. Хӑй кайас тесен ҙарса тӑмӑпӑр.

Укҫи: Павӑлӑн та арӑм вилсе кайре. Икӗ аҙъ йулнӑ темеҫҫи?

Верук: Аҙисем пӗҙӗкҫӗ марҫке.

## 7 стсенӑ.

(Ҫеркей кӗрет).

Верук: Акӑ Ҫеркей те ҫитрӗ.

Ҫеркей: Е, хуҙакам та килнӗ мӗн. (алӑ парса) Сыв пурнатни?

Укҫи: Пирӗн пурӑнни ӗнтӗ...

Ҫеркей: Верук, сӑмавар лартмаллаҙӗ...

Верук: Анне халӗ ҫех килсеҙҙӗ те, ес пушанарахпа лартӑп тенӗҙӗ.

Ҫеркей: Пайан ман пушанасси айакраха. Миттинка иртермелле пулӗ. Ой, калама та ҫук шӑрӑх. Пиншака хывса пӑрахас пулӗ (хываҭ). Ну. хуҙакам, Пруххапа мӗнле пурӑнаттӑр. Харкашма тытӑннӑ тени илтӗнет.

Укҫи: Аванах пурнаймастпӑр ҫав, кӗрӳ.

Верук: Анне, куҫ пирӗн пата пурӑнма.

Ҫеркей: Ҙӑнах та, мӗн харкашса пурӑнатӑн унта. Ак аттепе шӑкӑлтатса калаҫса ҫех пурӑнӑр. Куҫӗ наҙарлансан ҫавӑтса ҫӳрӗн ӑна.

Йеххӗм: Ман куҫсем тасах халӗ.

Ҫеркей: Пӗтӗмпех тӳрлетмесӗр килнӗ есӗ те. Тата пӗр уйӑх выртмаллаҙӗ,

Йеххӗм: Выртма пит киҙем. Тата сан ҫыруна илҫен хӑраса ӳкрӗм.

Ҫеркей: Ну, мӗнле, хуҙакам, куҫатни?

Укҫи: Темӗн тӑвас ӗнтӗ. Аван та мар та...

Ҫеркей: Кӗрӳ патӗнҙе пурӑнни лайӑх мари?

Йеххӗм: Куҫ, тӑхлаҙӑ. Еп сана ҫӑпата туса парӑп, есӗ кӗпе сапласа парӑн мана.

Верук: Кӗпине хам та саплӑпҫке.

Йеххӗм: Санӑн Ҫеркей пур. ӑна пӑхмалла. Наҫтук каҙа кайсан кинӗме ҙӑрмантараҭҙен.

Укҫи: Куҫас пулӗ еппин.

Верук: Ҙӑнах куҫатни, анне?

Укҫи: (йӗрсе) Сиртен пуҫне кам патне каймалла ман.

Верук: Ан йӗр, анне. Аван пурӑнӑпӑр.

Укҫи: Савӑннипе йӗретӗпҫке, хӗрӗм.

## 8 стсенӑ.

(Наҫтук кӗрет)

Наҫтук: Ҫитрӗним, Ҫеркей? Мӗншӗн пит вумай тӑтӑн? Халӑх сире кӗте кӗте ывӑнҙӗ пайан. Иртеннех кӗтеҫҫӗ. Е, тӑхлаҙӑ та кунтаи?

Верук: Хӗрсем, анне пирӗн пата куҫаҭ ӗнтӗ.

Наҫтук: Тахҫанах ҫапла кирлӗ...

Укҫи: Есӗ каҙҙа кайсан аҫуна пӑхакан никам ҫук, терӗм.

Наҫтук: Ҫав каҙҙа кайассипе ӑнтан кайнӑ ӗнтӗ епӗ. Ентӗркка та илесшӗн, анҙах вӑл комунис мар. Те Павӑлах кайас ӗнтӗ, ҫавӑ арӑмӗ вилнӗренпе кашни кун аптӑратаҭ ӗнтӗ, каҙҙа пыр та каҙҙа пыр, тет.

Ҫеркей: Кама йуратарах паратӑн ҫавна кай.

Наҫтук: Еп пурне те йурататӑп. Мана ҫынни уксах, хӑрах куҫлӑ ан пултӑр. Вара йураҭ.

## 9 стсенӑ.

(Павӑл кӗрет)

Павӑл: Ҫеркей, аҭа хӑвӑртрах урама. Халӑх кӗтет митинка хӑвӑртрах иртерес те... Пайан ҙупа ҙупа хырӑм выҫрӗ.

Настук: Павăл пиҫҫе, ес мана каҫҫа илесшĕнҫĕн сак?
Павăл: (вăтанса) Настук, ан калаç, çынран аван мар.
Настук: Мĕн аван марри унта. Пирĕн пайан кил йышĕ хушăнҫĕ, мана вырăн çук, çавăнпа сана каҫҫа пыратăп.
Павăл: Çавăншăн çехп? Йĕ йуратмастăн пулсассăн?
Настук: Пурăнсан, пурăнсан йуратăпха. Санăн аҫусем аван, вĕсене пит йуратататăп.
Павăл: Ун çинҫен кайран калаçăпăр. Кайар пулĕ, Çеркей.
Çеркей: Верук, есĕ пыратни?
Верук: Сиртен йулмăп ĕнтĕ.
Павăл: Ну, арăм, кайар еппин.
Настук: Кайар, савнă упăшкам. (пурте кайаççĕ).
Йеххĕм: Тĕлĕнетĕп ку Настукран. Те пĕр ăслă йапала, те кăмăлĕ çавăн пек. Халĕ комсомола çырăннă, тет тата.
Укçи: Ан тив ĕнтĕ, хăта. Пурăнҫҫĕр хăйсем пĕлнĕ пек. Саман урăх тĕнҫе тĕпĕ йĕрĕпех улшăнса кайрĕ. (урамра йурлаççĕ).
(Укçипе Йеххĕм икĕ ҫӳреҫерен урамалла пăхаççĕ)
Йеххĕм: Ах, турă, мĕн ҫухлĕ халăх. Ватти--çамрăккисем пурте урама тухнă пулĕ. Епĕр çех пӳрте тăрса йултăмăр пулĕ.
Укçи: Пире ҫӳреҫерен пăхса тăрсан та йурĕ ват çынсене.
Йеххĕм: Авал уҫука çапла халăх нумай пухăнаҭҫĕ.
Укçи: Халĕ ҫӳк тума пăрахрĕç ĕнтĕ.
Йеххĕм: Пелепей таврашĕнҫе халĕ те ҫӳксем тукалаççĕ, тет.
(Урра кăшкăраççĕ).
Укçи: Ку крыҭтса çине кĕрӳ улăхрĕ пулас.
Йеххĕм: Çавă. Каласшăн пулĕ.
Çеркей: Пайанхи уйав--ҫăваш ĕçхалăхĕн уйавĕ. Совет республĕкĕ авалтанпа тĕттĕмре, авалтанпа патшапа ун тарçисен аллинҫе хăйĕн хĕрлĕ йунне йухтарса асаплапса пурăннă мĕскĕн ҫăваш халăхне, ирĕк панă, йулташсем.
Авал паттăр пурăннă пăлхар йăхĕ--хаҭхи ҫăваш темиçе хутҫен хăй вăйне палăртса ирĕке хăй аллине илме тапратнă, анҫах патша тарçисем вĕсене хĕне хĕне пусарнă. Ҫăваш халăхĕ патша тарçисен аллинҫе тар йухтарса ҫура вырăнҫе ĕçлесе пурăннă.
Хăй ирĕкĕ çинҫен вăрттăн çех шухăшлама пултарнă.
1905-мĕш çулта Раççейри вăйлă революцисин хумĕ ҫăваш халăхне те хумхатрĕ, анҫах патша вăйĕ вăл хума лăплантарҫĕ, тăвансем.
Революци паттăрсене хăшне çакса вĕлерҫĕ, хăшне Çĕпĕр çĕрне айакка каттăркăна ăсатрĕ, нумайĕшне тимĕр тăлăпа çыхса ĕмĕрлĕхе хупса хуҫĕ тĕрмене.
Февраҭ уйăхĕнҫи революци патшапа ун йăхне трон çинҫен сирпĕтрĕ, анҫах ун вырăнне улпутсемпе пуйансем йăшăннă пирки, Раççей ҫухăн халăхне нумай кĕтнĕ ирĕкĕн сăнне анҫах кăтартрĕ.
Вăхăт çитрĕ! Комуниссен парттийĕ улпутсене сирпĕтсе ĕçхалăхне, хресҫене патшалăхăн влаçне хăй аллине тыттарҫĕ. Раççейри вакхалăхсене республĕксем, оплăçсем тума текрет кăларҫĕ. Пирĕн ҫăваш халăхĕ те Ахтономиллĕ Оплăç турĕ. 5 çул хушши ҫăваш ĕçхалăхĕ хăй ĕçне хăй туса, хăй сийенне хăй сиссе, паттăрлăхне палăртса, хавасланса пурăнаҭ. Пайан тепĕр савăнăç: оплăç вырăнне республĕк.
Йулташсем! Сыв пултăр вакхалăхсен хӳтлĕхĕ--Совет республĕкĕсен Сойуçĕ; унăн ҫĕри, ҫун хавалĕ - комуниссен парттийĕ! Сыв пултăр ҫăваш çамрăк республĕкĕ! Урра!
Халăх сасси: Урра! Урра! Урра!
(Интернатсионал йурлани илтĕнет, ҫӳреҫе умĕнҫен хĕрлĕ йалавсем иртни курăнаҭ, çынсем иртни курăнмасҭ. Интернатсионал ҫаршав хупăниҫенех).
Йеххĕм: Астуха, астуха, тăхлаҫă. Аҫасем, аҫасем, мĕн хăтланаççĕ, салтак пек утса пыраççĕ. Хăйсем шăрҫăк пек çех, çапах çăварĕсене хапха пек карса йурлаççĕ.

*(Ҫаршав йерипен хупăнат.)*

И. С. Макçимăв — Кошкĕнски.

# ПРОЛОК.

Вăрман пайан иртнĕ кунсенхинчен кĕретех лайăх та, илемлĕн курăнса ларать. Йăвăç çулçисем пурте пĕр харăсăн пайан ир анчах сарăлса тухнă пек туйăнать. Пурте вĕсем çăка-йуман тăррисенчен вăрттăн йăпшăнса пăхакан ирхи хĕвел çуттипе йăлтăрка симĕсĕн çутăлса ларaççĕ. Хăйсем йепле савăннине пĕтĕм таврана пĕлтересшĕн пулса, уçă-ăшă çилпе шăппăн пăшăлтатаççĕ. Уçă-ăшă çилĕ вара йăвăç хушшисемпе çул çўреме кайать те, сĕткен кăларса лаpакан тункатасем урлă, тата тĕслĕрен йăвăç турачĕсем виттĕр таçти уçланка та çитсе çапăнать. Уçланкăсенче çамрăк тĕмĕсемпе вĕтĕ хунавсем виттĕр çĕрелле, чечексемпе йешĕл курăк хушшине анать те, пурне те йăвăç çулçисем мĕн калама хушнине кала-кала кăтартать.

Вăл каларĕ:

— Ей, есĕр те, хитре чечексем, чисрах савăнма тытăнăр! Есĕр те тата, йешĕл-симĕс курăксем, ирхи сывлăм шывĕпе шыва кĕрсе часрах çутăлса ларăр! терĕ.

Çил сăмаххисене пĕтĕм вăрман илтерĕ.

Пур çĕрте те, пур уçланкăсенче те чечексем кăвак. сарă кĕписене сарса йачĕç те, хăйсем капăррипе, хăйсем илемлипе ыттисем умĕнче мухтанма тытăнчĕç.

— Тăхтăрха пăртак мухтанмашкăн! Малтан пирĕн çинелле çаврăнса пăхăр! терĕç те йешĕл-симĕс курăксем, çавăнтах ыттисем умне хăйсен йăлтăр та йалтăр, ахах пĕрчиллĕ, çап çутă кĕмĕл шăрçаллă пĕркенчĕкĕсене пĕтĕм уçланкипех, пĕтĕм вăрманĕпех сарса хучĕç.

— Кук-кук!.. Кук- кук! тет те куккукĕ, никамран та хăраман паттăр пек, хулăм сассипе пĕтĕм шăп ларакан ирхи вăрмана çўçентерсе илет.

— Ахăр, пирĕн куккук пичче çурхи илемпе пĕр хăй анчах савăнасшăн курăнать, теççĕ хитре чечексемпе йешĕл çутă курăксем.

— Çук, куккук тус! Сассуна ытлах ан хулăмлат. Есĕ анчах мар, епĕр те савăнатпăр, терĕç те вĕт кайăксем, вăрманĕпех йурлама тапратрĕç.

Кайăксемпе пĕрле вăрман хăй те çурхи йурра йачĕ

Ылтăн куçлă хĕвелĕ, вăрман тăрнелле чылай хăпарса çитсен, тăрук вăрман ăшне пăхса илчĕ те, çуттисем унăн йăвăç хушшисемпе ташлама пуçларĕç...

Çак илемлĕ çурхи вăхăт сехетĕнче, çак епĕ асăннă вăрман варрипе, нимĕç вăрçи тухиччен пĕр çирĕм çул малтан, пĕр çамрăк чăваш арăмĕ утса пырачĕ. Хăй вăл, йут йалти тăван-пĕлĕшĕсем патне çимĕке кайма тухнăскер, лайăххрах та, капăртарах тумланнă. Кĕпи унăн—хĕрлĕпе хурарах кăвак çиплрен килте тĕртсе тунăскер. Шупăрĕ—качча тухнă чухне тĕксĕмрех, йăрăмйăрăмлă кăвак пасар пирĕнчен çĕлетнĕскер. Пиçиххийĕ вăрăм, сарлака, кĕрен тĕслĕ. Сурпанĕпе пуç тутрийĕ вĕрçĕн, пит илемлĕ тĕрĕллĕскерсем... Утать-утать çав арăм, анчах, темшĕн, ăна хăй утти пĕртте ўсĕнсе пынăн туйăнмасть. Пĕр чан сасси анчах инçетрен кĕвĕллĕн йанраса пыни илтĕнет те, арăма хĕпĕртеттерсе йарать. Арăм вара вăрман çулĕпе татах утать, утать .. малаллах утать.

Вăрмантан тухасси нумай та йулман чух, çамрăк арăм сасартăк ăшĕнче темскер ыраттара пуçланине сисрĕ.

Хăй те сасартăках хăраса ўкрĕ.

— Ах, ма тухрăмши пĕрех хут? Тем, патне çитетĕп пулĕ, терĕ те вăл, çавăнтах хăйне ашшĕ йепле ирĕксĕр качча панине, малтанхи çулах упăшкипе йепле харкашса пурăннине, малтанхи ачине, Наçтукне, йепле хĕн-асаплă çуратнине, тата ыттине те... ыттине те аса илчĕ.

Тепӗр уçланкă урлă çеç каçмалла. Вара уйа тухнăпа пӗрех. Анҫах арăм аран ута пуçларӗ. Ăшӗнҫе вӗçӗмрен вӗçӗм ыраттармă тытăнҫӗ. Утнă ҫух пӗшкӗнтерсех антарат. Арăм, тӳсейменнипе, пилӗкӗнҫи кӗрен çăм пиçих-хине те салтса йаҫӗ. Тарăхнипе, макăрса йарас патнех çитрӗ. Упăшкине те вăл, кутăн та усалскерне, вăрçтарма та тарăхтарма анҫах йуратаканскерне, хăй ăшӗнҫе вăрçса-йатласа илҫӗ. Хурланнипе çапла каларӗ:

— Ех, мур арçынӗсем! Ним те пӗлмеççӗ вӗсем... Пирӗннех, хӗрарăм-сеннех ҫăтмалла. Мӗншӗн еиеммине те пӗрне асаплантармалла, теприне кулмалла туса йанăши? терӗ.

Хăй тӗллӗн туллашса ҫипер утса пынă çӗртех, арăм пит асаплăн, пит хурлăхлăн çӗреллех пӗшкӗнсе ана пуçларӗ.

— Ай!.. Ай! тесе йăнăшса илҫӗ. Хăрах аллипе çăварне тытса хуллен, ытлах инçете илтӗнмелле мар çухăрма тытăнҫӗ.

Арăм тӳсеймерӗ. Çул хӗрӗнҫи тӗмсем хушшине кайса ӳкрӗ те, вăл мӗнле асапланнине, вăл мӗн тувине пӗр çутă хӗвелпе ним хуйхăсăр вӗçсе çӳре-кен кайăк-кӗшӗксем анҫах курҫӗç...

---

Çутă тӗнҫере Тимуш çуралҫӗ.

Амăшӗ ăна шупăрпа ҫӗркерӗ те, йӗрпи тавралла çаврăнса пăхрӗ... Çын таврашӗ никам та çук! Пӗр çурхи вăрман илемӗ кăна куçа илӗртет. Темле, çӳлелле, кăвак пӗлӗт çиве пăхсан çеç, Тимуш амăшӗ çакна асăрхарӗ: хӗвел пӗрре тӗксӗм çутă пӗлӗт татăкӗ айнелле кӗрет те, пӗлӗт татăкне хура сăн çапат. Унтан, хӗвел пӗлӗт айӗнҫен тухат те, тепӗртек тăрсан, каллех пӗлӗт айне кӗрет. Çавăн пек темиçе хут та пулҫӗ.

Хӗвел апла выҫани Тимуш амăшне лайăх мар пек туйăнҫӗ. Вăйран кайнăскер, ытти çинҫен пӗтӗмпех маннă пек пулат те, хӗвел çине пăхса шухăша кайат.

— Те телейлӗ сехет тăлне пулҫӗ, те телейсӗр... Çапах та, хӗвел нумай пытанмарӗха, кунӗ лайăх, вăрманӗ илемлӗ, аҫи те канлӗ, ҫипер пек, терӗ вăл аҫи çинелле пăхса.

Пӗр куккукӗ анҫах хăйӗн ытăнкăллă сассипе:

— Телейсӗр!.. Телейсӗр! тесе килӗшӳсӗр авăтса илет.

Кайăк-кӗшӗксем унга-кунтах:

— Телейлӗ! Телейлӗ! тесе ҫӗвӗлтетсе илеççӗ.

Тимуш амăшӗ пӗтӗм вăйне пухса Тимуша алла тытрӗ те, вăрман çулӗпе малаллах уттарҫӗ.

Хӗвел çутти шупăрпа ҫӗркенӗ Тимуш питне пӗр тӗлтен вăрттăн та пулин ҫуп туса йулҫӗ.

Хитре ҫеҫексемпе йешӗл çутă курăксем, тата йăлтăрка симӗс йăвăç çулçисем те Тимуша хăйсен çуркуннехи тутлă шăршипе çемçен аҫашласа йаҫӗç.

Ăна пӗтӗм вăрман пиллесе йаҫӗ.

— Кун-çулу савăн вăрăм пултăр! Пурнăç çулӗ çине паттăрăн йарса пус, терӗ те çурхи вăрман, — тен, Тимушăнах пулӗ, — хăй илемӗпе татăх хытă, татах ҫаплăн саванса, хӗпӗртесе йулҫӗ.

С. Фомин (Ҫӗкеç Ç.).

# ÇУРКУННЕ.

Хĕллехи вăрăм кунсем кĕскелсе килеççĕ,
Кун вăрăмланнăçемĕн вăрăмланса килет,
Хĕвел хăпарнăçемĕн хăпарса пырат.
Çĕр çавăрннăçемĕн хĕвел айнелле кĕрет.
Сивĕ тинĕс пек сивĕ сывлăш сывласа
Пирĕн тăван çĕршыва хупласа тăракан
Усал хăрушă хайар сивĕпе йурпа пăр
Çуркуннехи хĕвел хĕрĕвĕнҫен хăраса
Айне вут хунă пек шăраннăçем шăранат.
Мĕнпур çырма çатрасем тарăн варсем тăрăх,
Хурлăхлă хайар сассипе йĕрсе макăрса
Шавласа кĕрлесе сивĕ куççулне йухтарат.
Улăхсенҫи кӳлсенҫе тăрна куç пек тăптăрă
Кĕмĕл пек çутăлса тăракан шывсем çинҫе
Çуркуннехи ҫаплă хĕвел шевли йăлтăртатса
Кăн-кăвак кăвакарса курăнса тăракан
Çӳлти çут çанталăкри сывлăш виттĕр,
Симĕсĕн кăвакăн, вутăн хĕвĕн ураланса
Йăрăм-йăрăм вĕлтĕртетсе пурçăн йăлтăркки пек
Йăл-йăл курăнса куç çутине çисе тăрат.
Ăнсăртран кӳлĕ хĕрине пырса пăхсассăн
Кӳлĕ ăшне те хĕвел шевли кĕрсе кайнă.
Пăхма куç вăйĕ çитмест шыва вут хыпнă пек
Кӳлĕри шевле çӳлелле хăйĕн амăшĕ
Хĕвел патне çитеҫенех вĕлтлетсе тăрат.
Кӳлĕ тĕпĕнҫе тата хăйне тепĕр тĕнҫе
Унта татах ӳрăх çутçанталăк курăнат.
Кӳлĕ хĕрринҫе сиккелесе çӳрекен аҫапăҫасем
Кӳлĕ тĕпĕнҫе те сиккелесе çӳреççĕ.
Сывлăшра йухса çӳрекен хура пĕлĕтсем
Кӳлĕри шыв тĕпĕнҫе те йухса çӳреççĕ.
Пысăк айăп туса тĕрмене кĕнĕ çын пек
Улт çиҫ уйăх хушши алăра тыткăнра
Хупăнса тăнă тĕрлĕрен выҫăх ҫĕрлĕхсем
Улăхсене саланса, йур айĕнҫен тухнă
Çурхи шыв çуса тасатнă кив курăксемпе
Тин шăтса тухакан сухан пек йем-йешĕл
Симĕс пурçăн пек симĕс курăк тăррисене,
Шатăртта шăтăрт татса тарăс тăрăс сиксе,
Уçă çĕрте кугсене пуççене сиктерсе,
Ирĕкре савăнса выҫаса курăк çисе,
Пĕр пĕрне хăваласа тĕпĕртетсе çӳреççĕ.
Çӳлте те çĕрте те пур çĕртре те тăрипе
Ытти кайăксем йурлани ҫăрик та ҫĕрик
Ҫăрăлтатни ҫĕвĕлтетни, ҫăр-ҫăр-ҫăр туни
Тĕнҫери ҫăн ҫаплă мусăк пек туйăнса
Пĕтĕм çутçанталăка йанăратса тăрат.
Хуралтă тăррисемпе йăвисен çийĕсенҫе
Шăнкăрҫăсем пĕтĕм ҫунтан тăрăшса
Несехисене касăртса çунаҫĕсене çапса
Çăварĕсене кара кара хупса шăхăртса
Шăкăлтаттарса, шăнкăртаттарса йурласа,
Ҫĕлхе калама пĕлес çук илемлĕ сăввисемпе,
Вут çийĕнҫе çу шăтăртатса шăраннă пек

Ытарма çук ҫаплӑ сассисемпе шӑрантараççӗ.
Çавӑнпа вӗсене ҫӑвашсем авалтанпах
Хӑшӗ хӑвӑл йӑвӑçпа, хашӗ хӑмасампала
Йури йӑвасем туса шерте тӑрне лартса,
Ларса йурлама йӑвӑç тураҫӗсем çыхса
Тӑванӗсене кӗтнӗ пек кӗтсе илеççӗ.
Сивӗрен хӑраса хӗлӗпе выçӑлӑ тутӑлӑ
Тӗттӗм çӗрсенҫе çутӑ курмасӑр пурӑннӑ
Хурт хӑмӑрсем те хӗвел ӑшшине сиссе
Çӳçе каҫӑкисене пӗлӗт пек сырса илсе
Çуркуннехи тутлӑ сӗткенне ӗмсе вӑй илсе
Нӑйӑлтатса сӗрлеме, кӗрлеме тытӑннӑ.
Çӳлтен кайӑк хурсемпе кайӑк кӑвакалсем
Кайик те кайик какӑлтатса карталанса,
Вӑрӑм мӑйлӑ тӑрнисемпе шурӑ акӑшсем
Пысӑк шывсем улӑхсем уллах çӗрсем пӑхса
Пӗлӗт пек пӗлӗт пек карталанса ирте̂ççӗ.
Пулӑллӑ йухӑм шыв хӗррисенҫи çыннисем
Атмасем йӑтса, кушӑҫсем çакса васкаса
Шыв пӑтранҫӑк ҫухне пулӑ тытса йуласшӑн
Çӑмарта тӑвас ҫӑхӑ йевӗрлӗ ҫупкалаççӗ.
Çавӑнтах хӑшӗ шӑмпӑр шӑмпӑр шӑмпӑртаттарса
Йалтӑр йӑлтӑр пулӑсем çавӑрса кӑлараҭ
Пулӑ пуçгарма пынӑ вӗгшак аҫипӑҫисем
Пуллисем сиккеленине курса савӑннипе
Пылҫӑклӑ йӗпйӗпе ҫӑлхи çӑпатисемпе
Ҫӑпӑр-ҫӑпӑр тугарса йӑлт-йалт сиккелеççӗ.
Тата улӑхра выҫӑхсене кӗтекен
Вӗтшак аҫапӑҫасем мӗн хӑтланмаççӗши?
Выҫӑх тислӗксем çӳпӗçапӑсем пухса
Вут ҫӗртсе йӗри тавра хупӑрласа илсе
Çӑмартасем, паранкӑсем, пулӑсем раксем
Вутлӑ кӗл çине пӑрахса ӑшаласа пӗçерсе
Тӑпӑртатса сиккелесе вӗтӗркеленсе,
Патаксемпе пӑтратса ҫакаланаççӗ.
Кӑпӑр капӑр çийелти тумтирӗсене хывса
Уривҫи ҫӑлхи çӑпатисене салтса ывӑтса
Йӗмӗсене тавӑрса çӳлелле çӗклесе
Такӑр çерем çыйӗнҫе акатуй ҫупаççӗ.
Куйанла выҫаççӗ, кӗрешеççӗ сикеççӗ,
Вӑкӑрсем пулса пӗр-пӗрипе тӗкӗшеççӗ.
Унта вӗсем ирӗке тухнӑ савӑнӑçпа
Мӗнлӗ мӗнле вӑйӑсем выҫамаççӗши?
Мӗн мӗн кӑна сӑмахсем каламаççӗши?
Хӗвел хӗртнӗçемӗн хытӑран хытӑ хӗртет.
Сырмасем патне пыма хӑрушӑ, сиксе
Шавласа кӗрлесе пӗтӗркеленсе йухаççӗ.
Сӗнҫери шыв хӑпарнӑçем çӳлелле хӑпарса
Çыранран сиксе тухса Атӑл пек сарӑлаҭ.
Сӗнҫе шывин кӗмӗл пек çутӑ сӑнне, хӗвел
Кӑтартмасӑр хупласа тӑнӑ сивӗпе пӑр
Çуркуннехи хӗвел хӗрӗвӗнҫен хӑраса
Сехӗрленсе шартах сиксе кӗрлесе хӑпса
Капан пек капан пек купаланса сӗрӗшсе
Сӗнҫе кукрисене пыра пыра капланаҭ.
Пӑр кайаҭ, пӑр кайаҭ, пӑрпа пӗрле ҫир кайаҭ, тесе
Пӗтӗм шыв хӗррипе аҫапӑҫа ҫупкалаҭ.
Акӑ Çӗн Ӳсел кӗперри сивӗ тытнӑ пек

Халтăртатса ҫĕтресе, тупă пăшал пенĕ пек
Шăрт шарт туса шартлатса хуҫăлса ҫĕмĕрлет.
Тĕппе ҫавса кăларса вунă вуник лашапа
Иле иле килсе ҫапнă йуман йупасем
Шыв тулса пăр капланса ҫулелле йăтнипе
Армути пек ҫăлăна ҫăлăна тухса
Пĕтĕм Сĕнҫе калпинĕпе пĕлĕт пек хăпаť,
Сĕнҫе икĕ йеннипе шăри шари ҫухăрса
Вут тухнă ҫухнехи пек илĕм-тилĕм ҫупаҫҫĕ,
Тытăр! тытăр! ан йухтарăр кĕпере. тесе
Шывра йухакан кĕпер йăваҫҫисем ҫине
Пакăрсем вĕренсем шертесем ывăтаҫҫĕ.
Йăваҫҫисене лектерсен ушкăнĕпелен
Такмаксем каласа турта турта илеҫҫĕ.

*Н. И. Уҫ.*

# Рекистраттăр.

Хут кĕрет, хут тухаť,
Ал ҫыраť
Атрĕсне.
Куҫ пăхаť, куҫ выҫаť,
Ал лартаť
Нумĕрне.
Йăлт пăхап, йăлт вулап,
Лартмалла
Ҫислине.
Вулатăп, тăплатăп,
Кĕскенрех
Ҫыратăп.
Ыйту хут, тепĕр хут
Ан килтĕр,
Ку виттĕр.
Пуринҫен ытларах,
Маларах
Еп пĕлеп.
Тухакан, кĕрекен
Кĕнекен
Еп хуҫи.

Пур хута пĕлекен,
Тĕплекен.
Еп ҫҫи.
Еп ҫырап, ҫул уҫап
Хутсене
Кĕмешкĕн.
Кĕмесен ман алла —
Малалла
Ан та кай;
Килетĕн кайалла
Ман алла,
Пуҫна тай.
Ăш сăмах илттермĕн,
Ҫўретĕн
Сусланса!
Ҫăн малтан, пур хута
„Ес унталла“
Калатăп.
Алăран алăра
Кăнтăрла
Ҫўрет хуг.

Тухмалла, каймалла,
Еҫ пĕтнĕ,
„II йа тут“.

Ваҫка.

## Комсомолĕс йурри.

Вĕресе пăсланса
Тăракан Мускавран,
Пирĕн пек çамрăка
Пĕçернĕ вырăнтан,
Хамăра тăван йал
Йеннелле çаврăнса
Йурлама кал-кал л!
Йурламха савăнса:

Сип сивĕ çиђ...
Çиђ шăхăрать;
Киллĕмри кĕл
Тусанăн ђупать.
Питĕртĕм илтĕм
Еп хам килçурта,
Тухрăм та вĕçрĕм
Пĕр хут тумăмпа.
Сассăмçăм йанрарĕ
Халăх хушшинђе:
— Çамрăксем, хусканăр!
Çунать кив тĕнђе...

Çамрăк вăй вăранђĕ,
Çĕклерĕ йалав;
Вăл çĕнĕ шкул лартрĕ:
— Çывă пул, йулхав!
Манăн пурнăçăм
Ĕнтĕ хут çинђе;
Тумăм, çи-пусăм
Шур хут тĕрринђе.

* * *

Шур хут çинђи шухăшĕ
Ĕç çине тухсан,
Çĕнелĕ пурнăçĕ,
Çĕнеймĕ ултав.
Питĕрĕннĕ пӳртĕмшĕн
Куђђанмăп текех;
Сисрĕм еп, пĕлетĕп
Ĕçхалăх вăйне.
Вăл ђĕртнĕ кăвать
Йалкăшма ђарнас çук,
Вăл лартнă çĕн çуртра
Нихçан та кĕл сӳнес çук.

*Шаланкă.*

---

## Çӳçе.

(Ӳтђĕв сăвви).

Мĕншĕншиха ес, çӳçемçĕм,
Шыв çинелле пуç тайан?
Ђĕлтĕр-ђелтĕр çулçусемпе,
Ăшђик типсе çуннă пекех,
Шыв çи хумне ђуп тăван?..

* * *

Сан çулçусем—ытарма çук—
Шат туртăнать хум çиве;
Темшĕнçке хумĕ шемпĕлтетсе,
Ăш хĕвелте ђăлт!-ђăлт! сиксе,
Йăл-йăлл! кулать ђӳхенсе.

*Шаланкă.*

# НАУККĂПА ТЕХНИККĂ.

## Улăмран хут тăвасси.

Хаçатсем çапма хут тумашкăн йăвăç нумай тухнă пирки, хут тăвакан ăстасем нумайранпа урăх йапаласенҫен хут туса сăнаса пăхаççĕ. Çав тĕлĕшрен ăстасем каллех улăма пырса перĕннĕ. Ку таранҫен улăмран йапаласем ҫăркамалли хут анҫах тунă. Лайăх хут тăвас тесе тем ҫул хăтланнă, анҫах ĕç тухман: хут ҫас пулман, вăхăт нумай иртнĕ, çавăнпа хакла ӳкнĕ. Нумайах пулмасҭ пĕр хрантсус çынни Фун улăмран хут тумалли урăх май тупнă. Çак майпа улăмран пĕр минут хушшинҫе 200 метр (275 аршăн) хут тума май килет. Хутне тунă ҫухне тĕрлĕ йапаласем нумай кирлĕ мар, çимелли тăварпа исвĕс анҫах кирлĕ.

Лонтăнри „Моринк Пост“ йатлă хаçат Фун тупнă майпа пит лайăх хут тăва пуçланă. Халĕ „Моринк Поста“ пĕтĕмпех улăмран тунă хут çине çапаççĕ.

Акăлҫансем Канатăра (Амерĕк) улăмран хут тумалли пит пысăк хапрăк тума шутлаççĕ. Унта пит нумай улăм ахалех сайа кайнă пирки хут йӳне ӳкмелле, теççĕ.

## Пит пысăк хаҫă.

Керманире нумайах та пулмасҭ Амерĕке тимĕре хĕртмесĕр касмалли пĕр пысăк хаҫă туса йанă. Ăна Перлин хулинҫе Пелс йатлă савăтра тунă.

Çак хаҫă тĕнҫери ҫи пысăк хаҫă. Вăл 4 вершук хулăмĕш тимĕре касаҭ. Çак хаҫă 100 лаша вăйлĕ електритсă-мотторпа ĕçлет. Машшин пĕрре çаврăнса илнипе çав 4 вершук хулăмĕш тăваткал тимĕре йе ҫăмăр тимĕре минутра ултă хут касса татаҭ. Çитменнине калама çук йака касаҭ, йурăхсăрри пĕре те тухмасҭ.

Хаҫа ĕçлеттерекен машшинĕ 9 аршăн та 10 вершук çӳлĕш. Ăна 4 вакунпа турттарса кайнă. Пĕр вакунĕ 2 пин пăт тийесен ҫăтакансер.

## Етем ăшҫикне кăмерттонпа пĕлесси.

Ейсӳр йатлă нимĕҫ тухтăрĕ етем ăшҫикне кăмерттонпа пĕлессине шухăшласа кăларнă (Кăмерттон хурçăран тунă йӳплĕ йапала. Йурланă ҫухне сасă мĕнле тĕрĕс илмеллине вăл тĕрĕс кăтартса тăраҭ). Ӳт çине кăмерттон лартса ӳте шаккасан, ӳт ҫĕтренет те, кăмерттон кисренсе йантăраҭ. Ҫирлĕ вырăнта кăмерттон пĕр тĕслĕ йантăраҭ, таса вырăнта тепĕр тĕслĕ. Çакă итлемелли машшинпа (стетоскоппа) итлесен лайăх паларaҭ. Çапла майпа ҫĕрене йун тулнипе пушанни те пит лайăх сисĕнет. Ейсӳр кăмерттонпа ҫĕрене, ӳпкене, пĕвере, çурăм шăммине, тата етем ăшĕнҫи ытти пайсене пĕлме пулаҭ, тет.

### Утакан ахтомопил.

Кирек мĕнле хăвăрт куçса çӳресен те утнине ситни çук. Мĕншĕн тесен ҫи лайăх машшинсем те тĕрлĕ вар, хӳме урлă çиксе каçаймаççĕ. Çавăнпа та ăслăлăх етем пекех утса çӳрекен машшин шухăшласа кăларасшăн тăрăшаҭ.

Халĕ уралла ахтомопил тунă. Ун урисем çын ури йевĕрлех утаççĕ. Вĕсем ура лаппи пек — тăватă йĕлтĕрлĕ. Çав йĕлтĕрсем мăшăрăн мăшăрăн тăраççĕ. Ахтомопил хускалнă ҫух малтанхи мăшăрĕ çĕкленсе $1^1/_2$ метра

йахӑн малалла тӑсӑлат̆. Ҫав вӑхӑтра ахтомопил йӑвӑрлӑхӗ кайри [illegible] ем ҫине тийенет. Унтан кайри йӗлтӗрӗсем тӑсӑлса тухаҫҫӗ; ун ҷу[illegible] лӑх малти мӑшӑр ҫине пусат̆.

Ӗҫӗ ҫакӑн пек ҷӑкӑлтӑшлӑ пулсан та, ахтомопил сехетре 7 километр (километр—464,5 ҷалӑш) утат̆. Ун пек ахтомопил ҫакӑнтан аван: вӑл $1^1/_2$ метр сарлакӗш вар урлӑ, пӗрене, ҷул тата ытти ҷӑрмавсем урлӑ та ҫӑмӑлах каҫма пултарат̆.

## Йеропланпа вӗҫме хӑрушӑ мар.

Ҫурҫӗрти Амерӗкри Пӗрлешӳллӗ штатсенҷи ҫар хлоҷӗн пуҫлӑхӗ, йеропланпа вӗҫни ҷукунккӑпа ҫӳренӗ пекех лайӑх хӑрушӑ мар, тесе шантарат̆. Вӑл каланӑ тӑрӑх ҫак йулашки 3 ҫул хушшинҷе акӑҷҷансемпе коллантсӑсен йеропланӗсем ҫинҷе 4,3 мӗлйун вӗҫнӗ ҫухрӑма пӗр вилӗм ҫеҫ тивет. Пӗрлешӳллӗ штатсенҷи ҷукун ҫулсем ҫинҷе, кашни 3,2 мӗлйун ҫухрӑм пуҫне 1 вилӗм лекет.

1922-мӗш ҫулта Амерӗкри пуштӑ йеропланӗсем 2,8 мӗлйун ҫухрӑм вӗҫнӗ, ҫӗрте 1 ҫын ҫеҫ вилнӗ. Ку ӗнтӗ сывлӑшра вӗҫесси ахтомопилпе ҫӳрессинҷен лайӑхраххине (хӑрушӑсӑртараххине) кӑтартат̆.

1923-мӗш ҫулта ҫапах та 3 мӗлйун ҫухрӑм пуҫне 6 вилӗм тивнӗ; урӑхла каласан 0,5 мӗлйун ҫухрӑма 1 вилӗм. 1924 мӗш ҫулта 3,5 мӗлйун ҫухрӑма 3 вилӗм пулнӑ; урӑхла каласан 1,2 мӗлйун ҫухрӑм пуҫне 1 вилӗм.

Йероплансем халӗ питӗ лайӑх пулса пыраҫҫӗ. Йулашки пилӗк ҫул хушшинҷе вӗҫекенсем тӗрлӗ сийен курнипе пӗри те кайалла анни пулман. Ҫӗрле вӗҫме йӑвӑр, хӑрушӑрах пулмалла пек; анҷах вӑл кӑнтӑрлахинҷен те лайӑх. Мӗншӗн тесен кӑнтӑрла тӗтрепе ҫула ҫухатма пулат̆. Ҫӗрле ҫул кӑтартакан ҫутӑ майаксем ҫине ҫеҫ пӑхса пымалла. (Тӑтӑшах вӗҫсе ҫӳрекен вырӑнсенҷе ҫул кӑтартакан електритсӑ майаксем лартаҫҫӗ).

## Йеропланпа перекен тупӑ.

Ҫурҫӗрти Амерӗкри Пӗрлешӳллӗ штатсен «Миҫҫиҫиппи» йатлӑ ҫар карапӗ ҫинҷе йӑроплана тапратса йамалли ҫӗнӗ мел шухӑшласа кӑларнӑ. Йероплан халиҷенех ҫӗр ҫинҷе ҷылай ҷупсан тин хӑпарса вӗҫе пуҫлат̆ҷӗ. Карап ҫинҷе йероплан ҷупмалӑх вырӑн ҫуккипе ӑна пружинпа йе сывлӑш вӑйӗпе вӗҫтерсе кӑларат̆ҷӗҫ. Халӗ «Миҫҫиҫҫиппи» ҫар карапӗ ҫинҷе йероплан вӗҫтерсе кӑлармалли тупӑ лартнӑ. Ҫав тупӑ тӗтӗмсӗр тар вӑйӗпе ӗҫлет; йероплан йетре пекех туха туха вӗҫсе хӑпарат̆. Тупӑ лартмалли вырӑнӗ кӑлтӑрмаҫ пек ҫаврашка; вӑл йупа пек тӗнӗл ҫинҷе ҫаврӑнат̆. Ҫавӑнпа йероплана кирек ӑҫталла та вӗҫтерсе кӑларма пулат̆. Ҫав ҫаврашкан талккӑшӗ 2 йероплан шӑнӑҫмаллӑх.

## Урам тасатакан ахтомопил.

Ҫурҫӗрти Амерӗкри Пӗрлешӳллӗ штатсенҷе урам тасатмалли ахтомопил тунӑ. Ҫав ахтомопил ҫине нассус йевӗрлӗ тусан, пыҷҷӑк, ҫӳпӗҫапӑ пуҫтаракан машшин лартнӑ. Ҫӳпӗ-ҫапӑ йешҷӗке пуҫтарӑнат̆ те, ӑна кӑларса тӑкма та ҫӑмӑл.

# „Канаш“ Сойус хроникки.

## Шупашкарти тĕп ђăваш петтехниккумĕнђи „Канаш“ сойус йађейккинђе.

Çак йађейккă кăçал ака уйăхĕн 16-мĕшĕнђе уçălса ĕçлеме тытăнђĕ. Йађейккăри ђленсем пурте техниккумра вĕренекен ађасем. Унта пур курăсран та тăраççĕ. Хаљхи вăхăтра пĕтĕмпе 37 ђлен. Вĕсем пурте ђăваш ађисем. Комсомолĕссемпе партти кантитађĕсем 21 ç., пионер 1 ç., парттире тăманни 15 ç.. 37 ђлентен 6-шĕ хĕр. Çул тĕлĕшĕнђен пăхсан пурте 22-пе 15 çул хушшинђисем. Пурте хресђен ађисем.

Ака уйăхĕн 16-мĕшĕнђен пуçласа пайанђен йађейккă çакăн пек ĕçсем тунă: Пĕтĕм ђленсен пуххи 5 пулса иртрĕ. Пухусене сахалтан та тăватă пайĕнђен виçĕ пайĕ пухăнаđђĕ. Малтанхи икĕ пухура йађейккă пўро суйланă; пўрора виççĕн ĕçлеççĕ, вĕсенђен пĕри хĕр. Ытти виçĕ пухура ђленсем çырнă сăвăсемпе калавсене пăхса тухнă. Лайăхрах проивсетенисене „Сунтал“ шурнала çапма йаратпăр. Нађартараххисене тепĕр хут йусаса çырма хушатпăр.

Çак йађейккă уçăлни мĕн усă пама пултарĕха? Вĕренекенсем хушшинђе ђылайĕшĕ ĕлĕкех сăвă-калавсем çыркалађђĕç. Анђах вĕсем, тишкĕрсе, йусаса тăракан ушкăн çук пирки, асăрханмасăрах выртађђĕç.

„Канаш“ сойус тĕп пўровĕпе тађă пĕтĕçсе ĕçлетпĕр. Ун урлă хамăр ђленсем çырнă калавсене „Сунтала“ та çаптарăпăр.

Йађейккă пўровĕн ђленĕсем Ивановпа Миххайлăва.

## Репус.



### Репус-сатач туппи.

«Сунталăн» 5 (11)-мĕш номĕрĕнђи сатађăн ответне çак й. й. тĕрĕс тупнă: Скађков, Хĕрлĕ Пăрăç, Никкифăрăв К., Тимахви Кĕр., Елекçи Сах., Оççипăв П., Çименкке, Ваљукков, Çтепанăв М., Куçнетсов П., Саххарăв Т., Матроссăв Н., Матвейĕв С., Йартик Р., Çироткин М., Огмила. Ответђĕ «Сунтал»

Çав номĕртех çаđăннă шаратă туппине çак й. й. тупнă: Саххарăв Т., Куçнетсов П., Ваљукков, Çименкке, Оççипăв П., Никкифăрăв К., Хĕрлĕ Пăрăç, Елекçи Сах., Волккăв Ç., Çироткин М.. Туппи «Канаш».

Саспаллисен сатађĕн ответне çак йулташсем тĕрĕс тупнă: Скађков, Степанăв, Елекçи Сах., Тимахви К., Волккăв Ç., Куçнетсов П., Ответђĕ «Ђăваш Респуплĕкĕ ĕмĕр сывă пултăр!»

Репус туппине çак й. й. тĕрĕс тупнă: Масутски, Куçнетсов П., Саххарăв Т., Хĕлхем, Ваљукков, Çтепанăв М., Çименкке. Туппи—„Сунтала вăйлатас тесен потписђĕксем пумайрах кирлĕ.

Ретаксирен: Репус-сатађ туппине пĕлни çинђен халĕ кунсерен темĕн ђухлĕ хушамат килет. Анђах кунта малтан килсе ĕлкĕрнисем çеç çапăнаççĕ. Нумайĕшĕ кайа йулнипе кĕреймеççĕ.

# Тупмалли.

Стр.

Ђăваш Ахтономийĕн 6-мĕш çулĕ . . . . . . . . . . 1.
Ђăваш Респуплĕкĕнђи Советсем—И. Илларионăв. 2.
Халăха вĕрентес ĕç . . . . . . . . . . . . . . . . . 11.
Йетĕрнери çу çапакан савăт . . . . . . . . . . . 13.
Урмарти сĕтел—пукан хапрăкĕ . . . . . . . . . . 14.
Шупашкар—Ухлик . . . . . . . . . . . . . . . . . 15.
Хĕрлĕ шайттан (пйесса)—И. Ç. Максимăв-Кош-н. 18.
Пролок—Ç. Ђĕкеç (Фомин) . . . . . . . . . . . 43.
Çуркунне — Уç . . . . . . . . . . . . . . . . . . 45.
Рекистраттăр — Ваçка. . . . . . . . . . . . . . . 47.
Комсомолĕс йурри — Шалапкă . . . . . . . . . 48.
Çÿçе—çавăнах . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Науккăпа техникка . . . . . . . . . . . . . . . . 49.
„Канаш“ Сойус хроникки . . . . . . . . . . . . 51.
Репус . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —

Врид ответств. редактора Г. Алендеев.

Чувашоблистлит № 1322. Напеч. 3000 экз.

г. Чебоксары. Типография Чувашиздата.

„КАНАШ"